
8750
63-23

Валентина Эльби

# Эпĕ халь телейлĕ

8750



Валентина Эльби

# ЭПĔ ХАЛЬ ТЕЛЕЙЛĔ

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1963

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатс
11 марта 1963 г.
№ 34

е(чув)

## ТУПМАЛЛИ


| | стр. |
|---|---|
| Пачах пӗчӗккӗ чух | 3 |
| Турă — ман тăшман | 4 |
| Аслатиллӗ çумăр | 5 |
| Эпӗ чирлерӗм | 6 |
| Килте | 8 |
| «Тур юнӗ» сыпсан | 10 |
| Эпӗ шкула каятăп | 12 |
| Малтанхи урок | 16 |
| Переменăра | 17 |
| Пирӗн кӗнеке | 19 |
| Мӗншӗн йӗтӗм-ши? | 21 |
| Тухтăр хӗресе касса ывăтрӗ | 23 |
| Турă пуррипе çуккине тӗрӗслетӗп | 24 |
| Юлашки çула ăсататпăр | 25 |
| Çӗнӗ учительницă | 29 |
| Лайăх вӗренме тăрăшăп | 31 |
| Çӗнӗ çул елки | 33 |
| Эпир — туссем | 40 |
| Эпир — çамрăк ленинецсем | 42 |
| Çыру | 43 |
| Пуласчӗ шăпчăк пек | 45 |
| Эпӗ мандолинă туянатăп | 46 |
| Чечен арча | 53 |
| Тавтапуç сана, анне | 54 |
| Уяв | 55 |
| Юратнă çын | 58 |
| Кӗтмен хăрушă инкек | 59 |
| Унăн хăйӗн йӗрки | 61 |
| Хырăм выççи | 62 |
| Аçта сӗрме купăс калăп-ши? | 63 |
| Сарайӗнчи «чиркӳре» | 64 |
| Галстука салтса илеççӗ | 67 |
| Мӗн тумалла? | 69 |
| Эпӗ çӗнӗрен çуралатăп | — |
| До ре ми фа соль ля си | 73 |
| Ялтан килнӗ хыпар | 74 |
| Суда чӗнеççӗ | 75 |
| Ылханлă чунсем | 77 |


ДЛЯ ДЕТЕЙ СРЕДНЕГО ШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

АНДРЕЕВА (ЭЛЬБИ) ВАЛЕНТИНА АНДРЕЕВНА

**ТЕПЕРЬ Я СЧАСТЛИВ**

**Повесть**

На чувашском языке

Оформление **А. А. Макарова**
Редактор **В. Г. Игнатьев**
Корректор **И. Р. Остроумов**

НТ 00687. Сдано в набор 13/XII-1962 г. Подписано к печати 4/II-1963 г.
Формат 84×108 1/32. Объем 4,1 п. л., 4,06 уч.-изд. л. Тираж 7 500 экз.
Заказ № 2931. Изд. № 96/62. Цена 12 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5.

# Пачах пĕчĕкке чух

«Тăваттăри ача хăй курни-илтнине аванах ас тăвать»,— теççĕ. Тĕрĕс. Эпĕ те тăватă çулта чух хампа мĕн пулса иртнине лайăх ас тăватăп. Халĕ, пурнăçăм çинчен юлташсене каласа панă май, чи малтанах манăн куç умне акă мĕн тухса тăрать.

...Хĕллехи сивĕ каçчĕ ун чух. Чÿречесене тул енчен хуппипех хÿтĕленĕ. Пÿрт ăшчиккине краççин лампи тунсăхлăн çутатать. Эпир кантăк умĕнчи сак çине вырăн сарнă та кÿршĕ хĕрĕпе — Праски аппапа выртатпăр. Анне килте çук. Вăл мана пăхма Праски аппана хушса хăварнă. Малтанах урамра ура сасси илтĕнчĕ, унтан сасартăк чÿрече хуппи уçăлса кайрĕ. Çулçă витĕр кăмпа шăтнă пекех; аялтан çын пуçĕ хăпарчĕ. Кантăк витĕр пÿртелле лапсăркка шурă çĕлĕк тăхăннă çын пăха пуçларĕ. Куçĕ пысăк, алтăр тейĕн.

— Якур, хуп чÿрече хуппине! Ачана хăрататăн!— тет Праски аппа кантăк умĕнче тăракан çынна. Ачи— эпĕ ĕнтĕ.

Хупнă-ши вăл чÿрече хуппине е пÿрте кĕнĕ-ши — ăна калаймастăп. Анчах шурă çĕлĕк тăхăннă çын пичĕ паян кунччене куçăм умĕнче тăрать...

Якур ятлă яш каччă пирĕн пата улах шыраса пынă имĕш. Кун çинчен эпĕ каярахпа тин пĕлтĕм.

Çав кунтан вара мана йĕрсен те, алхассан та: «Ас ту, Якур килет! Шăп!»— тетчĕç. Юлашкинчен Якур маншăн пачах хăрамалли япала пулса тăчĕ. «Якур килет» тесен вара — пĕтрĕ пуç, хăранипе пăштик-пăштик сывлаттăм.

...Тепрехинче тата ыйхăран вăранса кайрăм та пăхатăп — эпĕ ют чăланта, вырăн çинче вырта паратăп. Хăранипе шартах сикрĕм, шари çухăрса ятăм, унтан аннене чĕне пуçларăм. Никам та сас памасть. Пĕтрĕм, тинех Якур тытса каять ĕнтĕ! Мĕн тăвас? Сасартăк стена çумĕнче пăтаран çакса хунă ăскăçа куртăм. Ăна илтĕм те чăланăн пĕчĕк чӳречине чăлтăр-чалтăр çапса çĕмĕртĕм. Ванчăк чӳречерен пуçа пахчаналла кăларса пăхатăп. Мĕн куратăп тетĕр? Шуратнă вăрăм шалчасем пӳрт çумĕнче выртаççĕ. Якур мар-ши вĕсем?..

Çав хуппине саваласа тасатнă шурă шалчасем халĕ те манăн куç умĕнчех.

Çул хыççăн çул иртнĕ. Эпĕ ӳснĕ. Мĕнле ӳснĕ? Калама пултараймастăп, мĕншĕн тесен ним те ас тумастăп. Хăçан ман пуçри анра-сухра сирĕлкеленĕ-ши,— улттăра-и, çиччĕре-и,— пат татса калаймастăп.

## Турă—ман тăшман

Эпир виççĕн пурăнатпăр: анне, кукамай, эпĕ.

Сĕтел ларакан тĕпел кукринче, кĕтесре, урлă тыттарнă çӳлĕк пур пирĕн. Унта эреш хутсемпе илемлетнĕ тăваткал тĕссĕр хăма татăкĕ тăрать. «Турăш» тет ăна кукамай. Çав турăша эпĕ кураймастăп, анчах кун çинчен кукамая мар, аннене те шарламастăп. Вăрттăн, хам ăшра, тӳсме пултараймастăп ăна. Кукамай каланă тăрăх, турри хăй таçта пĕлĕт тăрринче пурăнать, тет. Пӳртре вара турăшĕ — кĕреçе сухаллă пуç кĕлеткихăма татăкĕ çумне çыпçăннă та пурне те курать, пурне те тиркесе ларать. Хăйне пуç çапнине çеç юратать вăл. Манăн пуç çапас килмест, ахальтенех урайне çамкапа таккаса ил-ха, лайăх-и çав? Вăт пулать кам, çынсене курайманскер! Ăна пула хĕл каçипех, мункун прачникĕ çитмесĕр те, çăвара какай чикме юрамасть. Çисен— çылăха кĕретĕн. Çавăншăнах вара турă çынна чир е урăх мĕнле те пулин инкек ярать!

Пирĕн сад пахчи пысăк. Унти улмуççисене йăлтах кукаçи ӳстерсе хăварнă. Кăр-р лараççĕ улмуççисем лупас хыçĕнче. Унтах пирĕн çĕр мунча пур. Юрататăп эпĕ çав çĕр мунча тăрринче çӳреме. Вăл лапам çĕрте чылай çӳллĕ мăкăрăлса тăрать. Унта симĕс курăк хушшинче шурă-кĕрен чечексем чĕлтĕртетеççĕ, кăвасак тутăллă ыхрути ӳсет. Улмуççи турачĕсем, тĕмеске тăрри-

не пуҫ тайнӑн, ҫӗре лексех тӑраҫҫӗ. Панулмиййӗсем, панулмиййӗсем! Хӗп-хӗрлӗ е сап-сарӑ, витӗр пӑхсан курӑнмалла. Ытла та ал айӗнчех. Эх, татса илесчӗ, тутанса пӑхасчӗ. Ҫук ҫав, юрамасть. Каллех турӑ хушмасть. «Ан тив, турӑран хӑра, ачам,— тет мана кукамай.— Аслати авӑтнӑ чух аҫа ҫапса вӗлерет. Ас ту, ҫылӑха ан кӗрех. Спас уявӗ ҫитмесӗр пӗр улмине те тӗкӗнме юрамасть».

Хӑрамаллипех хӑратӑп, анчах кӗтсе йӑлӑхрӑм ӗнтӗ спас уявӗ тенӗскерне. Хӑҫан ҫитет-ха вӑл? Эх, ҫав турӑ — ман тӑшман!

Час-часах эпӗ тӳпенелле пӑхатӑп. Унта шап-шурӑ пысӑк пӗлӗт катрамӗсем шуса иртеҫҫӗ. Сӑнатӑп-сӑнатӑп та ҫав шурӑ пӗлӗт катрамӗсене, вӗсем мана хутлӑ-хутлӑ чаплӑ кермен пек туйӑнаҫҫӗ. Леш, турӑ текенни, ҫав керменте пурӑнмасть-ши? Куҫӗ унӑн, тем тесен те, кӑвас чӗресси евӗр пулӗ. Ахальтен ҫӗр ҫинче ҫынсем мӗн тунине ӑҫтан пӗтӗмпех асӑрхайӑн?..

Пӗррехинче кӑнтӑрла эпӗ ҫӗр мунча тӑрринче— тӗмеске ҫинче — чечек татса ҫӳрерӗм. Пуҫа каҫӑртса ҫӳлелле пӑхрӑм та — эй, тӗлӗнтермӗш! Тӳпе тап-таса, ӑна шенкер шывпа ҫуса тасатнӑ тейӗн. Халиччен куҫса ҫӳрекен кӑпӑшка шурӑ мамӑк чӑмӑрккисене ҫил ачисем ӑҫталла илӗртсе кайнӑ-ши? Хӗвелӗ аслӑ тӳпене пӗчченех тӑрса юлнӑ, ҫӗр питне вӑл ӗнтсе ярасла пӗҫертет. Пуҫӑмра хӑюллӑ шухӑш хӑвӑрт ҫиҫсе илчӗ: ҫӳлти турӑ, тен, таҫти ҫӑва шӑтӑкне кайса путланнӑ? Ҫапла, ҫуках вӑл унта халь, мана сӑнаса тӑмастех! Урӑх шухӑшласа-туса тӑмарӑм, ҫӗр ҫумнех усӑнса аннӑ турата ярса тытрӑм та хӗп-хӗрлӗ панулмие татмасӑрах ҫатӑрт! ҫыртса илтӗм. Ун пек-кун пек пулса тухас-тӑк, ҫапах та эпӗ панулмине татман, ҫыртса илнӗ те йывӑҫ ҫинех хӑварнӑ. Панулмиййӗ вара мӗнле сӗткенлӗ! Шерпет шывӗ сыпнӑнах туйӑнать. Чӑнах, чӗлхене ҫӑтса яма пулать! Эпӗ турат патӗнчен турат патне куҫма пуҫларӑм. Пӳ ҫитнӗ таран тӗрӗслемен, ҫыртса пӑхман панулми хӑвармарӑм пулас.

## Аслатиллӗ ҫумӑр

Панулми ҫыртса ҫӳресе йӑлӑхтарчӗ мана. Шӑлсем те текех чӑмлаймаҫҫӗ, пӗтӗмпех шанчӗҫ. Чечек кӑшӑлӗ те тӑвас килмест. Ывӑнтӑм-ши? Симӗс курӑк ҫине ме-

серле выртрӑм та алла пуҫ айне хутӑм. Мана тӗрлӗрен шухӑшсем ҫавӑрса илчӗҫ. Мӗншӗн-ха тӳпе кӑнтӑрла кӑн-кӑвак, каҫхине хура пӗркенчӗкпе витӗнет? Ун ҫине вара темӗн чухлӗ йӑлтӑркка ҫӑлтӑр шӑрҫа пек тухса тулать. Пӗри те ҫӗр ҫине ӳкмест — йӑлтӑр-ялтӑр ҫутал-са ҫеҫ тӑраҫҫӗ вӗсем. Эх, пӗри ӳкесчӗ, алла тытса пӑхасчӗ ӑна. Хӗрача пулсан, умма ҫакса ҫӳрӗттӗм. Мӗн-ши вӑл ҫӑлтӑр? Чӑнах та шӑрҫа мар-ши?..

...Сахал-и, нумай-и вӑхӑт иртнӗ — пӗлместӗп, анчах та эпӗ питӗ хӑрушӑ сасӑ илтнипе вӑранса кайрӑм. Кӑлтӑр-р, кӑлтӑр-р!..— тӑвать тӳпере. Куҫа уҫса ятӑм. Тур ҫырлахах! Эль кӳлли енчен хуп-хура пӗлӗтсем капланса килеҫҫӗ. Вӗсен умӗнче вӗри ҫӗлен вӑй вылять, хӗм кӑларса авкалана-авкалана илет, пӗлӗте ҫурмаран ҫуриех ҫурать. Аслати! Пӗтрӗм эпӗ! Панулми ҫинӗшӗн мана аҫа ҫапма килет!

Эпӗ нумай шухӑшласа тӑмарӑм, ура ҫине ялт сиксе тӑтӑм. Ҫав вӑхӑтра ҫывӑхрах тӗнче ҫуталса кайрӗ те ҫӑтӑр-ҫатӑр-ҫат! турӗ. Ман пуҫ ҫине турӑ вут чулӗ ӳкерчӗ пулас. Эпӗ шари! ҫухӑрса ятӑм та килелле тапса сикрӗм. Килте никам та ҫук. Аҫта-ши аннепе кукамай? «Эх, турӑ, каҫар»,— тесе сӑхха яра патӑм. Тулта татах асар-писер аслати ҫӗмӗрттерчӗ, ҫумӑр чашлаттарса ҫӑва пуҫларӗ. Эпӗ тӑлӑп илтӗм те, кӑмака ҫине улӑхса, пӗркенсе выртрӑм, пуҫ ҫине минтер хутӑм. Сывлӑш тухмасть, хӑранипе пашкатӑп. Хам ҫаплах турра кӗл тӑватӑп, каҫарма тилмӗретӗп, хӗрхенме ыйтатӑп, текех унашкал чарусӑрланмӑп, спас ҫитмесӗр панулми ҫимӗп тесе сӑмах паратӑп.

Аслати пирӗн пӳрт тӑрринче асрӗ-асрӗ те лӑпланчӗ, сасси унӑн ӑшне кайнӑҫемӗн ӑшне кайса пычӗ. Хӑйӗн хӗртнӗ йӗппипе вӑл мана чикеймерӗ. Эпӗ сывах юлтӑм. Пуҫ ҫинчен минтере илсе пӑрахрӑм, тӑлӑпа сиртӗм. Аслати сасси юлашкинчен пӗтӗмпех илтӗнми пулчӗ. Эх, мур ҫӑтман туррине! Пулать кам, панулми ҫиме те юрамасть иккен!

# Эпӗ чирлерӗм

Ҫумӑр чарӑнсан та эпӗ кӑмака ҫинчен анмарӑм, чылайччен чӗтресе выртрӑм-выртрӑм та тӗлӗрсе кайнӑ пек пултӑм. Анчах тӗрӗссипе эпӗ тӗлӗрмен те, сывӑр-

ман та иккен. Тӗлӗрнӗ пулсан, стена ҫумӗнчи сехет пуҫа ыраттармалла хыттӑн шакканине те илтмен пулӑттӑм. Тем самантран манӑн хӑлхана ҫынсем калаҫни пырса кӗчӗ.

— Шыраман вырӑн та юлмарӗ, ӑҫта кайса ҫухалчӗ ку ача пирӗн? Каҫ та пулса килет.

Ку анне сасси. Ӑна эпӗ аванах уйӑратӑп.

— Тем курса ларӑпӑр. Ҫӑла ӳксе путмарӗ пулӗ те?.. Турӑ хӑтартӑрах! — илтӗнет тепӗр сасӑ — кукамай сасси.

Эпӗ сиксе тӑрасшӑн пултӑм, анчах темшӗн тапранаймарӑм та. «Эпӗ кунта!» — кӑшкӑратӑп хам, ҫав вӑхӑтрах кӑшкӑраймастӑп та иккен.

— Кам йынӑшать? Пирӗн ача кӑмака ҫинче мар-и? — аякран-аякран илтӗнчӗ мана.— Кунта, кунта, апӑрша ачи! Старик пек, мӗн ҫу кунӗнчех кӑмака ҫине улӑхса выртнӑ эсӗ? Кӳр аллуна хӑвӑртрах, антарам.

Куҫа уҫрӑм. Анне иккен. Кӑмака картлашки ҫине хӑпарнӑ та ман еннелле аллине тӑсать.

— Аслатирен хӑранӑ пулӗ, мӗнлерех кӗрлерӗ те! Хамӑн та кӑшт ҫеҫ чун тухса тармарӗ,— тет кукамай. Вӑл тӗпел кукринче апат хатӗрлет пулас — чашӑк-тирӗк шӑкӑртатать.

— Чӑнах хӑрушӑ пулчӗ-и, ывӑлӑм? — ыйтать анне манран.

— Хӑрарӑм, питӗ хӑрарӑм...

Ман сасӑ пӑшӑлтатнӑ чухнехи пек хӑйӑлтатса тухать.

— Сана ун мӗншӗн тивмелле? Эс айӑпсӑр ача вӗт,— ачашшӑн калать анне.— Кил, Таник, антарам.

Эпӗ ҫӗкленме тӑтӑм. Пуҫ йывӑр чул муклашки пекех, минтер ҫумӗнчен те хӑпӑнмасть. Анне мана икӗ аллипе хул айӗнчен ярса илчӗ те сасартӑк темшӗн хӑраса кайнӑ пек пулчӗ.

— Ай-уй, пирӗн ача чирленӗ, кукамӑш! Ах, тур ҫырлах, мӗнле пӗҫерет вӑл, епле вӗри!..

Анне мана, кӑмака ҫинчен йатса антарса, кравать ҫине вырттарчӗ. Манӑн пуҫ ҫурӑлса тухасла ыратать, ян-ян туса янӑрать. Куҫ йӳҫӗхет, уҫса хупма тӑкӑска. Пӗтӗм чун тулашать. Ӑш ҫунать, шыв ӗҫес килнипе хуплантарать кӑна. Тута типе-типе каять, ӑна чӗлхепе ҫуласа йӗпетсен те, самантрах кушӑркаса ларать. Кая-

рахпа куҫа темскерсем курӑна пуҫларӗҫ. Акӑ йӗри-тавра шыв. Варринче ҫӗр тӗмески. Эпӗ ун ҫине ярса пусрӑм та, вӑл чӗтрене пуҫларӗ. Ай, пӗлӗт ҫӳлелле мар иккен, ун тӳпи аялалла — эпӗ тӑракан ҫӗр тӗмески айӗнче. Мана нимҫтан, нимрен ярса тытма май килмест. Пӗтрӗм! Эпӗ тӗпсӗр тӗнчене ӳкетӗп. Хӑрушӑ! «Тытӑр мана, ӳкме ан парӑр!»

Унччен те пулмасть, тӗттӗм кӗтесрен, кӑмака хыҫӗнчен, ман паталла кӗреҫе евӗр сарлака сухаллӑ старик пуҫӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри вӗҫе-вӗҫе киле пуҫларӗҫ. Кашнин мӑйӗнченех пӑт! пӑт! хӗрлӗ юн тумлать. Ман тӗле вӗҫсе ҫитеҫҫӗ те: «Турат ҫинчи панулмие ҫиекен ача эсӗ-и вӑл?» — теҫҫӗ. Эпӗ хӑратӑп, хама тивесрен вӗсене алӑпа ҫапкалатӑп. Юлашкинчен сехӗрленнипе тӑна ҫухататӑп...

— Турӑ ирӗкӗ ӗнтӗ. Вилсен те, ним те тӑваймӑпӑр. Турӑ хушни пулать. Ача чунне вӑл илме те пултарать, чӗрӗ те хӑварма пултарать,— илтетӗп эпӗ тепӗр самантран.

— Турӑ ирӗкӗ тесе, Танике вӗлерсех ярӑпӑр-и вара? Ҫаплах аташса выртать вӗт мӗскӗн. Тупата, тухтӑра кайса чӗнетӗп. Вӗсем ачасене сыватма пӗлеҫҫех...

Анне сӑмахӗ мана ыйӑхран сирсех ячӗ. Аса илтӗм: эпӗ чирленӗччӗ пулас...

— Анне,— чӗнтӗм эпӗ.— Ман вилес килмест. Кайса чӗн тухтӑра.

Анне хыпӑнса ӳкрӗ:

— Таник, ывӑлӑм, тӑна кӗтӗн-и? Халех кайса чӗнетпӗр,— терӗ те мана чӑп та чӑп чуп туса илчӗ. Анчах кукамай ӑна тухтӑр пирки урӑх сӑмах та чӗнтересшӗн пулмарӗ.

## Килте

Пирӗн пата час-часах хура тумлӑ хӗрарӑм килсе ҫӳрет. Пичӗ унӑн кукамайӑнни пекех пӗркеленчӗклӗ. Ҫак карчӑка пурте куҫ умӗнче «Анна аппа», хыҫра «Анна манашкӑ», теҫҫӗ. Тепӗр чухне Анна манашкӑ урӑх хӗрарӑмсене те ертсе килет. Пуҫтарӑнаҫҫӗ те хӗрарӑмсем, кӗтесри ҫӳлӗк ҫинчи турӑш ҫине пӑхса, тилмӗрсе пуҫ ҫапаҫҫӗ, сӑх-сӑхаҫҫӗ.

Паян вӗсен эпӗ сывалнӑшӑн турра кӗл тумалла имӗш. Турӑш умне мана та тӑратрӗҫ. Анне те кунтах.

— Сăх-сăх, ачам,— тет кукамай.— Турăран сывлăх, телей ыйт. Турăсăр пуçне урăх сан хута кам кĕрĕ? Эх, мĕскĕн тăлăх турат, сусăр чĕпĕ...

Эпĕ урлă-пирлĕ хĕрес хывкаласа илтĕм те хамран хам ыйтрăм: «Мĕншĕн-ха эпĕ мĕскĕн? Манăн атте çук, çавăншăн-и?» Вара вĕсем юрă пуçласса кĕтрĕм. Юрлама эпĕ çав тери юрататăп!

— Таник, сан сассу шăпчăк сасси пек,— теççĕ кĕл тăвакансем мана.— Эсĕ ӳссен кукаçу пекех регент пулăн.

Кукаçи те пирĕн селĕм юрланă, тет. Вăл чиркӳ хорне алă сулса юрлаттарса тăнă пулать.

Ман кукаçи эпир кунта куçса киличчен эрне маларах çеç вилнĕ. Вилес умĕн вăл хăйĕн сĕрме купăсне мана пиллесе хăварнă, тет.

— Купăсăма мăнук валли хăваратăп. Тытма ан чарăр. Çепĕç чунлă пулсан, вăл хăйĕн чĕри юррине илтетех. Вара пурнăç çулĕ унăн аслă пулĕ,— тесе калана имĕш кукаçи.

Чĕре юрри... Мĕн-ха вăл чĕре юрри? Хăçан юрлать-ши вăл? Епле илтмелле ăна? Сасси унăн мĕнле-ши? Ăнланмастăп. Тен, манăн чĕре юрри сĕрме купăспа çыхăнса тăрать пуль? Çаплах пуль çав. Эпĕ юрăсене чиперех кĕвĕлетĕп. Кукамайсем «турă» кĕллине тытăнаççĕ кăна, ман сĕрме купăс та вĕсен юррине шăратма пуçлать. Анчах турă юррисем калани мана ывăнтарать. Шăпчăк сассине кăларма пулмасть-ши? Çу каçипех пирĕн пахчара пурăнать вăл. Пĕррехинче эпĕ сĕрме купăса хул айне хĕстертĕм те чие йывăççи чăтлăхнелле утрăм. Меллĕ вырăн тупса лайăх кăна вырнаçса лартăм, итле пуçларăм. Шăпчăкĕ, ман шухăша ăнланнăнах, йывăç тураттисем хушшинче юрра шăрантарма та пуçларĕ. Ах, сасси, сасси! Чуна çĕклентерсе ярать вĕт! Шăпчăк пĕр ăстрăм юрларĕ те, ун хыçĕнчен эпĕ те чĕлхепе вылятса илтĕм. Çапла темиçе кун, темиçе хут çав пĕчĕк кайăк сассине йĕрлерĕм. Питĕ тăрăшсан пулать иккен. Чĕлхепе эпĕ те шăпчăклах чок! чок! чок! тутаратăп.

Сĕрме купăспа шăпчăк сасси кăлараймастăп-ха. Ку ĕнтĕ, тем теçен те, ман чĕре юрламантан килет пулĕ.

# „Тур юнĕ“ сыпсан

Тĕлĕнмелле. Эпĕ эмел ĕçнипе сывалман иккен. Мана турă шеллесе сыватнă! Çавăншăн ĕнтĕ ăна кĕл тума халь чиркĕвех каймалла, тет. Чирлеттерекен усал-тĕселсене ăш-чикрен тасатса кăларма манăн «тур юнĕ» сыпмалла.

Анна манашкă килчĕ те, эпир чиркĕве кайма хатĕрлентĕмĕр. Вăл та пирĕнпе пырать. Мана çĕнĕ кĕпе тăхăнтартрĕç, тумлантарчĕç. Халиччен эпĕ чиркÿре пулса курман-ха. Мĕнлерех-ши унта? Курас килет. Чиркÿ Кĕрше ялĕнче. Вăл ял пирĕнтен самаях аякра. Çавăнпа çула пĕр кун малтан тухрăмăр. Чиркĕве вырсарникун çеç кĕреççĕ, тет.

Кăнтăрла иртнĕ пулин те, çанталăк шăрăх. Тăпрара нÿр çук. Тулă хăмăлĕсем сарăхнă. Çул çинчи тусан тинкĕле çăнăхĕ евĕрлĕ. Пусатăн та — ура путать, хыçала йĕр юлать. Утăм ÿсĕнмест, çул кĕскелмест. Вăл, пирĕн умран кукăр-макăр тăсăлса, ыраш пусси урлă пĕлĕтпе çĕр пĕрлешнĕ çĕреллех кайса çухалать. Пуринчен ытларах ывăнаканни эпĕ пулас, мĕншĕн тесен манăн хăрах ура тепринчен кĕскерех. Утма питех те кансĕр.

— Кукамай, чиркÿ мĕншĕн пирĕн ялта çук? Асаплан кунта утса,— тетĕп эпĕ.

— Пирĕн ялта чиркÿ ĕлĕк те пулман,— кăмăлсăррăн хирĕç тавăрать кукамай. Хăй чăм шыва ÿкнĕ.— Юнашарти ялта — Тăвайĕнче пурччĕ, ăна колхозсем тунă чухнех хупрĕç те клуб турĕç. Çылăха пĕлмен çамрăксем унта ташă-юрăпа киленчĕç.

— Мĕншĕн-ха апла? — ыйтатăп каллех.

— Эй, ачам, пирĕнешкел турра ĕненекенсем сахалланса юлчĕç. Тек ан калаçах, турра кÿрентерĕн.

Ку тарана çитсе те пĕлменччĕ эпĕ: тĕнчере турра ĕненмен çынсем те пур-çке! Вĕсем ĕнтĕ питĕ хăюллă, паттăр пулĕ. Вĕсем нимрен те хăрамаççĕ. Эпĕ вара чĕтре куян. Ăçтан-ха ăна, çав хаяр турра, çĕнтерĕн? Вăл, ав, çумăр çунă чух пĕтĕм тĕнчене кисретет. Турикасри Емелле мучисен килне темиçе кун каялла аçа çапнă та, эх, çунчĕ! Каçхи тĕттĕм тÿпе хăмачпа карнăн хĕп-хĕрлĕ тăчĕ.

«Турă инкек ярать — халăхăн тÿсмеллех»,— тенĕччĕ ун чухне пирĕн кукамай.

Çапла шухăшлакаласа пыни çула кĕскетрĕ. Каç пулнă тĕле чиркÿллĕ яла пырса кĕтĕмĕр те хваттере вырнаçрăмăр. Мана, ывăннăскере, тÿрех çывăрма выртгарчĕç.

Ирхине эпĕ темле сасă илтнипе вăрантăм: чăнкăлти-чăнкăлти-чанн!.. тăвать вăл.

— Мĕн ку? — ыйтрăм аннерен.

— Чиркÿ чан çапать,— пĕлтерчĕ анне.— Тăр, тумлан. Кукамупа Анна аппу паçăрах кайрĕç.

Пÿртрен тухсанах ял варринче шĕвĕр тăрăллă чиркÿ хĕресĕсем куçа çиесле ялтăртатни курăнса кайрĕ. Ĕнер, каç пулнипе, эпĕ çав хĕрессене асăрхасах та кайманччĕ. Часах хамăр та чиркÿ умне пырса тухрăмăр. Çынсемпе пĕрле сăх-сăха, сăх-сăха шала кĕтĕмĕр. Фу-у, сăмсана тÿрех çунакан çуртасен шăрши пырса çапрĕ. Унччен те пулмарĕ, малта такам кăшкăрса юрласа ячĕ. Курас тесе эпĕ чĕвен тăтăм, анчах умра тăракан хĕрарăмсем урлă нимĕн те кураймарăм.

— Анне,— кĕпинчен кăлт туртса чĕнтĕм эпĕ.— Ку ўсĕр çын çапăçма пуçласан, тухса тарайăпăр-ши?

Пирĕн кÿршĕре Еххĕм Иванĕ пурăнать. Вăл питĕ ĕçет. Ўсĕр чух çапла юрласа килет те, килĕнчен ашшĕамăшĕ, арăмĕ аран-аран тухса тарма ĕлкĕреççĕ. Унсăрăн лешĕ алла мĕн лекет, çавăнпа яра парать, тет.

Анне мана тÿрех ăнланса илеймерĕ курăнать.

— Мĕнле ўсĕр çын çинчен калаçатăн эсĕ? — ыйтрĕ вăл.

— Ара, ав, юрлаканни...

Анне тутине темшĕн саппун аркипе витрĕ. Кăшт тăхтасан тин:

— Ан аташ-ха, вăл пачăшка, турă юррине юрлать,— тесе ăнлантарчĕ.

Эпĕ пуçа çĕклесе маччаналла пăхрăм. Чиркÿ маччи çав тери çÿллĕ. Унта лапкăшпех çунатлă пĕчĕк ачасене ўкерсе тултарнă. Мана кукамай калани аса килчĕ. Пирĕштисем пирĕн хул пуççи çинче ларса çÿреççĕ, тет. Анчах хăйсем никама та курăнмаççĕ...

— Алтарь çывăхнерех пырăр, ачасене турă юнĕ сыптарма тытăнаççĕ,— терĕ пирĕн çумма пырса тăнă кукамай.

Эпир çынсем хушшипе малалла иртрĕмĕр.

Пачăшка текенни вăрăм çÿçлĕ. Хăй çине вăл сарă укаллă çивитти уртса янă. Акă ун патне кăкăр ачи

йатнă хĕрарăм пырса тăчĕ. Пачăшки тирĕкрен чей кашăкĕпе темĕскер ăсса илчĕ те ача çăварне ячĕ. «Турă юнĕ»,— тавçăрса илтĕм эпĕ. Ун хыçĕнчен татах тепри хăй ачине «турă юнĕ» сыптарчĕ. Пĕчĕкскерсем чыхăннипе ув-ва, ув-ва тесех йĕреççĕ.

Черетре тата ик-виç ача тăрать. Вĕсем пурте ман тантăшсем. Теплерен курах кайрăм: ман умри арçын ачан мăйĕнче темĕн чухлĕ çăпан, вĕсенчен пӳр юхать. Тути те пăсăк унăн, кĕсенлĕ.

Ерипенех çывхаратпăр. Мĕн тăвать ку пачăшка? Юхан мăйлă, кĕсен туталлă ача çулласа илнĕ кашăка çумарĕ те, шăлмарĕ те. Таса мар кашăкпах мана «турă юнĕ» сыптарасшăн. Эпĕ шăла çыртса, тутана пăчăртаса лартрăм. Йĕрĕнетĕп. Тарас мар-и? Йăпăрт пăрăнтăм, анчах кукамай мана çиййĕнчех çухаран ярса тытрĕ. Вăл, кăрт-карт турткаласа, мана пачăшка умне тăратрĕ-тăратрĕх. Лешĕ куçне-пуçне чарса пăрахнă та: «Турă чури, уç çăварна»,— тет мăнă сассипе. Эпĕ ним тусан та уçмастăп. Кукамай çиллессĕн янахран тытса туртрĕ. Ку вăхăтра пачăшки кашăкне çăвара чиксе те ячĕ, унта пылак шĕвек тăкса хăварчĕ. Эпĕ ăна, паллах, çăтаймарăм, йĕкленнипе шĕвек каялла пĕрхĕнсе тухрĕ.

Аннепе кукамай мана айккинелле çавăтса кайрĕç. Тула илсе тухаççĕ пулĕ тенĕччĕ. Çук мĕн-ха, ĕçĕ пĕтмен вĕсен. Пĕр кĕлетке умне пырса чарăнтăмăр. Мана кукамай çурта çутса тыттарчĕ. «Кĕл ту, çылăхна касарттар»,— сиввĕн хушрĕ вăл.

Мĕнле çылăха кĕтĕм пулать-ха? Усал ĕç туман-çке эпĕ. Йĕрĕннипе «турă юнĕ» çăтаймарăм. Тен, çавăнпа çылăха кĕтĕм пулĕ? «Каçар, каçар»,— тесе сăх-сăха пуçларăм. Ӳкерчĕк çине теплерен пăхса илтĕм те — айтурах, пĕр çынна хĕрес çумне пăталанă лартнă!

Чиркӳри çăвак та пăчă сывлăш мана лĕклентермеллипех лĕклентере пуçларĕ. Сасартăк манăн куç хураллса килчĕ... Малалла мĕн пулнине ас тумастăп. Эпĕ ура çинче тăнă çĕртех урайне тап! кайса ӳкнĕ, тет. Вара мана чиркӳрен уçă сывлăша илсе тухнă.

## Эпĕ шкула каятăп

Эпĕ самаях ӳссе кайрăм. Кукамай мана урама тухма темшĕн яланах чаратчĕ, эпĕ вара çулла садра выляттăм, хĕлле — картишĕнче. Манăн юлташсем те

çукчĕ, эпĕ ялти ачасене те палламастăм. Час-часах мана килте пĕччен ларма питĕ кичемччĕ, ун пек чухне эпĕ яланах сĕрме купăс калаттăм. Кукамай патне килекен хĕрарăмсем манран тĕлĕнетчĕç, эпĕ сĕрме купăс каланине хăш-пĕр чухне куçĕсене шăлкаласах итлетчĕç. Ун пек чухне вĕсем, ман çине ăшшăн пăхса: «Ку ачана аттемĕр-турă ытлашшипех ăсталăх панă!» — тетчĕç.

Пĕр ирхине пирĕн пата хул айне кĕнеке хĕстернĕ темле арçын килсе кĕчĕ. Эпир ун чухне урайне чĕркуçленсе ларнăччĕ те турра пуç çапаттăмăр. Пирĕн алăксем вăрттăн хумалли кĕлепе питĕрĕнсех тăратчĕç. Ăçтан кĕме пĕлнĕ ку этем? Халиччен пирĕн пата нихçан та арçын тавраш ура ярса пусман.

Кĕнĕ çын пирĕн çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Унтан темшĕн тарăхса кайрĕ. Куçĕнче унăн вут-хĕм çуталса кайнă пек туйăнчĕ.

— Эх, вată кăрккасем, хăвăр шуйттан патне кайса кĕрĕр те, анчах çак ачана, çемçе кăмăрчака, мĕншĕн вататăр? — кăшкăрса ячĕ кĕнекеллĕ çын.— Намăс мар-и сире совет саманинче, халăх коммунизм тунă вăхăтра, çапла лапăртатса пурăнма?!.

Анна манашкă тавра пухăннă хĕрарăмсем хирĕç апла та, капла та чĕнмерĕç. Йлтмĕше хыврĕç-ши вĕсем? Çак килнĕ çын вĕсене мар, пачах урăххисене калаиă евĕр пулса тухрĕ. Карчăксем çаплах пуç çапма чарăнмарĕç. Вара килнĕ çын ман умма пычĕ те:

— Тăр, ывăлăм. Турă чури пулмалли çын мар эсĕ,— терĕ.

Эпĕ ура çине тăтăм. Манăн чĕркуççисем унччен ыратакан пулнăччĕ ĕнтĕ. Кĕнекеллĕ çын мана, пуçĕпе сĕлтсе, хăй хыçĕнчен алкумне тухма кăтартрĕ. Эпĕ хирĕçлемерĕм. Вăл алкум пусми çинче чарăнчĕ, мана та хăйпе юнашар лартрĕ. Чăр-р пăхса илчĕ те:

— Мĕн ятлă-ха эсĕ, шăллăм? — тесе ыйтрĕ.

— Таник,— терĕм эпĕ.

— Миçе çулта?

— Çиччĕ тултаратăп.

— Шкула каяс килет-и санăн?

Эпĕ тӳрех нимĕн те калаймарăм, кăшт тăрсан çеç:

— Кĕнеке параççĕ-и унта? — тесе ыйтрăм.

— Памасăр. Шкулта кĕнекесем шкап туллиех! Пурте картинкăллă...

Эх, тытса пăхасчĕ. Халиччен те эпĕ картинкăллă кĕнеке пĕр-иккĕ çеç курнă. Пур пирĕн пĕр хура хуплашкаллăскер, анчах унта темĕн чухлĕ уçса хупсан та нимле ўкерчĕк тупаймăн.

— Эсĕ, Таник, вулама пĕлетĕн-и? — каллех ыйтать хайхи çын манран.

— Çук.

— Юлташусем пур-и?

— Çук.

Вăл ман çине темле сăнаса пăхса тăчĕ-тăчĕ те ассăн сывласа ячĕ.

— Нимех те мар,— терĕ юлашкинчен.— Шкула çўресен, эсĕ вулама та вĕренĕн. Вуласан тĕнче мĕнле пуçланса кайни, çулла мĕншĕн çумăр, хĕлле мĕншĕн юр çуни çинчен йăлтах пĕлĕн. Вуласан тем те пĕлĕн-ха акă!

Çак вăхăтра урамран анне килсе кĕчĕ. Манпа каласса ларнă арçын ура çине тăчĕ. Вăл аннене сывлăх сунчĕ те:

— Эпĕ акă сирĕн Таникпе паллашрăм-ха,— терĕ. Анне ун çине темле шикленнĕ евĕртерех пăхкаларĕ. Вара кĕнекеллĕ çын ăшшăн кулса ячĕ.

— Сирĕн Таник ывăлăр миçемĕш çулта çуралнă?— ыйтрĕ вăл.

— Ачи çураласса пин те тăхăр çĕр аллăмĕш çулта çуралнă-ха та... Тепле...

— Апла пулсан, эпĕ ун ятне...— текелесе, килнĕ çын кĕнекине уçрĕ те çырма пикенчĕ. Хăй çаплах каласать: — Апла пулсан, эпир Танике кăçал шкулта вĕренме пуçлакан ачасен списокне кĕртĕпĕр.

Чăр-чăр-чăр шукаларĕ аллинчи ручки кĕнеке листи çийĕн. Ман хушаматăмпа ятăм тĕрленчĕ ĕнтĕ унта! Çырма чарăнсан вăл ман çине пăхса куçне хĕсрĕ те йăл-йăл кулкаларĕ. Паллах, ман тутасем те ирĕлчĕç ĕнтĕ.

Анне хăй шухăшне каярахпа тин пуçтарчĕ-ши? «Ачана, тепле çав, шкула яраймастпăр та пулĕ. Пирĕн вăл сывах та мар та...» — текелерĕ.

Ку сăмахсене илтсен, пиччен сăн-пичĕ самант улшăнчĕ. Хĕсĕкрех куçĕ чарăлчĕ, çамки урлă йĕрсем выртрĕç.

— Çак ачана шкулсăр хăварма сирĕн нимĕнле правă та çук,— çиллессĕн каларĕ вăл.— Куратăр-и, куçĕ-

сем ун мӗнлерех ялкăшаççӗ, ача пурне те пӗлесшӗн çунса тăрать. Эсир ăна юриех чирлӗ ача выранне хуратăр. Шкула ямасăр айкашнăшăн сире эпир законпа айăплама пултаратпăр. Эсир амăшӗ. Ывăлăра шеллемелле. Эсир пур, унăн чечек пек çепӗç чунне тӗн сӗрӗмӗпе минрететӗр. Кайран ăна пурнăçра мӗн тери йывăр килнине чухласчӗ сирӗн кăщт!

Çиллессӗн калаçакан çын сăмахне анне çӗрелле пăхса итлесе тăчӗ. Вара илтӗни-илтӗнми сассипе: «Мӗн тăвас, эпир турра ӗненекен çынсем. Турра ӗненме совет саккунӗ те чармасть»,— тесе хучӗ.

— Чармасть, чармасть,— тарăхрӗ лешӗ.— Хăвăр кирек мӗн хăтлансан та, çакă илемлӗ чечеке таптаса хуçмалла марах.

Пичче тухса кайрӗ. Эпир тăрса юлтăмăр. Анне ытла та мӗскӗннӗн курăнчӗ мана. Хӗрхенес килчӗ ăна ман... Тӳсейменнипе пырса ыталарăм.

Кукамай тухрӗ.

— Кӗл тăвас чух мӗн ыталанса тăратăр?— кăшкăрса пăрахрӗ вăл пире.

— Танике, ав, шкула çӳреме çырса кайрӗç,— хирӗç тавăрчӗ анне халь-халь йӗрсе ярасла.

— Кайтăр,— терӗ пат татса кукамай.

— Мӗнле кайтăр? Ара, эсӗ ăна ярасшăн марччӗ-çке.

— Хам шухăша улăштартăм. Килте те хут пӗлекен çын кирлех. Сан, ав, вăхăт çук ялан. Пирӗн, ваттисен, куç вăйсăрланса çитрӗ. Таник шкулта хута вӗренсен, турă кӗнекисене вуласа парӗ хуть. Кайтăр, кайтăр.

Анне кукамай сăмахӗсене ӗненсех çитереймест-ши? Пăхатăп-пăхатăп та ун çине, вăл те йӗресшӗн, те куласшăн — ним те ăнланмастăп.

Ку таранччен эпӗ шкул пирки шухăшламан. Паян вара çак минутрах шкула чупма хатӗр. Хӗпӗртенипе кукамая пырса ыталарăм. Унăн кăмăлӗ çемçе. Вăл хăй те мана лăпкама пуçларӗ.

— Кукамай,— терӗм эпӗ ачашшăн,— пичче сире ятларӗ. Эсир мана чăнахах та вататăр-и? Тӗнӗн сӗрӗмӗ те пур-и?

Ăнлантарса парас вырăнне вăл мана хăтăрса пăрахрӗ:

— Тьфу, капла сӳпӗлтетсе, эсӗ мана турă умӗнче çылăха кӗртетӗн! Сана пула тем инкек курас пулӗ.

Çăварна хуп та турăш умне кĕл тума чĕркуçленсе лар.
Мĕн тăвăн, хушнине итлемеллех. Анчах халь ĕнтĕ эпĕ хавасланса кĕл тума та пултаратăп. Шкула каятăп-çке-ха!

# Малтанхи урок

Кĕтнĕ чух вăхăт мĕншĕн ерипен шăвать-ши çав? Пирĕн пата хайхи çын килсе кайнăранпа пайтах вăхăт иртрĕ. Юрать-ха ман сĕрме купăс пур. Эпĕ пахчара чечекрен чечеке куçса çӳрекен вĕл-вĕл лĕпĕшсем çинчен, шăпчăк çинчен сĕрме купăспа юрăсем калатăп.

Юлашкинчен тинех шкула каймалли ир çитрĕ. Самант та тăхтас килмест, халех каясчĕ, анчах анне çаплах мĕшĕлтетет. Кукамай сехет çине пăхса илчĕ те мана хăй патне чĕнчĕ. Эпĕ пĕр тăхтамасăр утса пытăм. Вăл мăй çине çиппе тирсе çакнă хĕресе тĕрĕслерĕ. Унтан турăш умне тăратса: «Турăран вĕренме ăс-тăн ыйт, кĕл ту, ачам»,— терĕ. Эпĕ васкаса икĕ кĕлĕ вуларăм та çурăм хыçне сумка çакрăм, вара аннепе тинех пӳртрен тухса кайрăмăр. Анне çул тăршшĕпех мана аларан çавăтса пычĕ.

— Каях ĕнтĕ, ывăлăм, тантăшусенчен тăрса ан юл,— терĕ вăл шкул умне çитесперех, унтан ман çине сынсем куриччен вăш-ваш хĕрес хурса илчĕ. Шкул умĕнче мĕн чухлĕ ача-пăча! Эпĕ вĕсем патне пыма та именетĕп. Мĕнле хаваслă вĕсем. Пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмеççĕ: чупаççĕ, сиккелеççĕ, кулаççĕ, кăшкăраççĕ, пĕр-пĕрне хăвалаççĕ. Çав ачасене пăхса тăруçăн ăшăма савăнăç кĕрсе тулчĕ. Таçтан хăюлăх çитрĕ, ачасем хушшипе иртсе, шкул крыльци çине хăпартăм. Унччен те пулмарĕ, шăнкăрав янăраса кайрĕ. Тихалла выляса, сиккелесе кĕчĕç ачасем шкула. Манăн ирĕксĕрех кая тăрса юлмалла пулчĕ. Эпĕ кĕриччен ачасем партă хушшине ларма та ĕлкĕрнĕ. Эпĕ пĕрин çумне ларас тенĕччĕ çеç, анчах вăл, кăтра çӳçлĕскер, партă хĕррине яр-р шуса тухрĕ те:

— Лартмастпăр сана! — терĕ. Унтан кӳршипе тем пăшăлтатрĕ. Кăшт çеç илтсе юлтăм: «...скер, питех кирлĕ пуль пире!» Хăйсем çавăнтах ахăлтатса кулса ячĕç. Эх, кӳрентĕм те кăтра пуçа! Тепĕр партă патне пытăм — кунта та лартмарĕç. Юлашкинчен курах кайрăм: кайри партă пушă. Çавăнта лартăм вара пĕр-

пĕччен. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, класа учительницă кĕчĕ. Çӳллĕскер. Типшĕмрех пулнăран-ши, çийĕнчи хăмăр кĕпи лапашка. Çӳçне якатса, хыçалалла чăмакка туса хунă. Аллинче пысăк кĕнеке. Сĕтел умне пырса тăрсан, вăл, кĕнекине уçса, пĕрре ун çине, тепре пирĕн çине пăха-пăха илчĕ. Куçĕ хăйĕн, кăмакаран тин çеç пĕçерсе кăларнă вĕри çăкăр питне кĕрсе ларнă кăмрăк евĕрскер, сиввĕн пăхать. Акă вăл, кĕнеке çине пăхса, ачасен ячĕсене калама тытăнчĕ. Ят тухсан, ачан ура çине тăмалла. Хăй вара кашнинех шăтарасла пăхать.

Хама чĕнессе кĕтнипе эпĕ никам ятне те асра тытса юлаймарăм. Мана партă хушшине лартман кăтра çӳçлĕ ача ятне çеç лайăх пĕлсе юлтăм — Аленти.

— Эсĕ, ачам, мĕншĕн хăвăн юлташусенчен нумай аслă? — ыйтать хайхинчен учительницă.— Санăн хăвăн çулупа виççĕмĕш класра вĕренмелле.

— Çу-ук, виççĕмĕшĕнче мар, кунтах,— хирĕçлет ачи.— Эпĕ пĕрремĕш класа каяс чух чирленĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче иккĕмĕш класа куçармарĕç.

Тахăшĕ сылтăм кĕтесре пĕрĕхтерсе кулса ячĕ. Хĕрарăм çав еннелле çиллессĕн пăхса илчĕ, унăн куçĕнчен вут тăкăннăнах туйăнчĕ.

— Мана Екатерина Ивановна тесе чĕнĕр. Эпĕ сирĕн вĕрентекен пулатăп,— пурне те тĕрĕслесе пĕтерсен каларĕ учительницă.

Малтанхи уроксем маншăн тĕлĕкри пек иртрĕç. Кăмăла кайрĕç-и вĕсем мана, çук-и — ун пирки эпĕ уçăмлăн хам та пĕлеймерĕм.

## Переменăра

Каллех шăнкăрав чăнкăртатрĕ. Тахăшĕ — Алентиех пулас — «Пысăк перемена!» — тесе хыттăн кăшкăрса ячĕ те, ачасем, çăкăр татăкĕсем тытса, урама тухрĕç. Эпĕ те вĕсенчен юлмарăм.

Шкул умĕнче ырă. Ем-ешĕл çерем. Хурăн тăрринчен тĕл-тĕл сарăхнă çулçăсем вĕлтĕр-вĕлтĕр ӳккелеççĕ. Тӳпене çакса янă хĕвелĕ сӳрĕкрех пăхать. Вăл çулла ытлашши йĕркесĕр пĕçертетчĕ. Хăйĕн хăватне чухламасăртарах пĕтерчĕ пулас... Апла пулин те, вăл ачасене юратни сисĕнет-ха. Унăн ярăписем пурпĕрех пирĕн пата ăшшăн çитеççĕ.

Шкул картишӗнчен кӑтра пуҫ Аленти ӗрлешсе тухрӗ.

— Кам мечӗкле выляс тет, ман тавра пухӑнӑр!..— кӑшкӑрчӗ вӑл.

Выляс текенсем нумай иккен. Часах ун тавра темӗн чухлӗ ача пухӑнчӗ. Ушкӑн икке пайланчӗ. Пӗрисем— мечӗк парса хӑвалакансем, теприсем — мечӗке ҫапса таракансем.

Акӑ мечӗке чун кӗрет. Вӑл, юпах тиха ҫӑмӗнчен йӑваласа тунӑскер, ҫӳлелле таҫта ҫитиех вӗҫсе каять. Кӗт вӑл хӑҫан чул евӗр аялалла вӑркӑнса анасса! Тарса каякансем унччен вӑйӑ чиккине ҫитсе килме ӗлкӗреҫҫӗ.

Манӑн та выляс, чупас килет. Эпӗ те мечӗке аякка та ҫӳле ҫапассӑн туйӑнать. Ҫывӑхарах пытӑм та меллӗ вӑхӑт кӗтме пуҫларӑм. Унччен те пулмарӗ, пурте пӑрахрӗҫ тарчӗҫ. Лапта ҫӗре выртса юлчӗ. Ӑна ярса тытрӑм. Ӗнтӗ эпӗ ҫапса янӑ ҫӑмха тӳпере вӗҫекен кайӑк хур карти патне ҫитӗ те вӗсене манран салам каласа ырӑ ҫул сунӗ. Лаптана хыҫалалла сулласа ҫеҫ янӑччӗ, тахӑшӗ аларан карт! туртрӗ. Ҫавӑнтах кӑшкӑрнӑ сасӑ илтрӗм:

— Ӑҫта пыран, манашкӑ чӗппи, уксахскер! Ху чупаймастӑн, ҫапах пирӗн хушша кӗресшӗн-и?

Ҫаврӑнса пӑхатӑп... Ку леш кӑтра пуҫ Аленти иккен. Унтан вӑл мана: «Сирӗл, ухмах!» — терӗ те кӑкӑртан чышрӗ. Эпӗ, кӑна кӗтменскер, чака-чака пытӑм та каялла кайса лартӑм. Ачасем манран ахӑлтатса кулма пуҫларӗҫ. Ура ҫине ялт сиксе тӑма хӑтлантӑм— пулмарӗ. Ура хаяррӑн ыратать. Тӑраймастӑп. Эх, намӑс ӑҫта? Ҫӗр шӑтӑкӗ пулсан, анса кайӑттӑм. Пӗри те мана ура ҫине тӑма пулӑшас тесе аллине тӑсмарӗ. Пурте каллех шавлӑн выляма тытӑнчӗҫ. Эпӗ вара, ура ҫине тӑрайманскер, шӑла ҫыртса аран-аран шкул ҫурчӗ ҫумӗнче выртакан каска пуканӗ патне упаленкелесе ҫитрӗм. Ҫав каска пуканӗ ҫине лартӑм.

Вӑхӑт нумай та иртмерӗ, шӑнкӑрав чӑнкӑртатрӗ. Ачасем самантрах шкула кӗрсе ҫухалчӗҫ. Урамра пӗртен-пӗр эпӗ ҫеҫ юпа пек тӑрса юлтӑм. Никамӑн та манпа ӗҫ ҫук, пӗри те шкула кӗр е ан кӗр текен пулмарӗ. Эпӗ ҫаплах ура ҫине тӑма хӑяймарӑм, вӑтантӑм. Ҫын кулли чуна хытӑ ыраттарать иккен, куҫа сухан пекех йӳҫӗтет...

Каска пуканĕ çинче ларса, эпĕ урасене тăсса шайлаштартăм. Сылтăм ура манăн çинçерех те кĕскерех... Килте мана мĕскĕн тесе шеллеççĕ, кунта вара — йĕкĕлтеççĕ... Куççулĕ шăпăртатсах юхса анчĕ...

— Эх, мĕн-ма уксах çуратнă-ши мана?..

Шкула кĕмерĕм, тăтăм та килелле уттартăм.

Килте никам та курăнмасть. Манăн юлташăм — пĕртен-пĕр сĕрме купăс. Ăна алла илтĕм, анчах халĕ ман купăспа та йăпанас килмест. Куç умĕнче тин çех шкулта пулса иртнисем явăнаççĕ. Акă Аленти сăмахĕ тепĕр хут хăлхара янăраса кайрĕ: «Манашкă чĕппи!..» Эпĕ манашкă чĕппи-и вара? Анна манашкă ачи вырăнне хумасть-ши вăл мана? Тен, турра ĕненекен çынсем пурте манашкă? Анне турра ĕненет. Апла пулсан, Аленти калани тĕрĕсех. Пулас килмест ман «манашкă чĕппи!»

## Пирĕн кĕнеке

Эпĕ шкулта текех ĕнтĕ ачасен çывăхне пымастăп. Ан тив, тарам пултăр, вĕсем вылянине аякран пăхса тăрсан та çитĕ.

Класра ман вырăн çаплах кайри партăра. Унта шăнкăрав йыхăрса сасă панă-паман кĕрсе ларатăп, ялан пĕччен.

Шут шутлама вĕренмелли урок иртсен, çапла, пĕррехинче, учительницă хушнипе ачасем партă çине кăшăлах кĕнекесем кăларса хучĕç.

Шкул ачисене эпĕ килте ларнă вăхăтра кĕнеке валеçнĕ пулас. Кашниех кĕнеке пуршăн хавас. Вăл пĕрре пăхса илсенех паллă. Ачасем страницăсене уçаççĕ, хупаççĕ, картинăсем пăхаççĕ. Класра пĕртен-пĕр ача çеç кĕнекесĕр. Вăл — эпĕ.

— Шăпланăр,— тет учительницă. Ачасем кĕрлеме чарăнчĕç, эпĕ те малти партă енне кармашма пăрахрăм. Екатерина Ивановна уçнă кĕнекене çӳлелле çĕклерĕ те унти çын сăнне пӳрнепе тĕллесе ыйтрĕ:

— Кам ку?

— Ленин! — терĕç те ачасем кашниех Ленина харпăр хăй кĕнекинче шырама пуçларĕç. Манăн та Ленина курас килет, анчах умри партă çара, кĕнекем çук. Кăмăл хуçăлса, хуçăлса килчĕ. Пыра тем капланчĕ, çăтсан та анмасть. Куçа вара такам вăрттăн мерчен

пĕрчи тумлатрĕ. Вăл, тăрăскер, тулса, тулса килчĕ. Сисетĕп, куç хăрпаххисем йĕпенсе йывăрланчĕç. Ĕнтĕ учительницăна та, ачасене те тĕтрелле куратăп. Вĕсем çинче хĕрлĕ, кĕрен, симĕс çаврашка ункăсем. Чун кӳтсех çитрĕ, кăмăл вĕрет, халь-халь хăпарса тăкăнать. Куç хупанки хупăнса кăна илчĕ — куççулĕ пит çăмарти тăрăх вĕтĕ шăрçа евĕр тăкăнчĕ. Эпĕ вара ĕсĕклесех ятăм. Пĕтĕм клас ман енне çаврăнчĕ.

— Чарăн! Урок вăхăтĕнче макăрмаççĕ. Эсĕ аннӳ умĕнче килте мар, шкулта! — терĕ Екатерина Ивановна.

Эпĕ тата ытларах ӳлеме тытăнтăм. Учительницă ман уммах утса пычĕ.

— Мĕншĕн ӳлен, кала? — терĕ вăл çиллес сасăпа.

— М-м-ан к-кĕ-не-ке çук...— терĕм аран-аран.

— Шкула йĕркеллĕ çӳремеллеччĕ, вара санăн та кĕнеке пулатчĕ,— ятлать вăл.— Халех чарăннă пултăр. Санпа йăпанса тăма вăхăт çук кунта манăн. Тепĕр тесен эпĕ санăн няньку та мар. Кашни ача юнтарма тытăнсан, шкултан тухса тарма тивĕ.

Йĕнĕ вăхăтра çын ятласан, хурланни иртет. Эпĕ те кăшт лăплантăм. Учительницă çаплах ман çине сиввĕн пăха-пăха илет. Хăй çав вăхăтрах, шкапа уçса, кĕнеке илчĕ те ăна ман умма партă çине хучĕ.

Эпĕ савăнса ӳкрĕм. Куççуле алăпа вăш-ваш шăлкаласа типĕтрĕм. Кĕнеке листине уçатăп. Тупрăм. Акă вăл — Ленин. Ман çине ăшă куçпа пăхать: «Çапла кирлĕ те, кĕнеке илессишĕн куççуль тăкни те шел мар»,— тенĕ пекех туйăнать.

— Ачасем, шăпланăр та мана итлĕр! — хушрĕ учительницă. Пурте лăпланчĕç. Вара Екатерина Ивановна сăмах пуçларĕ:

— Эсир кĕнекере курнă сăн вăл — Владимир Ильич Ленин. Вăл пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисен çулпуçĕ, ачасен тусĕ. Ĕлĕк хура халăха патшапа пуян çынсем пусмăрласа тертлентернĕ. Ленин ертсе пынипе пирĕн çĕршывра патшапа пуян çынсене тĕп тунă. Çакăн хыççăн пĕтĕм халăх ырă пурнăçпа пурăнма тытăннă. Ачасем валли шкулсем уçса панă. Эсир те çутă шкулта савăнсах вĕренетĕр...

Эпĕ учительницăна итленĕ май Ленин сăнне тинкерсе пăхатăп. Çамки унăн çӳллĕ те сарлака. Сухалĕ

шĕвĕр. Кусĕсене кăшт хĕсерех панă, йăл-йăл кулнăн туйăнать. Тен, вăл эпир вĕреннине курса хĕпĕртет?

Киле кайнă чух кĕнекене эпĕ сумккăна чикмерĕм, алла тытса пытăм. Пурне те кăтартас килет ăна манăн, унпа мухтанас килет. Нумаях та каймарăм, пĕр хĕрарăм тĕл пулчĕ. Эпĕ мăнаçлăн утса пыратăп. Сисетĕп, вăл ман кĕнеке çине пăхать. Акă тата тăкăрлăкран пĕр арçын тухнине асăрхарăм, вăл та мана хирĕç килет. Тĕлме-тĕл пулсан, çав çын ăшшăн кулса илчĕ те:

— Кăтарт-ха, мĕнле кĕнеке? — тесе ыйтрĕ.

Ку çынна эпĕ палларăм! Темиçе эрне каялла вăл пирĕн пата пынăччĕ. Акă вăл мана çурăмран лăпкаса илчĕ те:

— Ну, Таник, шкула çӳретĕн ĕнтĕ апла? — терĕ.

— Çӳретĕп! — терĕм эпĕ савăнса.

— Маттур. Çӳрес пулать çав,— терĕ пичче. Унтан, йăл-йăл кулкалаканскер, сасартăк ман çине темле шухăша кайса пăхрĕ.

— Килте мĕнле пурăнаççĕ-ха сирĕн? Сана халь те пуç çаптараççĕ-и? — ыйтрĕ вăл, кулма пăрахса.

Эпĕ пуçа сĕлтрĕм.

— Шел,— терĕ пичче. Вăл тата тем каласшăн пулчĕ, анчах каламарĕ. Мана, пĕчĕкскерех, алă пачĕ те, шкулта лайăх вĕренме хушса хăварса, малалла утрĕ.

Киле эпĕ çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнтăм. Чылайччен сĕрме купăс каларăм.

## Мĕншĕн йĕтĕм-ши?

Хĕл варринчех çумăр та çăвать иккен, халиччен асăрхаманччĕ. Çанталăк ăшăтса пăрахрĕ те, кăвакарнă пĕлĕтрен шыв пĕрхĕнчĕ. Вара кăпăш юр пусăрăнчĕ.

Переменăсенче юлашки вăхăтра эпир тула тухмастăмăрччĕ — сивĕрен хăраттăмăр. Çанталăк ăшăтнă кун пысăк переменă вăхăтĕнче пурте картишне йăтăнса тухрăмăр. Эпĕ те тӳсеймерĕм. Халичченхи пекех, ачасем вылянине аякран пăхса тăрăп, терĕм. Ачасем выляççĕ. Çемçе юра чăмăртаса хытараççĕ те пĕр-пĕрне переççĕ. Унччен те пулмарĕ, Аленти кула-кулах ывăç-ри юр чăмăрккине ман еннелле ярăнтарчĕ. Юрать, питрен лекмерĕ, çĕлĕк тăррине çеç кăшт сĕртĕнсе хыçалалла вăркăнчĕ. Эх, çиллĕм тулчĕ-çке. Ним тума аптранă

енне Алентие·чышкӑ кӑтартрӑм. Вӑл самантрах ман еннелле сиксе ӳкрӗ.

— Эсӗ мана мӗн кӑтартрӑн, манашкӑ чӗппи? — тет.

— Мӗн куртӑн, ҫавна кӑтартрӑм,— терӗм хӑюлланса. Сиссе те юлаймарӑм, Аленти яп! ярса тытрӗ мана. Ҫӗклерӗ те ҫапрӗ юр купи ҫине. Кӗтмен ҫӗртен пулчӗ пулин те, хирӗҫ тытрӑм. Таҫтан вӑй тухрӗ хамӑн. Тӗрмешетпӗр кӑна. Е вӑл, е эпӗ аялта. Сахал мар ун ҫухави ӑшне юр чикрӗм. Анчах вӑл сасартӑк ман кӑкӑр ҫине чӗркуҫленсе улӑхса ларчӗ те, эпӗ хаяррӑн кӑшкӑрса ятӑм. Темскерле япала ман ӳте пӑта пекех кӗрсе ларнӑн туйӑнчӗ. Аленти мана лӑскама ҫаплах чарӑнмарӗ. Ачасем пире пӑхса ахӑраҫҫӗ, нихӑшӗ те никам майлӑ та пуласшӑн мар. Вӗсен хушшинче хӑюлли пӗртен-пӗр Уляка ҫеҫ тупӑнчӗ. Вӑл пирӗнпе пӗрле вӗренекен хӗрача.

— Намӑс мар-и сана, Аленти, хӑвӑнтан вӑйсӑр ҫынна кӳрентерме? — терӗ Уляка хыттӑнах.

Хута кӗрекен ҫын сасси хурлантарчӗ-ши, суран ытлашши ыратрӗ-ши — чӑтаймарӑм, сасӑпах ӳлесе макӑрса ятӑм.

Уляка Алентие ман ҫинчен тӗртсе ячӗ.

— Эй, эсӗ, манашкӑ чӗппипе тус пуласшӑн-и? — кӑшкӑрать Аленти.— Аляли-маляли, пӗлетпӗр Уляка кама юратнине...

Уляка, мӑшкӑлланине пӑхмасӑр-тумасӑр, мана ура ҫине тӑма пулӑшрӗ.

— Эсӗ арҫын ача, сана йӗни килӗшмест вара,— хӑтӑрсарах каларӗ вӑл мана.

— Ыратать те...

Пӑрӑнса пиншак тӳмисене вӗҫертрӗм те хӗве пӑхрӑм. Тур ҫырлахах, хӑрушла япала! Кӗмӗл хӗрес ӳте сӑвӑс евӗр кӗрсе ларнӑ! Сурантан юн сӑрхӑнать. Шартах сикрӗм. Хӑранипе тата вӑйлӑрах кӑшкӑрса йӗме тытӑнтӑм.

Шкултан Екатерина Ивановна тухрӗ.

— Мӗн пулнӑ? Кам кунта ӗнелле мӗкӗрет? — ыйтрӗ вӑл.

Ачасем ӑна пӗр-пӗрне пӳле-пӳлех каласа пама тытӑнчӗҫ. Вӑл ман ҫине сивӗ куҫӗпе пӑхса илчӗ те:

— Ларасчӗ сан класрах. Чуна илетӗр ӗнтӗ эсир манне,— терӗ.

Эпĕ шăла çыртрăм, нимĕн те каламарăм. Тата айккинерех пăрăнса хĕресе туртса кăлартăм та киле кайрăм.

## Тухтăр хĕресе касса ывăтрĕ

Мур илмен хĕресĕ. Антан ячĕ ĕнтĕ вăл хама та. Намăс та, инкек те тӳсетĕп. Тепрехинче шкула тухтăрсем килчĕç те кашни ачаннех тĕрĕслемен вырăн хăвармарĕç. Çапла вара, мана та черет çитрĕ. Ыттисем пекех, эпĕ те кĕпене хыврăм. Шурă халат тăхăннă тухтăр ӳмне пырса тăтăм. Вăл куçлăхне юсаса сăмси çине меллĕн вырнаçтарчĕ те:

— Ну, йĕкĕт, мĕнле сывланине итлер-ха,— терĕ, хăйĕн пĕчĕк трубкине алла илсе. Трубкине ман кăкăр çине лартса хăлхине çывхартма çеç пикеннĕччĕ, мăйăмран çĕлен явăнса тăнине курнăнах кăшкăрса ячĕ:

— Мĕн япала ку санăн?

Эпĕ малтан ăнланмарăм. Тухтăр хĕресе аллине тытсан тин тавçăрса илтĕм те:

— Хĕрес,— терĕм.

— Хĕрес эппин. Мĕншĕн çакса çӳретĕн ăна?

— Турра ĕненетĕп,— хирĕç тавăртăм эпĕ.

— Ай-уй, мĕнле хăрушă чир! Пăхăр-ха, этсемĕрсем! Вăл турра ĕненет, вăл хĕрес çакса çӳрет!

Ман çинчи тискер чире курма пĕтĕм клас ура çине тăчĕ, пурте кармашаççĕ, кулаççĕ.

— Совет шкулĕнче çакнашкал мĕскĕн, тĕттĕм ача вĕренни мана вăтантарать,— тет тухтăр, çаплах лăпланаймасăр.— Ăçтан шăтса тухаççĕ-ха çакăн йышши этемсем?

— Унăн кукамăшĕпе амăшĕ манашкă! — терĕ те тахăшĕ тĕхик! кулчĕ. Эпĕ ку ача сассине çаврăнса пăхмасăрах уйăрса илтĕм. Вăл — Аленти.

— Эсĕ, йĕкĕтĕм,— çамрăк хунав. Сан пурнăçна урăх çĕрелле, йăнăш сукмакпа пăрса янине чухлаймастăн. Эпир ăна çапла тăвăпăр...

Тухтăр çак сăмахсемпе манăн мăйри хĕрес çаккине хачăпа кăчăрт! касрĕ те хĕресĕ-мĕнĕпех çӳп-çап ещĕкне ывăтрĕ. Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ. Эпĕ «ах!» теме те ĕлкĕреймерĕм. Хăранипе шартах сикрĕм. Ура вăйĕсем шăлтăр-р пĕтрĕç. Пĕтĕм ӳт-пĕве темĕскер чĕтрентерсе илчĕ. Çак вăхăтра пуçра шухăш вĕçсе илчĕ:

«Турă кӳренет, вăл ман пуç çине вилĕм ярать». Унччен те пулмарĕ, эпĕ вĕриленсе, пĕçерсе кайрăм. Тухтăр çакна сисрĕ пулас, ман çине ăшшăн пăхса илчĕ те çийĕнчех çурăмран лăп! лăп! çупăрларĕ.

— Ан хăра,— терĕ вăл,— тĕнчере нимĕнле турă та çук. Ан ĕнен. Турра ĕненни сана йĕркеллĕ пурăнма, савăнма, вĕренме чăрмантарать. Килтисене çакăн çинчен пĕр именмесĕр кала.

Тухтăр, шухăша путнăн, кăшт чĕнмесĕр ларчĕ. Вара хăйĕн пĕчĕк трубкине илчĕ те: «Ну юрĕ, сывлăхна тĕрĕслер»,— терĕ. Трубкине вăл кăкăр, çурăм тăрăх шутарса çӳрерĕ. Итленĕ май хăй тем калаçать. Юлташĕсем ун сăмахне хут çине çырса пыраççĕ. Вĕсем калаçнинчен эпĕ çакна ăнлантăм: ытти ачасен пурнăçĕпе пурăнман ача, çуначĕ аманнă кайăк чĕппи евĕр, ялан ах имшеркке ӳсет...

# Турă пуррипе çуккине тĕрĕслетĕп

Шкултан тухсан, эпĕ хама вырăн çинчен тин çех чирлесе тăнă çын евĕр туйрăм. Пуç çаврăнать, лĕкленterет. Нимĕн те тăвас килмест, киле те чун туртмасть. Аçта кайса чуна пусарас? Ял хыçнелле тухас-и? Сăрта хăпарсан, сĕвек вырăна вырнаçнă тăван ялăм, ун çумĕпе айлăмра юхса выртакан Эль шывĕ ывăç тупанĕ çинчи пек курăнаççĕ. Анчах та халĕ хĕлле, Эль пăрпа витĕннĕ. Çапах та урасем манăн анаталла утрĕç, пăр айĕнче шăнкăртатса юхакан Эль шывĕн хĕллехи юррине илтес килчĕ. Çул çинче пуçа тĕлĕнмелле шухăш пырса кĕчĕ: турă çуккипе пуррине тĕрĕслесе пăхмалла мар-и? Калас акă, сăмахран: «Турă, эсĕ чăнах та пулсан, халех пӳрнене, ну сăмахран, кача пӳрнене татса ил». Анчах пӳрнесĕр юлсан — çынтан катăк. Çук, килĕшместĕп. Манне чи хаклине илтĕр. Мĕн-ха чи хакли? Сĕрме купăс. Килĕшместĕп. Сĕрме купăссăр пурнăç та пурнăç мар. Мĕнпе тĕрĕслес? Эпĕ, кĕçĕн укăлчаран тухса, пĕр кана тăкăрлăкпа утса пытăм. Карта хĕрринчи çамрăк хурăн çине куçăм ӳкрĕ. Ăна кĕрт хӳсе кайнă та, вăл лутра курăнать. Çулла çӳллĕрех пекчĕ. Сип-симĕс çулçă саратчĕ вăл. Халĕ турачĕсем çап-çара. Кассăн-кассăн çил вĕрнипе авăна-авăна илет, вăйсăррăн кашлать. Юр ашса пытăм та хурăнăн шурă та

яп-яка вуллине тытрăм. Унтан чĕркуçленсе ларса, тӳпенелле пăхса, кĕл тума пуçларăм: «Эй, хăватлă турă, çӳлти аттемĕр, тĕнчере эсĕ чăннипех те пур пулсан, хурăн тавра самантлăха та пулин юра ирĕлтер, туратсене симĕс çулçă парнеле. Эпĕ ыйтнине тусан, эсĕ пуррине ĕненетĕп». Хамăн кĕллĕме умлă-хыçлă таттисыпписĕр каларăм. Анчах хурăн тураттисен симĕс çулçă курăнмарĕ, юрĕ те çав-çавах, пĕр улшăнмасăр выртать. Нимĕн чухлĕ те ирĕлмест. Ирĕлме мар, çӳлтен татах лапка-лапка çума тытăнчĕ. Çак вăхăтра хыçра сасартăк:

— Манашкă чĕппи мĕн тăвать унта? — тени илтĕнсе кайрĕ.

Çаврăнса пăхрăм та куртăм: Алентипе тепĕр ача йĕлтĕрпе ман çывăхах ярăнса çитрĕç. Вĕсене эпĕ пĕр сăмах та чĕнмерĕм, хурăн çумĕнчен хăпса, килелле утрăм. Лешсем ахăлтатсах кулса юлчĕç.

Алăк урати урлă каçнă-каçманах эпĕ кăшкăрса ятăм:

— Турă çук! Ятарласа хам тĕрĕслесе пăхрăм!

— Илтетĕн-и, амăшĕ? Ывăлу шкултан мĕнле усал хыпарпа таврăнчĕ! — терĕ кукамай йĕрсе ярасла.— Мĕн инкекшĕн чирлерĕм тетĕп. Ав, сăлтавĕ ăçта!

— Тур каçарах айвана,— хăй çине умлă-хыçлă хĕрес хывса илчĕ анне.— Ах, Таник, текех пĕчĕккĕ мар-çке ĕнтĕ эсĕ, ăса кĕресчĕ сан кăштах. Ара кам каларĕ сана? Часах кĕл ту-ха, ывăлăм, сан çумна усал çыпăçăннă пулмалла.

Анне мана ирĕксĕрех турăш умне чĕркуçлентерчĕ те аларан тытсах сăх-сăхтара пуçларĕ.

Каçхине эпĕ вĕсене мăйра хĕрес çукки çинчен каласа патăм, урăх нихçан та çакмастăп, терĕм. Кукамай чутах сывлăшсăр пулса вилетчĕ. Вăл ятлать, анне макăрать... Çапах та мана вĕсем хĕрес çактарчĕç-çактарчĕçех.

## Юлашки çула ăсататпăр

Çын вăйсăрланса выртсан-выртсан сывалаканччĕ. Эпĕ хам та миçе хут чирлемен-ши? Ик-виçĕ кун халсăрланса выртатăп та каллех ура çине тăратăп. Кукамая вара тем пулчĕ — темиçе эрне ĕнтĕ вырăн çинчен анмасть. Мана вăл ӳпкелешсе калани канăç памасть.

Турă пуррине тĕрĕсленĕ кун вăл мана: «Эпĕ чирленин сăлтавĕ, ав, ăçта!..» — тенĕччĕ. Эпех айăплă-ши вара? Айăпа сирес тесе, пайтах кĕл турăм. Кукамай мĕн ыйтнине, мĕн хушнине йăлтах тăватăп, пĕрре те кăмăлне тивĕçтермесĕр хăвармастăп. Шел ăна. Пичĕ типрĕ, ӳчĕ вĕри кăмакана пăрахса пĕçернĕ çĕр улми пекех пĕркеленнĕ. Тăнлав çинче çӳçĕ шап-шурă кăвакарнă. Ватăлчĕ-ши е чир çынна çапла муталать? Алă çинчи юн тымарĕсем пралук евĕр хăпарса тăраççĕ. Эпĕ кукамая пулăшатăп: шыв ĕçтеретĕп, апат çитеретĕп, минтерĕсене çемçететĕп.

Пĕр ирхине кукамай пире хăй патне чĕнчĕ те:

— Эх, ачамсем, эпĕ çылăх каçарттарса пăхасшăн. Пачăшкана илсе килĕр-ха,— терĕ.

Анне хыпаланса ӳкрĕ, васкасах пачăшка илме тухса кайрĕ. Алăк хупăннăранпах эпĕ, кравать пуçĕ çине тайăнса, кукамай çине пăхатăп. Сывлама ытла та кансĕр пулас ăна. Хĕрхеннипе манăн куççулĕм тухать. Пачăшка кăнтăрла умĕн тин çитрĕ.

Кукамай патне вăл вăхăтра кĕл тума çӳрекен хĕрарăмсем пухăннăччĕ. Пачăшка вĕсене пӳртрен тухма хушрĕ. Эпĕ тухмарăм, пĕчĕк пӳлĕмре тăтăм. Сасартăк кукамай хăйне япăх туйĕ, шыв ыйтĕ, пачăшки курка ăçтине те пĕлмест, терĕм.

Пӳрт пушанса юлчĕ. Пачăшка мĕн хăтланнине кăмака кĕтессинчен пăхатăп. Акă вăл кукамай умнерех пĕшкĕнчĕ те:

— Матрена, кала, торы омĕнче минле киревсĕр иç туса çылыха китин?— терĕ.

Çак самантра манăн пачăшкана пырса тĕртсе ярас килчĕ. Ах, ирсĕр çын, мĕнле сĕмсĕрле калаçать! Пирĕн кукамай мĕнле çылăх тутăр-ха! Çакăн чухлĕ пурăнса та, сăмахран, вăл мана пӳрнепе тĕртмен.

Кукамай та ăна кӳренчĕ пулас. Вăш-вашах чĕнмерĕ. Каярахпа тин:

— Киревсĕр ĕçсемпе çыхăнман-ха та, çылăха кĕресси пулнă-и, тен. Каçарттар,— терĕ.

Пачăшка илтĕни-илтĕнми тем мăкăртатрĕ, сăх-сăхкаларĕ, вара сĕтел хушшине ларчĕ.

Анне пӳрте кĕрсен тӳрех сисрĕ: пачăшка апат çиесшĕн. Вăл кăмакаран чукун кăларса яшка антарса лартрĕ. Пачăшкийĕ çулланкаласа илчĕ те:

— Аншарли пор-и?— тесе ыйтрĕ.— Пыр типнĕ, йипетмелле.

Анне ăна пĕр стакан эрех тултарса пачĕ. Пачăшка эрехе янк! тутарса ĕçрĕ те апат çиме пуçларĕ. Çисе тăрансан, шлепкине тăхăнчĕ.

— Тавах ĕнтĕ сире, пачăшка,— терĕ анне.

— Таваххи-минни, кышт окçа паран поль,— терĕ пачăшка.— Çылых каçарттарнышын.

Ним те чĕнмерĕ анне, темиçе тенкĕлĕххисем кăларса тыттарчĕ. Лешĕ кăмăлсăр — пуçне суллать. Анне каллех, енчĕк хутаçне салтса, укçа кăларчĕ. Пачăшкăн куçĕсем савăннипе хĕсĕнчĕç...

Çылăх каçарттарни те пулăшмарĕ кукамая, вăл çаплах тӳшек-минтертен уйрăлаймасть.

— Кĕнеке вуласа пар-ха,— тет тепĕр чух мана кукамай.— Хамăн куçăм курмасть, вăйăм та çук.

Евангелинчи чылай сыпăксене эпĕ пăхмасăр каласа пама та пултаратăп, анчах унта мĕн çырнине турă пуррипе çуккине тĕрĕсленĕ кунтанпа манăн ĕненесех килмест. Христус ятлă çынна пăталаса вĕлереççĕ-мĕн. Чиркӳре те картинкă курнăччĕ, унта шăпах Христус хĕрес çумне пăталанса тăнине ӳкернĕччĕ. Çав çын темиçе кунтан чĕрĕлнĕ пулать. Вилнĕ çын епле чĕрĕлтĕр-ха ĕнтĕ!..

Турă кĕнеки мана мăй таранах йăлăхтарса çитернĕ, ăна манăн алла та тытас килмест. Çапах та эпĕ кукамая кӳрентересрен хăратăп, Евангели вулама тытăнатăп.

Пачăшка килсе кайсан темиçе кунтан кукамай пачах каласма пăрахрĕ. Вăл, тăнне, чĕлхине çухатнăскер, лăкăр-р! лăкăр-р! сывласа выртать. Ăна никам та чĕнмест, канлĕ вырттăр, теççĕ. Курма килнĕ çынсем те пĕр-пĕринпе каласмаççĕ. Анне кăмака умĕнче тăрмашать, кукăль пĕçерет. Кукамай пекех, эпĕ те чĕрĕ çĕр улми кукли юрататăп.

Кăмакаран кукăль кăларсан, анне пурне те пĕрер татăк каса-каса тыттарчĕ.

— Вĕри кукăль астивсе пăхăр-ха, ырă çынсем,— сĕнчĕ вăл.

Çынсем пĕри те сĕтел хушшине лармарĕç, кам ăçта вырнаçнă, çавăнтах юлчĕç.

— Кукăлĕ перекетлĕ пултăр,— терĕ Анна манашкă, хăй çине хĕрес хывса.

— Тутлă пиçнĕ, айтурах,— терĕ тахăшĕ, кукăле чаплаттарса çисе.

Эпĕ чўрече умĕнче тăратăп. Чăмланă май пўрт умĕнчи йăмра çине пăхатăп. Туратран турат çине шурă пĕсехеллĕ чакак вĕçет: пăр-р та пăр-р! Хăлхара иртенпех татти-сыпписĕр тăсăлакан пĕр сасă. Вăл сехет йĕппи каллĕ-маллĕ куçнине аса илтерет. Анчах та çав сехет йĕппи сасартăк тап! чарăнчĕ. Иртенпех пĕр тикĕс илтĕнсе тăракан кĕвĕ татăлнă пекех пулчĕ ку. Эпĕ хам сисмесĕрех кукамай çине çаврăнса пăхрăм. Унăн кăкăрĕ пасăрхилле пĕр хăпарса пĕр анмасть. Вăл сывламасть вĕт! Пĕтрĕ пуç... Хам та сисмерĕм, çариех çухăрса ятăм: «Анне! Кукамай вилнĕ!..»

— Айтурах! Ара мĕнле ним сисмесĕр вĕлерсе ятăмăр!— ăшаланса ўкрĕ анне.

— Вилĕм тени çапла улталать вăл çынна,— терĕ ватăрах хĕрарăм.

— Чунĕ çўлти патшалăха кайтăрах,— сăмах хушрĕ Анна манашкă сăх-сăхса.

Сасартăках пурте каласма тытăнчĕç, вĕсем çакна çеç кĕтсе ларнă, тейĕн. Пĕр-пĕрне канашсем параççĕ, хăшĕсем кĕлĕ кала пуçларĕç. Пўрт ăшчикки кĕрлесе кăна тăрать.

Эпĕ чул пек хытса лартăм: сăмах чĕнме те, йĕме те пĕлместĕп. Мĕнле-ха ĕнтĕ кукамайсăр пурăнăпăр?

Усал хыпар çилпе çўрет, тет. Ваттисем калани чăнах тĕрĕс. Сехет хушшинче мĕн чухлĕ çын пырса каймарĕ-ши пирĕн пата? Темле арçынпа хĕрарăм кĕчĕç. Арçынни хура, кĕрнеклĕскер, вăйпитти çын. Хĕрарăмĕ те хура сăн-питлĕ, анчах та типшĕмрех. Вĕсем кĕнĕкĕмен йăпăртах хăйсем çине вăрăм шурă кĕпе тăхăнса ячĕç те сăх-сăха, сăх-сăха юрла пуçларĕç.

— Çветтуй кĕпине тăхăнчĕç,— терĕç çынсем вĕсем пирки.

Манăн халиччен курман этемсем камне пĕлес килчĕ. Аннене тĕпелелле чĕнтĕм те вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăмпа арçын еннелле пуç сĕлтсе ыйтрăм:

— Камсем вĕсем?

— Микун Петĕрĕн Тихăнĕпе арăмĕ. Тем шăршласа çўреççĕ.

Анне вĕсене мĕншĕн кăмăлламаннине эпĕ тўрех тавçăрса илтĕм. Микун Петĕрĕн Тихăнĕ çинчен пĕркунах кукамайпа хĕрарăмсем вăрçса калаçнăччĕ. Вăл

хайён килёнче темле сектантсене пухать, тет. Вёсен турри те, кёлли те урăх, тет.

Икĕ кун выртрĕ кукамай тупăкра. Виççĕмĕшĕнче ăна юлашки çула ăсатма тухрăмăр. Тупăкне пир тăрăхĕсем çине хурса йăтса пычĕç. Эпĕ пуçĕнчен тытрăм. Ах, йывăр-çке юман тупăк. Ялтан тухсан, тупăка çуна çине лартрĕç. Çынсем карталанса тăрсан, анне йĕре-йĕре çапла каларĕ мана:

— Таник, юлашки хут пăх кукаму çине.

Эпĕ кукамай çине пăхрăм та, çынсем тупăк хупăлчине тимĕр пăта çапсах çирĕплетрĕç. Вара эпир аннепе ун çине хăпарса лартăмăр. Лаша малалла талпăнчĕ. Масар çинче шăтăк чавса хунă.

Тупăка шăтăка яриччен унта пурте вак укçа пăрахрĕç, эпĕ те икĕ пуслăххисене ывăтрăм. Кайран, шăтăкне тăпрапа тултарсан, «тăпри çăмăл пултăр» тесе, çĕрне таптасах хытартăмăр.

— Çӳлти патшалăха — çăтмаха каймалла пултăр ёнтĕ санăн,— тет анне, вил тĕмески çине хурлăхлăн тинкерсе пăхса.

...Киле таврăнсан, Анна манашкă хушнипе эпир турăш умне шăкăрах чĕркуçленсе лартăмăр та, кукамай çăтмаха кайтăр тесе, темĕнччен турра кĕл турăмăр.

# Çĕнĕ учительница

Шкула кайма пуçланăранпа пирĕн каникулсем пĕрре кăна пулман ёнтĕ, мĕншĕн тесен эпĕ халь пĕрремĕш класра мар, виççĕмĕшĕнче вĕренетĕп. Ларасса çаплах хыçалти партă хушшинче ларатăп. Уншăн эпĕ нимĕн чухлĕ те ӳкĕнместĕп. Тĕрĕссипе каласан, ку вырăн мана килĕшет. Пĕтĕм клас куç умĕнче, пĕтĕмпех курăнать. Хыçалтан кам та пулин вăрттăн пырса чышасран хăрамалли те çук. Куçкĕретĕнех тапăнакан ачана тавăрма вăй çитерме пулатех. Ав, епле айкашаççĕ малти ретре ларакансем. Сисиччен пĕр-пĕрне аяксенчен чышкăпа тăрăнтараççĕ, çӳçрен туртаççĕ, çурăмран кӳпкеççĕ. Йĕри-тавра пăхса çаврăнсан та, тĕк ларакан ача тупаймăн. Тĕркĕшнине пула класра тусан мăкăрланать кăна.

Шавласа та тĕркĕшсе вăхăт самаях иртрĕ. Екатерина Ивановна çаплах килмест те килмест. Мĕн пулнă

ăна? Пур çĕре те сăмсине пырса чикме юрататакан Аленти тӳсеймерĕ, таçта кайса килчĕ те ачасене шăпланма хушрĕ.

— Çĕнĕ хыпар итлĕр!— терĕ вăл, аллине çĕклесе.— Учительницă килмест. Вăл текех пире вĕрентмест.

Ачасем ĕненеççĕ те, ĕненмеççĕ те. Каллех шавлама тытăнчĕç.

— Мĕншĕн килмест?

— Ма вĕрентмест?

— Унăн нянине-тюнине пулать, тет,— пĕлтерет Аленти.

— Ой, мĕн тери лайăх!

— Ан килтĕрччĕ...

— Ун вырăнне кам вĕрентĕ-ши?

Аленти çавăнтах хул пуççи çине сумкине уртса ячĕ те:

— Атьăр киле!— терĕ.

Çав вăхăтра класа шкул заведующийĕ кĕчĕ. Вăл пире Екатерина Ивановна чăнахах та малашне вĕрентменни çинчен пĕлтерчĕ, ыран çĕнĕ учительницă килет, терĕ. Эпир вара киле кайрăмăр.

Килте анне армана кайма хатĕрленетчĕ. Вăл çунашка çине пăрçа миххи хучĕ те армана пыма мана та чĕнчĕ. Эпĕ хаваслансах унпа пĕрле урам тăрăх çуна туртса утрăм.

Каялла таврăннă чухне анне мана çăнăх миххи çине ларса пыма сĕнчĕ:

— Лар, ывăлăм,— терĕ вăл мана йăвашшăн, çунашка çине пуçне сĕлтсе. Хĕрхенет анне мана. Эпĕ килĕшместĕп, тавлашатăп. Йывăр пулать-çке ăна. Анне çиленет: «Курмастăн-и мĕн? Кăнтăрла иртсе кайрĕ. Сан маюпа кайсан, хăçан çитĕпĕр?»

Кĕпер урлă каçсан, хамăр ял çулĕ çине кĕрсе тăвалла улăхнă чух, пире пĕчĕк чăматан çĕкленĕ хĕрарăм хуса çитрĕ. Çийĕнче унăн — пальто. Пуçĕнче — ăшă çăм тутăр, ăна вăл майралла çавăрса çыхнă. Хĕрарăм пире тинкеререх пăхрĕ, вара сăмах хушрĕ:

— Амăшне йывăртарах мар-и капла? Миххи те пысăк-çке...

Сасси хăйĕн йăваш. Эпĕ, унăн сăмахĕнчен вăтанса, пӳçа пĕкрĕм. Ваштах тăрса утма хăюлăх çитмест. Анне ӳсĕрем пек туса пырне тасаткаларĕ те çапла тавăрчĕ:

— Йывăрри-качки, мĕн-ха, пирĕн ачи аплах мар. Сывлăхĕ хавшакрах, ури те ыратать...

Хĕрарăм аннепе шайлашса çунашка кантрине ярса тытрĕ.

— Айтурах. Ан чăрманăр,— тет анне.— Ывăнатăр. Хăвăрăн та япала пур.

Эпĕ вара йăпăр-япăрах çунашка çинчен сиксе антăм, анчах чăматанлă хĕрарăм аннене пулăшма пур пĕрех пăрахмарĕ.

Пĕр хушă шарламасăр утрĕç. Анчах ку нумая пымарĕ. Палламан хĕрарăм часах сăмах пуçласа ячĕ. Вăл ман енне çаврăнса пăхрĕ те:

— Ку сирĕн ачи шкулта вĕренет-и?— терĕ.

— Виççĕмĕш класра вĕренетчĕ-ха,— тавăрчĕ анне. Шухăшне уçăмлăн каламанни хăйĕн сассинченех паллă. Вăрттăнлăхне çын пĕлесрен шикленнĕн çийĕнчех ыйту пачĕ:

— Эсир каçа хирĕç таçталла çул тытатăр ĕнтĕ?

— Çак яла ачасене вĕрентме килетĕп. Учительницă эпĕ.

Учительницă? Хыпар мана тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Эппин, вăл пирĕн çĕнĕ учительницă! Мĕнлерех çын! Ырă хĕрарăм. Аннепе епле кăмăллă сăмахлать. Екатерина Ивановна нихçан та ун пек калаçман. Тĕл пулсан, яланах аннепе ятлаçать вăл. Класра та Екатерина Ивановна нихçан ăшшăн калаçман пирĕнпе. Пĕрмаях тулашать. Ачисем те ĕнтĕ кӳрентереççĕ ăна, шкула кая юлса çитеççĕ е пачах пымаççĕ. Киле парса янă ĕçсене тумаççĕ.

Яла çитсен, учительницă утма чарăнчĕ.

— Ну, Таник, ыран шкула пыр,— терĕ вăл мана.— Юлташусене те кала...

Вăл аннепе сывпуллашрĕ те сăрт çинче ларакан шкул еннелле утса кайрĕ. Эпĕ çĕнĕ учительницăна мĕн курăнми пуличченех куç илмесĕр пăхрăм.

## Лайăх вĕренме тăрăшăп

Тепĕр кун эпĕ шкула çитнĕ çĕре клас кĕрлесе кăна тăратчĕ. Пĕтĕм сăмах-юмах çĕнĕ учительницă çинчен. Хăшĕ ăна курнă, тепри — çук. Курнисем вара кашниех мухтанса калаçаççĕ, вăл ун пек, вăл кун пек, теççĕ.

Чăннипе илсен, пуринчен малтан кураканни эпĕ пулнă вĕт-ха! Çапах та хăм чĕнмесĕр тăратăп. Юлашкинчен меллĕ вăхăт тупрăм та: «Çĕнĕ учительницă çав тери лайăх çын, вăл пирĕн çунашкана туртрĕ»,— терĕм. Ачасем шăпах пулчĕç. Аленти ман çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те сасартăк кулса ячĕ.

— Итлĕр-ха, манашкă чĕппи мĕн калать, кулса вилмелле!

Вăл кулнине кура ыттисем те ахăлтатма тытăнчĕç. Алентийĕн кулнипе куççулĕсем те тухрĕç. Вăл, питне аллипе шăла-шăла, çапла каласа хучĕ:

— Çĕнĕ учительницă хăвăнпа пĕрле турра пуç çапрĕ, тесшĕн мар-и эсĕ?

— Ĕненместĕр пулсан, сăх-сăхса кăтартам,— терĕм эпĕ.

— Эпир пупсем-и мĕн пирĕн умра сăх-сăхса тăма! Чарăн!— тет Алентипе юнашар тăракан ача, ман алăран карт! çапса.— Турра ĕненекен çынсем яланах суяççĕ вĕсем. Пирĕн кӳршĕре Тихăн арăмĕ турра ĕненет. Хăй çынсене улталаса çеç çӳрет. Çавăншăн ăна кӳршĕсем тӳсме пултараймаççĕ, май пулсан, шăпăрпа шăлса ывăтма хатĕр.

Алентие эпĕ чунтан кӳрентĕм. Чăнах тарăхмалла. Тĕрĕссине каласан та ĕненмест. Ăна пула ыттисем те ман çине шанмасăр пăхаççĕ.

— Чим-ха, кала,— манран татах ыйтать Аленти,— сана çĕнĕ учительницă çунашкапа туртса катаччи чуптармарĕ-и тата?

Тавлашнипе хĕрсе кайнăскерсем, класа çĕнĕ учительницă кĕнине эпир сисмен те. Ун сассине илтсен тин çаврăнса пăхрăмăр.

— Мĕн пирки çав териех шавлăн калаçатăр?— ыйтрĕ вăл.

Ачасем кăпăр-капăр хăйсен вырăнĕсене кĕрсе ларчĕç. Аленти çеç хăрамарĕ, вăл учительницă умне утса пычĕ те ман çине пӳрнипе тĕллесе çапла каларĕ:

— Ве-е-ç ав, хыçалти партăра ларакан уксах ача суять. «Çĕнĕ учительницă пирĕн çунашкана туртрĕ», тет. Вăл манашкă ачи.

Учительницă Алентие хăй вырăнне ларма сĕнчĕ, ачасене лăпланма хушрĕ.

Клас шăпланчĕ. Учительницă сăмах пуçларĕ:

— Юрĕ. Паллашиччĕнех, тӳрех эппин, тавлашул-

лă ыйтăва татса парар,— терĕ вăл.— Сирĕн юлташăр суймасть, тĕрĕс калать. Çынна пулăшни, çунашкана туртни, ман шутпа, пачах та начар мар. Пĕр-пĕрне пулăшасси, ачасем,— çыннăн пысăк тивĕçĕ. «Вăл — манашкă ачи»,— терĕç кунта. Ку ыйтăва вара ниепле те халь татса параяс çук эпир. Ун пирки каярахпа тĕплĕнрех калаçăпăр. Çынна каласа хăртнипе усă кӳреймĕн.

Учительницă калаçнă вăхăтра ачасем ман енне çаврăна-çаврăна пăхаççĕ. Вĕсен куçĕсем аслă юлташăн сăмахĕпе килĕшнине пĕлтереççĕ.

Ĕнтĕ вăл пирĕнпе паллашма та, пирĕн ятсене ыйтса пĕлме те ĕлкĕрчĕ. Хăй вăл Мария Андреевна ятлă.

Эпĕ çаплах лăпланаймастăп. Çĕнĕ учительницăна çав тери ăшă сăмах калас килет манăн. Анчах мĕнле сăмах? Тавçăрса илейместĕп.

Урок иртрĕ, перемена пулчĕ. Ачасем класран тухса кайрĕç. Мария Андреевна хăйĕн сĕтелĕ хушшинче темскер çырса ларса юлчĕ. Эпĕ ун патне ерипен утса пытăм та, ним калама сăмах тупайман енне:

— Эпĕ лайăх вĕренме тăрăшăп,— терĕм.

Вăтаннипе чĕлхем çухалчĕ. Урăх нимĕн те чĕнеймерĕм эпĕ. Пуçа чикрĕм те класран ухă йĕппи евĕр тухса сирпĕнтĕм.

## Çĕнĕ çул ĕлки

Канмалли кун хыççăн ирхине шкула пырсан, эпĕ коридорăн пĕр вĕçне хăмапа пӳлсе лартнине асăрхарăм. Ас тăватăп, виçĕм кун учительницă ачасене урок хыççăн коридора хăмасем çĕклесе кĕме хушнăччĕ. Эпĕ, киле васкамаллипе, ун чухне юлмарăм. Кашни шăматкунах, каç кӳлĕм, пирĕн пата кĕл тăвакансем пухăнаççĕ. «Кĕл тăвакансем» тесен, вĕсем ытлашши йышлă пек ăнланмалла. Çук, кукамай вилнĕренпе пирĕн пата Анна манашкăпа икĕ хĕрарăм çеç çӳреççĕ. Вĕсем урайне чĕркуçленсе пуç çапаççĕ-çапаççĕ те юрлама тытăнаççĕ. Эпĕ сĕрме купăс калатăп. Юрататăп сĕрме купăс калама. Анчах вĕсем ытла та хурлăхлăн, тилмĕрсе юрлаççĕ, çавă чуна чăрмалать. Шăпах кĕл тăвакансене сĕрме купăспа юрлаттарассишĕн ачасемпе пĕрле хăма çĕклеме юлмарăм та ĕнтĕ виçĕм кун.

Паян акă уроксем пĕтсен, эпир класран пурте пĕрле тухрăмăр. Унччен те пулмарĕ, коридор вĕçĕнче пӳлсе тунă чăланта ытармалла мар илемлĕ музыкă янăрани илтĕнсе кайрĕ. Ачасем пурте тăпах хытса тăчĕç. Эпĕ те, ыттисем те пĕр труках асăрхарăмăр: чăлан хăми çумне пысăк ӳкерчĕк çыпăçтарнă: вăрăм сухаллă старик, тăлăплăскер, пирĕн çине пăхса хаваслăн кулса тăрать. Аллинче хăйĕн туя. Çĕлĕкне пусса лартнă. Çăмламас куç харши айĕн ытла та чее куçпа пăхать вăл. Чăлан алăкĕ тăрринче пысăк сас паллисемпе çырса хуни пур. Вулатăп: «Хĕл мучи мастерскойĕ».

Мария Андреевна тата чăлана хăçан кĕме ĕлкĕрнĕ-ши, алăка яр уçса ячĕ те:

— Ачасем, кунта! Сире Хĕл Мучи йыхăрать! — тесе кăшкăрчĕ.

Эпир чăлана кĕпĕрленсе кĕтĕмĕр.

— Ой, мĕнле чаплă радио пур кунта! — терĕ пĕр ачи, музыкă каласа ларакан пысăк та илемлĕ ещĕк çине кăтартса.

— Радио мар вăл, приемник, — тӳрлетрĕ Аленти. Ачасем шавласа кайрĕç.

— Шăпланăр-ха, тусăмсем, — чарчĕ пире учительницă. — Пирĕн шкулта, куратăр ĕнтĕ, Хĕл Мучи мастерскойĕ уçнă. Халĕ эсир шăпах çав мастерскойра тăратăр. Сирĕн валли вăл акă сарă-кĕрен, хĕрлĕ-симĕс хут тĕркисем ярса панă. Кăмăл пулсан, хывăнăр та ĕçлеме пуçлăр. Мĕнле тумсем, теттесем килĕшеççĕ — суйлăр.

Мария Андреевна сĕтел çине пысăк кĕнеке кăларса хучĕ.

Камăн тухса каяс килтĕр? Пулас елка пурне те илĕртет-çке.

Уляка чи малтан хăюлланса кĕнекине ярса илчĕ те, страницисене уçса, картинкисене пăхма тытăнчĕ. Ыттисем те ăна сырса илчĕç.

— Эпĕ хам валли çакна суйласа илетĕп. Елкăра сарă чечек пулатăп, — терĕ Уляка, ӳкерчĕкри илемлĕ тумланнă хĕрача çине тĕллесе. Тутăр вырăнне ку хĕрача пуç тăррине чи пысăк çеçке лартнă, кĕпи те чăнчăн чечек çеçки пек.

— Эсĕ ăна çĕлеме те пĕлместĕн, — хирĕçлерĕ Аленти.

— Ачасем, костюмсене килте вăрттăн çĕлеме те юрать. Елкăра пĕр-пĕрне тӳрех палласа илмесен, интереслĕрех пулать,— ăс пачĕ учительницă.— Халĕ елкăна илемлетме теттесем тăвар.

Эпир тĕрлĕ тĕслĕ хутран теттесем тума тытăнтăмăр. Ку ĕç часах пурне те тыткăна илчĕ. Тăрăшсах ĕçлеççĕ: хачăпа касаççĕ, çилĕмпе çыпăçтараççĕ. Хутсăнчăр ярăмĕсем, хунарсем, пĕчĕк ялавсем, юр пĕрчи эрешĕсем ытармалла мар хитре тухрĕç. Эпир Улякапа юнашар ĕçлерĕмĕр.

Пĕр-пĕринпе калаçа-калаçа ĕçленĕ май пирĕн хыçра ачасем пухăнса тăнине сисмен те эпир. Аленти ахăрса ярсан тин çаврăнса пăхрăмăр.

— Юлташсем, пăхăр-ха пачăшкăпа мачăшкăна!— тет Аленти.— Усал ересрен çурăмĕсене хĕрессем çыпăçтарнă!

Пăхрăм та — Уляка çурăмĕ çинче хут хĕрес çыпçăнса тăнине куртăм. Ачасем тӳсейми шăл йĕреççĕ. Ăнлантăм: эппин ман çурăм çумĕнче те хĕрес. Алăпа хыпашлама тытăннăччĕ çеç, çак вăхăтра мана тахăшĕ хут калпак тăхăнтартрĕ ячĕ. Ку мăшкăла чăтма çуках. Эпĕ калпака хывса ывăтас вырăнне Алентие тытма кармашрăм. Анчах Уляка пирĕн хушша кĕрсе тăчĕ. Аленти тата хытăрах ахăрма тытăнчĕ:

— Атьсемĕр, курăр-ха, шăп та шай пуп! Анчах пупĕ пĕчĕккĕ те уксах!

Ман пуçри калпак ытла кулăшла ларать ĕнтĕ, унсăрăн ачасем варĕсене тытсах кулмĕччĕç. Тарăхнипе ним тума та пĕлместĕп. Уляка çухалса каймарĕ.

— Аленти, халех Таникрен каçару ыйт,— терĕ.

— Тупнă камран каçару ыйтма,— тавăрчĕ Аленти елпешкеленсе.— Ăна, манашкă чĕппине, шкултан кăларса ямалла, тĕн сĕрĕмне сарса ан çӳретĕр. Вăл пур пĕрех пупа тухать.

— Мария Андреевна мĕн каланине мантăн-и?— кăшкăрчĕ Уляка. Хăй ман пуçри калпака, çурăм çинчи хĕресе сĕвсе илсе кĕтесе пăрахрĕ. Эпĕ йĕри-тавра пăхса илтĕм, учительницăна курмарăм, вăл мастерскойран тухса кайнă-мĕн. Алентийĕ те, ирĕке туйса, тата хытăрах чăрсăрланать.

— Чим-ха,— тет,— эсĕ мĕн пит Танике хӳтĕлетĕн? Тен, эсĕ те ун амăшĕ пек манашкă мар-и таçта? Çурăму çинче санăн та хĕрес пур!

— Пур пулсан, хӑпӑтса пӑрах, ӑна эсӗ ҫыпӑҫтарнӑ,— хыттӑн хушрӗ Уляка, ҫурӑмӗпе Аленти енне ҫаврӑнса тӑрса.

— Ха, эпӗ-и-мӗн? Кам ҫыпӑҫтарнӑ, вӑл хӑпӑттӑр,— терӗ Аленти пӑрӑнса.

Хальхинче вӑл кӑштах шикленчӗ пулас, ҫапах та хушнине итлемерӗ. Вара Уляка ҫапла каларӗ:

— Юрӗ. Анчах асту, куншӑн санӑн йӗмелле ан пултӑр. Чавсу ҫывӑх та, ҫыртаймӑн вара.

Ҫакӑн хыҫҫӑн мастерскойӗнче ӗҫлеме манӑн текех кӑмӑлӑм пулмарӗ. Юлсан, Алентипе тӳпелешме тиветех. Тухса кайнинчен ырри ҫук та. Анне сӑмахӗ те аса килчӗ. «Хӑвна тивсен те, никама та ан тӗкӗн. Пӑрах та кай...»

Ҫул ҫинче мана Уляка Аленти калана сӑмахсем шухӑша ячӗҫ. Мӗнле ӑнланмалла ӑна: хӑратасшӑн-и е тавӑрасшӑн-и вӑл? Хӗрача-ҫке, арҫын ачана епле ҫӗнтерӗн? Эх, эпӗ те ҫав! Алӑ сул, Уляка, ан ҫыхлан вӑл усал ачапа, темеллеччӗ. Халӗ, ав, Улякана ним каламасӑрах тухса утрӑм. Аван мар капла.

Киле ҫитсен, эпӗ аннене шкулта мӗн пулса иртнине каласа патӑм. Эпӗ каланине итленӗҫемӗн унӑн сӑнӗ улшӑнса пычӗ. Ӑшшӑн йӑлтӑртатса пӑхакан куҫӗ тӗксӗмленчӗ, куҫ харши темле пӗрӗнсе аялалла усӑнчӗ, вӑл ассӑн сывласа илчӗ те мана ӑнлантарма тытӑнчӗ:

— Чӑвашсен ӗлӗк нихҫан та елка ирттерес йӑла пулман. Сире тем тесен те усал илӗртнӗ. Мастерской текеннине те усал ертсе кӗнӗ. Ав, епле вӑл сире ҫапӑҫтарнӑ. Усал ерсен, инкек патне ҫитесси те аякра мар. Кӗл ту, ывӑлӑм, ӑслӑскер...

Эпӗ турӑш умне чӗркуҫленсе лартӑм. Нумайччен пуҫ ҫапрӑм турра, темиҫе кӗлӗ те вуласа тухрӑм.

Ҫакӑн хыҫҫӑн шкула эпӗ каймарӑм, мана анне ямарӗ. Килте ларма ҫав тери кичем. Пуринчен ытла манӑн Мария Андреевнӑпа Улякана курас килет.

Виҫҫӗмӗш каҫхине каҫпа апат ҫисен, эпӗ турра тав туса сӑх-сӑхма тытӑннӑччӗ ҫеҫ, шӑп ҫав вӑхӑтра алӑк уҫӑлчӗ те, пӳрте Мария Андреевна кӑштӑрт кӗрсе тӑчӗ. Сӑх-сӑхнине учительницӑ курнӑшӑн эпӗ питӗ вӑтантӑм, самант чӑлана кӗрсе пытантӑм. Шкулта турӑ, усал пур тенине те ӗненместӗп. Ахалех Аленти манран кулать. Аслати мӗншӗн аватнине те пӗлетӗп. Мария Андреевна пӗтӗмпех ӑнлантарнӑ. Унпа пӗрле

чух нимрен те хăрамастăп, вăл никама та пире кӳрентерме ирĕк парас çуккине пĕлетĕп. Киле таврăнсан вара кĕтесри турăша куратăп çеç, шкулти хăват тасрта кайса çухалать. Эпĕ каллех пурне те: туррине те, усалне те ĕненетĕп, вĕсенчен хăратăп.

— Таник, ăçта эсĕ? Тух кунта, сана шкулта ачасем кĕтеççĕ. Паян шкулта çĕнĕ çул елки,— терĕ учительницă мана.

Эпĕ чăлан алăкĕ умне пырса тăтăм. Пĕрре анне çине, тепре учительницă çине пăхатăп.

— Пирĕн ачи сывах мар та вăл,— тет анне.

— Тĕрĕс мар калатăр,— килĕшмест учительницă анне сăмахĕпе.— Чирлĕ те чирлĕ тесе тăрсан, сывă çын та йăшать. Апла аван мар, амăшĕ. Ачан яланах хăйĕн тантăшĕсемпе пĕрле пулмалла, савăнмалла, выляса-кулмалла.

Ним те чĕнмерĕ анне. Эппин, вăл мана кайма чармасть. Хăпăл-хапăл тăхăнтăм та Мария Андреевна патне тухрăм. Каяс умĕн вăл алăк умĕнче чарăнса тăчĕ те анне еннелле çаврăнса çапла ларĕ:

— Амăшĕ, сан хăвăн ачуна ялан кĕл тутарас вырăнне ытларах усăллă ĕçе хутшăнтарасчĕ. Капла эсĕ ачана тĕрĕс шухăшлă пулса ӳсме чăрмантаратăн.

Анне, çăварне шыв сыпнăнах, каллех нимĕн те чĕнмерĕ. Эпир тухса кайрăмăр. Учительницă мана, хăй ачине çавăтса кайнă пекех, аларан тытрĕ те вĕçертме те шутламасть.

— Мĕншĕн шкула çӳремерĕн эсĕ, Таник?— ыйтрĕ вăл манран.

— Анне ямарĕ, эсĕ чирлĕ,— терĕ.

— Эпĕ сирĕн пата темиçе хут та килтĕм. Хапха ялан питĕрĕнсе тăрать сирĕн. Пĕррехинче карта урлă каçса алăк умне пытăм, каллех пысăк çăра çакăнса тăнине куртăм. Сана тасрта ăсатнă пулĕ тенĕччĕ.

— Çук, эпĕ килтех ларнă.

— Ёлкăра тăхăнма хăвăн валли нимле костюм та çĕлемерĕн-и?

— Çук. Ёлкăна пырасси пирки эпĕ ĕмĕтленмен те...

— Таник, мĕнле-ха эсĕ ниепле те тĕн сĕрĕмĕнчен хăтăлса çитейместĕн? Турă çуккине пĕлетĕн вĕт-ха... Ăна авал пуянсем чухăнсене хăйсемшĕн хăратса ĕçлеттерме çеç туртса кăларнă вĕт. Пирĕн шкулти ачасем, ав, пĕри те турра ĕненмеççĕ, çапах та пит лайăх

ӳсеççӗ. Çынсем ӗненмеççӗ пулсан, санӑн мӗншӗн ӗненмелле?

Эпӗ ним калама та пӗлмерӗм, шкула çитичченех сӑмах чӗнмерӗм.

Хӗл кунӗ ытла та кӗске, акӑ ӗнтӗ тӗттӗмленсе те килчӗ. Алӑка уçса кӗнӗ-кӗмен манӑн хӑлхана ачасен хаваслӑ сасси ян янратрӗ. Эпӗ тӳрех хамӑр класа чупрӑм. Ой, мӗн куратӑп! Кунта партӑсем çук. Урай варринче маччана перӗнсех чечен чӑрӑш ларать. Унӑн кашни лӑсси çинче вуншар тетте! Унта та кунта кача пӳрнерен те пӗчӗкрех мӑч-мӑч лампӑсем çакӑнса тӑраççӗ. Вӗсем халӗ çунмаççӗ. Çу-у-ук, кунашкаллине эпӗ курман нихӑçан та. Чӑрӑш умне пырса тӑтӑм, шыратӑп... Тупрӑм, авӑ вӑл, эпӗ тунӑ тетте — çурла уйӑхпа ула йытӑ. Унччен те пулмарӗ, ачасем чупса кӗчӗç. Эпӗ пӗрне те уйӑрса илейместӗп. Вӗсем пурте пичӗсене пӗчӗк маскӑсемпе хупланӑ, пӑхма куç валли шӑтӑкраснӑ. Пичӗ, сӑмси, çӑварӗ уçах, анчах пурпӗрех паллама хӗн: ара, кашниех костюм тӑхӑннӑ-çке-ха! Темле костюм та пур кунта: хӗрли те, симӗсси те, кӑвакки те. Эпӗ сарӑ чечек тумлине асӑрхарӑм. Ку ӗнтӗ Уляка пуль, кӗнекери ӳкерчӗке курсанах, куç хывнӑччӗ вӑл ӑна.

Учительницӑ пире чӑрӑш тавра карталантарса тӑратрӗ, вара ачасем юрласа ячӗç. Юрри кӑмӑллӑскер, пӗр çаврӑм итлесенех асра юлмалла. Çавӑнпа тепӗр самантран эпӗ те юрлама пуçларӑм.

Сасартӑк пирӗн пата шап-шурӑ тӑхӑннӑ икӗ çивӗтлӗ хӗрача чупса кӗчӗ. Чӑрӑш тавра çаврӑнчӗ те вӑл:

— Салам сире манран, Юр пикерен! — терӗ. Эпир те саламларӑмӑр.

— Эсир кучченеçпе килекен Хӗл Мучине кӗтетӗр-и? — ыйтать хайхискер.

— Питӗ курас килет ӑна! Кӗтетпӗр! Кӗтетпӗр!

Юр пике алӑк патнелле чупса кайрӗ.

— А-у! А-у! Асатте! Хӗл Мучи! Килӗр-ха хӑвӑртрах! Кунта ачасем çӗнӗ çул елки ирттерме пухӑннӑ. Сана кӗтеççӗ. А-у! А-у!

Пӳлӗме вӑрӑм сухаллӑ, кӗрнеклӗ Хӗл Мучи пырса çитрӗ. Вӑл урайне патакпа тӑк-тӑк тутарса илет. Хайӗн çурӑмӗ хыçӗнче тулли михӗ.

Шурӑ сухаллӑ старике курсан, класра тӳсме çук шӑв-шав çӗкленчӗ. Утма та памаççӗ Хӗл Мучие ача-

сем. Кам — аллине, кам — туйине, кам — сухалне тытса пăхасшăн кармашать. Юр пике çеç ун валли çул уçса пырать. Хĕл Мучи аран-аран капăр чăрăш умне çитрĕ, миххине йăвантарчĕ. Чăрăш килĕшрĕ пулас ăна.

— Лайăх теттесемпе илемлетнĕ, маттур, ачасем,— мухтарĕ вăл пире.— Теттесене хăвăрах турăр-и?

— Хамăр,— пĕр харăс каларĕç ачасем.

Хĕл Мучи вара пурне те хĕллехи каникул пуçланнă ятпа саламларĕ, çĕнĕ çулта тата лайăхрах вĕренме, телейлĕ пулма ырă сунчĕ. Эпир ăна тав турăмăр. Унтан пуçланчĕ чăн-чăн савăнăç. Хĕл Мучи питĕ хаваслă çын иккен. Юр пикийĕ вара пушшех та хавассăн вĕтĕлтетсе çӳрет.

— Асатте, Хĕл Мучи! Пирĕн елка темшĕн çуталмасть!..

— Халех, Юр пикем, çуталĕ. Анчах пурте эсир манпа хыççăн каласа пырăр:

— Елка, елка, çутал! Çĕнĕ çул каçĕ çитрĕ.

Капăр чăрăш кĕтмен çĕртен çап-çутă çуталса каять. Ачасем тĕлĕнеççĕ. Алла-аллăн тытăнса, пурте карталанса тăтăмăр. Хĕл Мучи юрла пуçларĕ, унпа пĕрле — эпир те. Юрă çемми питĕ савăк. Юрăра çĕнĕ çул елкине ача-пăчана савăнăç илсе килнĕшĕн мухтанă. Юрă хыççăн юрă шăранать.

Хĕл Мучи юрра çеç мар, ваййа та питĕ ăста-мĕн. Мĕнле кăна вăйă пĕлмест вăл! Вăйă йĕркелеме ăна пĕрмаях Юр пикепе тепĕр ача пулăшаççĕ. Çав ача вăйăра яланах манпа юнашар тăрать. Ывăнсан, эпĕ пукан çине кайса ларатăп: вăл каллех ман çумра. Кансан: «Атя вылямa»,— тесе чĕнет. Тĕлĕнетĕп. Кам вăл? Эпĕ питĕ тавçăрса илесшĕн, сассине те тимлесе тăнлатăп, анчах пурпĕрех паллаймастăп. Åçта унта паллама? Асар-писер тăхăнса лартнă. Клоун теççĕ ăна пурте.

Сасартăк сехет çапнă майлă сасă илтĕнсе кайрĕ. Вăл сасă те тулта, кантăк умĕнче, те юнашарти пӳлĕмре пулчĕ — ăнланма йывăр.

Хĕл Мучи тухса кайрĕ те тепĕр самантран Юр пикепе пĕрле капăр çунашка туртса кĕчĕ. Çунашки çинче ача ларса пырать.

— Акă сирĕн пата Çĕнĕ çул илсе килтĕмĕр,— терĕ

Хĕл Мучи, çунашкине чечен чăрăш умне пырса лартса. Ача йăкăлт сиксе анчĕ çунашки çинчен.

— Ачасем,— тет Çĕнĕ çул,— эпĕ сирĕн тус. Сирĕн валли çĕнĕ телей илсе килтĕм. Мĕн чухлĕ пĕлӳ парап сире! Вĕренме кăна ӳркенсе ан тăрăр!

Хĕл Мучи кайма баскать. Çавăнпа та Юр пикене миххине салтма хушать. Ачасем пĕри те тепри маскисене хыврĕç. Хĕл Мучийĕ кӳрентермест, пурне те кучченеç валеçет. Валеçсе пĕтерсен, вăл калпакне, шурă çитсăран çĕленĕ тăлăпне хыврĕ. Уссине, сухалне, куç харшине сĕвсе ывăтрĕ. Пăх та кур — Мария Андреевна пулчĕ те тăчĕ! Тĕлĕнтермĕш, кам шухăшланă Хĕл Мучи пирĕн учительницă тесе.

Мария Андреевна Юр пикепе Çĕнĕ çула ыталаса илчĕ.

— Ачасем, халĕ сире паллаштарам ĕнтĕ,— терĕ вăл.— Юр пике — манăн электромеханикă техникумĕнче вĕренекен хĕрĕм. Çĕнĕ çул, вăлах паçăр Клоунччĕ, манăн ывăл — Володя. Каникул хыççăн вăл сирĕнпе вĕренме тытăнать.

...Мана кĕçĕр пулса иртнĕ уяв — çĕнĕ çул ёлки, ырă тĕлĕк евĕр туйăнчĕ. Халĕ акă вăрантăм пек те Хĕл Мучи чăнах та Хĕл Мучи пулманшăн чуна кичем пусрĕ. Анчах мана тепĕр туйăм çӳле-çӳле çĕклет: клоун чăн-чăн клоун мар, вăл — Володя. Паçăр вăл мана: «Малашне юлташсем пулăпăр»,— тесе сĕнчĕ. Манăн питĕ юлташ тупас килет, халиччен эпĕ никампа та туслă пулăнман. Çĕнĕ çул мана юлташ парнелерĕ!

## Эпир—туссем

Хĕллехи каникул пуçланчĕ. Манăн чунра нихçанхинчен те хавас.

— Анне,— терĕм эпĕ,— халĕ манăн юлташ пур! Вăл учительницă ачи, Володя ятлă. Паян ман пата кĕнеке илсе килет.

— Ан калаç...— хыпăнса ӳкрĕ анне темшĕн.— Хамăр патах килет-и?

Çапла калаçма пуçланăччĕ кăна, Володя килсе те çитрĕ.

— Сирĕн тĕле аран тупрăм, кăшт çеç иртсе кайман,— терĕ вăл.

— Ăхă...

— Сирĕн пӳрт пахча варринче ларать, урамран курăнмасть. Тата кĕрт хӳсе кайнă.

— Ăхă,— тетĕп каллех.

— Сан валли кĕнеке илсе килтĕм,— пĕлтерчĕ Володя.

Ун аллинчен эпĕ кĕнеке илтĕм те тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе лартăм.

Чăлантан анне тухрĕ те, пирĕн çине пăхса пĕççине аллипе шарт çапрĕ.

— Ах, ачам, нимле йĕркене те пĕлместĕн-çке эсĕ!— терĕ вăл.— Ара, хăй сĕтел хушшинче ларать, хăни шăпăр кĕтессинче тăрать. Килнĕ çынна хывăнтараççĕ, тĕпелелле ирттереççĕ ăна.

Володя кал-кал ача. Турткалашса тăмасть. Каласанах вăл пиншакне хывса çакрĕ, юнашар пырса ларчĕ. Анне пире сĕтел çине йӳçĕтнĕ панулми, тăм тивнĕ пилеш лартса пачĕ, унтан чипер пулма хушрĕ те килтен тухса кайрĕ.

Володя часах хăйне хăюллăн тыткалама пуçларĕ. Эпĕ те ăна тахçантанпах пĕрле пурăннăн çывăх туйăп. Çав туйăм пирĕн ютшăнăва хăвăрт сирсе пăрахрĕ.

Акă эпир «Тимурпа унăн команди» кĕнекери картинăсене пăхма тытăнтăмăр, унтан сасăпа вулама пуçларăмăр. Питĕ интереслĕ кĕнеке! Ăна пĕр канми çуррине яхăн вуларăмăр! Кайран Володя ура çине тăчĕ те килне кайма пуçтарăнчĕ.

— Ыран пирĕн пата пыр,— терĕ вăл,— пĕрле вуласа пĕтерĕпĕр. Пирĕн библиотекă пысăк. Темле кĕнеке те пур. Виçĕм кун пĕтĕмпех куçарса килтĕмĕр. «Три мушкетёра» вулăпăр!

Володя хăйсем патне чĕнни мана пушшех хаваслантарчĕ. Вĕсем мĕнле пурăннине питĕ курас килет манăн. Хамăн та ăна лайăххине, асра юлмаллине кăтартасчĕ. Анчах мĕн? Турăшсене-и? Вĕсемпе мухтанаймăн, çынна сивĕтĕн çеç. Шăпчăкла юрлама пĕлетĕп. Тен... Чӳрече умне пытăм та чĕлхене çăвар маччи çумне çыпăçтарса чок-чок-чок! тутарса илтĕм.

— Ой,— тет Володя, хăлхине тăратса.— Сирĕн пӳртре шăпчăк та пурăнать-и? Ăçта вăл, читлĕхре-и?

Эпĕ ахăлтатса кулса ятăм.

— Читлĕхре мар, эпĕ юрлатăп ăна,— терĕм кулма чăрăнаймасăр. Унтан каллех тепĕр ăстрăм шăпчăкла

юрласа илтĕм. Володя çăвар карса пăхса тăрать. «Мана та вĕрент-ха, Таник»,— тет. Унччен те пулмасть, сĕрме купăсăма ярса илтĕм. Шăпчăк çинчен кĕвĕ каларăм. Володя тата ытларах тĕлĕнчĕ. «Мана та вĕрентха, татах кала»,— тет. Эпĕ ăна татах нумай кĕвĕсем каласа патăм.

## Эпир—çамрăк ленинецсем

Паян апрелĕн çирĕм иккĕмĕшĕ, пысăк уяв кунĕ. Пирĕн класри партăсене коридора кăларса лартнă. Ирĕк. Пурте капăр тум тăхăннă. Стройра тăратпăр. Приемникрен марш кĕвви илтĕнет. Вăл пирĕн кăмăлсене çĕклентерсе ярать. Эпир Шупашкартан радио тăрăх иртterекен республикăри пионерсен чаплă линейкине пухăннă. Линейкă халăхсен çулпуçĕ Владимир Ильич Ленинăн çуралнă кунне чысласа иртет. Вăл шăп çак кун, пин те тăхăр çĕр çитмĕлмĕш çулта çуралнă. Ильича юратнине, ун пек пулма тăрăшнине, вăл хушса хăварнисене пурнăçлама хатĕр тăнине пĕлтерсе, эпир паян пионера кĕретпĕр. Пирĕн линейкăна колхоз председателĕ, юнашар ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулти пионерсем килнĕ. Вĕсем те стройра тăраççĕ.

Пирĕн умра, стена çывăхнерех, сĕтел çинче — Ленин бюсчĕ. Ăна хĕрлĕ хăмачпа илемлетнĕ. Çӳлте, стена çумне, пионерсен законĕсене çырса çакнă. Бюст тавра — кĕнекесем. Эпир унта выртакан кĕнекесене пурне те вуласа тухнă. Çамрăк Ленин — Володя мĕнле вĕреннине эпир ĕнтĕ пĕлетпĕр. Вăл класран класа отличнă вĕреннипе куçса пынă. Гимназирен вара ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Володя Ульянов хăй юлташĕсене юратнă, кая юлакансене пулăшнă.

...Акă радиопа йыхрав сигналĕ янăрарĕ. Ку сигнала эпир хăнăхнă. Ăна илтсенех, Володьăсем патĕнче чухне, эпир приемник умне ларатпăр. Вара пионерсемпе шкул ачисем валли «Хатĕр пул» радиожурнал пама тытăнаççĕ. Пирĕн килте радио çук, передачăсене эпĕ Володя патĕнче итлетĕп.

Сигнал хыççăн стройра тӳрĕ тăма командă пачĕç. Ялава илсе кĕме хушрĕç. Командăсем параканнин сасси янкăс та уçă. Паллах, хулари шкулта вĕренекен пĕр-пĕр пионер ĕнтĕ вăл. Ялава илсе кĕреççĕ, марш кĕвви çемĕн барабан тăнкăртатни, горн ту-у-тутлатни

йлемлĕн илтĕнет. Унтан пире уяв ячĕпе саламларĕç, ватă коммунистсем хăйсем Владимир Ильича курни çинчен, вăл ĕç халăхĕшĕн пĕтĕм пурнăçне парса ĕçлени пирки аса илсе каласа пачĕç.

Кун хыççăн пурте пĕрле юрларăмăр. Юрри хаваслă. Акă ĕнтĕ радиолинейкă вĕçленчĕ. Линейкăна эпир хамăр шкулта малалла тăсатпăр. Пирĕншĕн чи хумханмалли вăхăт çитрĕ. Ленин бюсчĕ умне чи малтан ман юлташ Володя тухрĕ. Юнашарах учительницă, колхоз председателĕ, кўршĕ ялти шкултан килнĕ пионерсем. Володя чаплă сăмах калать, ун хыçĕнчен эпĕ те ăшра каласа пыратăп. Ăна пионер галстукĕ çыхса ячĕç. Володя строя хăйĕн вырăнне пырса тăчĕ.

— Марков Данил!— тесе чĕнчĕ Мария Андреевна. Ку — манăн ят. Эпĕ те стройран утса тухрăм. Ленин бюсчĕ умĕнче, юлташăмсем умĕнче хамăн чаплă сăмахăма пуçлатăп: «Эпĕ, Совет Союзĕн çамрăк пионерĕ, юлташăмсем умĕнче хамăрăн Совет çĕршывне пĕтĕм чĕререн юратма, аслă Ленин каланă пек, Коммунистсен партийĕ вĕрентнĕ пек пурăнма, вĕренме, кĕрешме тупа тăватăп.»

Вара юратнă учительницă манăн мăя пионерсен виçĕ кĕтеслĕ хĕрлĕ галстукне çыхрĕ, пионер значокне кăкăр умне, пиншак çухи çине тирсе ячĕ. Унтан сылтăм аллине çĕклесе, çапла чĕнсе каларĕ:

— Коммунистсен партийĕн ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул!

Аллăма çамка тĕлне çĕклесе салют патăм: «Яланах хатĕр!»

Паянтан пуçласа эпир — çамрăк ленинецсем. Пĕрре-иккĕн мар эпир, йышлăн. Эпир Ильич хушса хăварнисене тума кар-р-р тăракансем. Мĕн-ха вăл Ильич хушни? Акă мĕн: шкулта лайăх вĕренесси, ĕçе юратма хăнăхса ўсесси.

# Çыру

Хĕвел хăйĕн ăшă ярапине тивертеймен хуралт таврашĕсенчи сулхăнта юр ирĕлмен-ха. Анчах ирсерен хуралт тăрринчен шурă кишĕрсем евĕр усăнса тăракан пăр тăрăх çаплах, куççуль пек йăпăр-р-йăпăр-р юхса, шыв тумламĕ патлатать. Вăл ĕнтĕ юр тĕмескине нўрлентерсе пăрлантарнă. Пăр айĕнчен, ав, шыв сăр-

хăнать. Ун юхăмĕ, пĕр вырăнта лара-тăра пĕлменскер, вылянать кăна. Çĕр питне юплĕн-юплĕн чĕркелет, лачакалантарать. Патварскер, пĕчĕк лупашкасене кĕрсе тулать. Пурпĕрех ăшĕ выртмасть унăн, лăпланасшăн мар вăл. Çав-çавах хастарланса, тăпра тĕпренчĕкĕсене, вак чулсене йăвантарать, ĕçченскер, хăйне малалла чупма çул уçать. Хăй питĕ хаваслă, чарăнма пĕлмесĕр шав юрлать. Унăн сассине тăнлама ытла та хаваслă. «Шăнкăр-р, шăнкăр-р, шăнкăрти, шăнкăрти...» — юрлать вăл. Туятăп, пĕтĕм шыв тумламĕсене ĕнентерсе чĕнет: «Пĕрлешер, юхар анаталла! Пысăк юхан шывсене пырса кĕрер, унтан каяр кăнтăралла — тинĕсе!» Акă ĕнтĕ шыв, тумламсенчен пухăнса хăватланнăскер, малалла хăвăрт ыткăнать. Кушăрканă сукмак та уншăн ним те мар. Тапăнать, çурать, татать... çырманалла вăркăнать. Вăл çурса хăварнă шырланкă урлă тем чухлĕ тăрăшса сиксе каççан та, пушмак пуçĕпе пылчăка ăсса кăларатăн-кăларатăнах.

Çакăн пек кунсенчен пĕринче пирĕн клас ачисем валли почтальон кĕтмен çĕртен посылкă килсе пачĕ. Кĕтмен посылкă ачасене тĕлĕнтерсех ячĕ. Ăна уççан, унта çыру тата пĕчĕк чечен арча тухрĕ. Сап-сарă, йăлтăркка, улăм пĕрчисемпе эрешленĕ ăна. Куçа тӳсмелле мар акăш-макăш илĕртет. Ярас та тытас, уçас та пăхас килет. Ăшĕнче мĕн пур-ши? Ай, ăш хыппи! Чăн-чăн чĕрĕп. Йĕпписем куçа курăнмаççĕ те, анчах питĕ шĕвĕр. Тӳррĕн каласан, уçма юрамасть. Ун çинчен çырура уйрăм йĕркесем пур. Çапла, юрамасть.

Хуçине пĕлетпĕр пулсан, посылкă пирĕн чунсене çакнашкалах кăтăкламан та пулĕччĕ. Капла вара пĕр канăç та çук. Шухăшласа шалт ăнтан каймалла. Çырăвĕ, пĕтĕм посылки асамлă.

*«...Çак хут татăкне сире асăнса кам тĕрленине халлĕхе пĕлме кирлех те мар. Ан та шырăр, пурпĕрех тупаймăр,*— асăрхаттарать посылкă хуçи çырăвĕнче.— *Сире акă мĕн пĕлтересшĕн эпĕ: çуллахи каникул пуçланнă кун сирĕнпе пĕр çĕре каятпăр. Унта сире пысăк савăнăç кĕтет. Анчах та халех ас тутаратăп. Тепĕр класа куçаймасăр юлнă ачасене йышпа пыма питĕ намăс пулĕ. Пĕччен тăрса юлма — хурлăх. Ку ыттисен кăмăлне те хуçĕ. Кăмăл тулли пулмасан, ăçтан выляса кулăн? Савăнпа та пурне те тăрăшса вĕренме,*

*пěр-пěрне пулăшма сěнетěп, тăваттăмěш класа пурин те куçмалла пултăр, тетěп.*

*Вăл кун ăçта каясси пирки иккěмěш çырура кăтартса панă. Çав çыру пěчěк арчара. Ăна халě уçса вулама хушмастăп. Ыран каникула каяс тенě чух тин уçăр. Сирěн тӳсěм мěнлереххине эпě аякран пăхса сăнаса тăрăп.*

*Çыраканě — сирěн тус».*

Акă ěнтě пыр та кур. Асамлă ěç мар-и çак? Унсăрăн класа та тăвăл пырса кěмен пулěччě. Вăрман кашланă евěр шав çěкленчě, ачасем пěр-пěринпе тавлашаççě кăна. Икě тěслě шухăш ăнтан ярать вěсене. Пěрисем нимěн чухлě те тăхтасшăн мар, чечен арчана çийěнчех уçасшăн, унта мěн пуррине пěлесшěн. Теприсем килěшмеççě. Класа учительницă пырса кěмен пулсан, мěн пулатчě — пěлместěп. Ачасем унран тавлашуллă ěçе татса пыма ыйтрěç.

— Кирек те мěн тăвăр, вăл сирěн ирěк,— терě Мария Андреевна.— Эпě пулсан, тем тусан та уçмăттăм. Çыраканě кӳренме пултарать. Тепěр тесен, вăл кун ытлашши аякрах та мар-çке.

## Пуласчě шăпчăк пек

Мана шкулта Шăпчăк тесе чěне пуçларěç. Ку ят акă мěнрен тухса кайрě.

Иртнě кунсенче уроксем хыççăн эпир эрнипех шкул пахчинче ěçлерěмěр. Кунта йěри-тавра карта тытса çаврăннă, анчах ăшěнче халлěхе ним те çук-ха. Эрне хушшинче мěн чухлě шăтăк чавмарăмăр-ши эпир! Нумайăшěн алă тупанěсем хăпарса тухрěç. Улмуççи, сливă, чие йывăççисем, çырла тěмěсем лартрăмăр. Вěсене çил-тăманран хӳтěлеме карта çумěпе хурăн, тирек, чăрăш, юман, вěрене йывăççисем те лартрăмăр. Йывăççисем халě лутра-ха. Вěсен вуллисем пирěн пӳрен те иртеймен. Тураттисем çара çерçи евěр çара. Папкисем уçăлса симěс çулçă сарайман.

Пěр вěççěр пуçа чиксе ěçлесен-ěçлесен, канас та килет. Лартнă улмуççи турачěсене ачашласа тăнă чух эпě хам та сисмен, чěлхе вěçне çăвар маччи çумне авса хунă та чок-чок-чок! тутарса илнě. Илтсе юлнисем пуçěсене пăркаласа ун-кун пăхкаларěç.

— Мария Андреевна, пирĕн сад пахчине шăпчăк куç хывма та ĕлкĕрнĕ! Илтрĕр-и, епле илемлĕн юрласа хăварчĕ,— кăшкăрчĕ пĕри.

— Ытла ир-çке, шăпчăкĕ килсе те çитеймен пулĕ-ха,— тет учительницă.— Эпир лартнă йывăçсем вăй илсен, илемлĕ сад пахчи çитĕнсен, шансах тăрăр, шăпчăк килсе йăва çавăратех. Ун чух вара шăпчăк юррине итлесе киленĕпĕр.

Эпĕ çак вăхăтра каллех шăпчăк юррине тепĕр хут кăлартăм.

— Ой! Каллех! — кăшкăраççĕ ачасем, ун-кун пăхкаласа. Манпа юнашар ĕçлекен Володя тўсеймерĕ, кулса ячĕ:

— Эх, эсир те çав. Таник ăна шăпчăк юррине кăларма пĕлет!

— Чăн-чăн шăпчăк кайăк!

— Тўрех уйăрса та илмелле мар! — теççĕ ачасем.

— Маттур эсĕ, Таник, маттур. Пултаратăн,— мухтать мана Мария Андреевна.— Пурнăçра та чăн-чăн шăпчăк пул.

Ачасенчен пĕри те эпĕ шăпчăкла мĕнле калама вĕреннине курман. Çак ăсталăх хăй тĕллĕн килмен. Шăпчăк юррине вĕренессишĕн сад пахчинче сехечĕ-сехечĕпе ларнă каçсем манăн пайтах иртнĕ, куна нихăшĕ те чухламасть. Иртнĕ çулсенче тантăшсем хушшинче пĕрпĕрин килти пурнăçне пĕлсе тăрас йăла пулман. Шкулта пĕрле вĕренетĕн, ашкăнатăн. Шкултан тухсан, юплĕ-юплĕ урамсем тăрăх саланатăн, кил хапхи уçăлса хупăнать, вара пурте пĕтет, юлташлăх урата урлă каçайман. Шкула çĕнĕ учительницă килнĕ хыççăн пирĕн çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ. Ачасем ăна «пирĕн учительницă» тесе çеç тăраççĕ. Эпĕ те Мария Андреевнăна чунтан хисеплетĕп. Эх, пуласчĕ манăн шăпчăк пек пултаруллă, вара юратнă учительницă çинчен юрă кĕвĕлĕттĕм.

## Эпĕ мандолинă туянатăп

— Таник, ывăлăм, тăр-ха,— вăратрĕ мана анне ыйхăран. Эпĕ куçа уçрăм та чўречерен кăвак çутă кĕнине куртăм.

— Анне, мĕншĕн илĕм-тилĕмпех вăрататăн?—ăшă вырăнтан уйрăлас килменнипе кăмăлсăррăн ыйтрăм эпĕ.

— Тăрса тумлан, ачам.

— Пĕр-пĕр васкаса тумалли ĕç пур-и? — тетĕп, анне сывă мар çӳренине аса илсе. Юлашки вăхăтра ăна эпĕ шывне те, вуттине те илсе кĕрсе паратăп. Нӳхрепрен çĕр улми, купăста илсе тухасси те манăн ĕç.

— Ыран канмалли кун, ун чухне хăть кăнтăрлаччен сывăр, вăратмăп,— йăпатать анне.

Сиксе тăтăм, çăвăнтăм, тумлантăм, мăя пионер галстукне çыхрăм. Пăхатăп, сĕтел кĕтесĕ çине таянса, Анна манашкă тăрать.

— Апат çиме лар, ывăлăм,— чĕнет анне.

Тирĕкре чăмăрла пĕçернĕ çĕр улми пăсланать, чашăкра тăварланă купăста. Апата эпĕ çур çĕрте тăратса лартсан та çиме хавас. Анчах анне типĕ тытнипе эпир тутлă яшка тахçанах астивсе пăхман ĕнтĕ. Хăçан иртсе кайĕ вăл вăхăт?

Çĕр улми хуппине чĕпĕтсе шуратнă чух теплерен курах кайрăм: сĕтел çинче хут укçа тĕрки выртать. Тĕлĕнтĕм. Пирĕн кун чухлĕ укçа пулнине ас тумастăп.

— Анне, ку мĕнле укça? — тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.

— Анна аппун-ха вăл. Çи эсĕ, çи.

Анна манашкă сăмсине нăш-нăш турткаласа илчĕ те:

— Ку сан ача сăх-сăхмасăрах апат çиме ларакан пулнă-çке? — терĕ.

— Эпĕ пионер, турра ĕненме пăрахнă,— сиввĕнтерех тавăртăм эпĕ.

— Эй, Анна аппа, ал сул çавна, ан вăрçтар,— калаçăва хутшăнчĕ анне те.

Эпĕ апат çисе тăрантăм та анне умне пырса ыйтрăм:

— Кала, мĕн ĕç тумалла?

Анне мана пуçран шăла-шăла çав тери ăшшăн:

— Эсĕ кукамуна манман-и? — тесе ыйтрĕ.

— Питĕ лайăх ас тăватăп-çке.

— Кукамăшĕ еплерех юрататчĕ ăна,— терĕ Анна манашкă та.— Кукашшĕ тата ытармалла мар çынччĕ. Мăнукĕ валли мĕнле сĕрме купăс пиллесе хăварчĕ те вара...

Аннен куçĕсем шывланчĕç, тутисем чĕтрерĕç. «Тăприсем çăмăл пулччăрах ĕнтĕ»,— тет хăй. Эпĕ апла та, капла та çăвар уçмарăм.

— Паян ваттисене асăнмалли кун,— терĕ анне, сăх-сăхса.

— Асăнтармасăр нимпе те хăварма юрамасть,— хушса хучĕ каллех манашкă.

— Таник, вилнисене асăнтарма чиркĕве сана ярасшăн эпир,— тет анне.— Хам чирлĕ, Анна аппу ватă, пирĕнтен утса çитесси пулаймĕ.

Эпĕ урса кайнă пекех кăшкăрса пăрахрăм:

— Чиркĕве? Чиркĕве эпĕ тем тусан та каймастăп. Эпĕ — пионер!

— И-и, ку ача сан ытлашши иртĕхсе кайнă, çыхса пăрахмалла та кăна сан, хулăна вĕтмелле,— вĕрентет аннене манашкă.

— Халиччен алă хуман та эпĕ ун çине...— сăмах хушать анне йăвашшăн.—Эппин хамăнах кайма тивет пуль.

Эпĕ нимĕн те чĕнмерĕм. Чӳрече умне пырса лартăм та икĕ хĕрарăм мĕн хăтланнине сăнама тытăнтăм. Анне тумланчĕ, сĕтел çинчи укçана кĕсйине илсе чикрĕ. Анна манашкă ăна хут листи тыттарса: «Кунта вилнисен ячĕсем»,— терĕ.

Анне тирпейленсе пӳртрен тухрĕ. Эпĕ хыпаланса кантăкран пăхрăм. Анне тулта мĕн туни мана йăлтах курăнать. Акă вăл алкум вĕçĕнче тăракан туяна илчĕ. Вара, шурăхса кайнăскер, ун çине ватă кинемей евĕр таянса, аран-аран малалла утрĕ. Каятех-ши вара? Чиркӳллĕ ял хамăртан темиçе çухрăмра ларать-çке. Такам ман ăшра: «Çитеймест, вăл ытла вăйсăр. Асту, аннӳ уйра тăсăлса ӳксе вилĕ...» — тенĕнех туйăнчĕ. Манăн чĕре ыратса кайрĕ.

— Çапла ĕнтĕ хальхи ача-пăча, амăшĕсене те итлеmeççĕ, хĕрхенесси çук ĕнтĕ вăл,— мăкăртатса ларать манашкă.

Тӳсеймерĕм, сиксе тăтăм та вĕçтертĕм анне хыççăн.

— Кӳр ĕнтĕ, хамах кайса килем,— шеллесе каларăм эпĕ ăна. Вăл ман çине темле салхуллăн пăхрĕ, унтан укçине, вилнисен ячĕсене çырнă хута тыттарчĕ.

— Мĕншĕн кунта çĕр ят та пур? — ыйтрăм эпĕ, хут листи çине пăхса.— Пирĕн вилнисем кукамайпа кукаçи кăна-çке.

— Анна аппа мар-и ара, хăй каяс пек, пĕтĕм кӳршĕсенчен укçа пухса тухнă.

Эпĕ пĕчченех чиркĕве каятăп. Сывлăш уçă, уй-хир таçтанах сарăлса выртать. Эль хĕрринчи кукăр-макăр сукмакпа темĕн чухлĕ утсан та, çул чакмасть. Калаçма та пулин никам çук. Эх, Володьăна чĕнмеллеччĕ. Иккĕн пулсан, мĕнле хаваслăччĕ! Анчах пырĕччĕ-и вăл чиркĕве? Чăнах, пырĕччĕ-ши пĕрле е пымĕччĕ-ши? Эпĕ те чиркĕве турра ĕненсе каймастăп-çке. Пĕр чирлĕ аннене хĕрхеннĕ пирки кăна кайма килĕшрĕм. Пионерсен саккунĕнче те çаплах каланă: хăвăнтан аслисене, ваттисене пулăш. Учительницă та яланах аннене хĕрхенмелле, вăл хушнă ĕçе тумалла, пулăшмалла, тесе вĕрентет.

Çул çинче, пĕччен пынă чух, пуçа тем тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет. Никам та чăрмантармасть, шухăшла, ĕмĕтлен, хăвпа ху калаç. Халĕ акă мана хамăн юлташ Володя аса килсе пырать. Лайăх юлташ вăл, хисеплетĕп эпĕ ăна. Шкула та эпир унпа пĕрлех каятпăр. Уроксем пĕтсен, вĕсем патне кĕретпĕр. Мария Андреевна Володьăпа иксĕмĕре апат çитерет. Малтанах эпĕ вăтанаттăм, каярахпа хăнăхрăм. Апат çисен, шахматла е урăх мĕнле те пулин вăйă вылятпăр. Унтан урока хатĕрленме ларатпăр. Пур уроксене те эпир пĕрле вĕренетпĕр. Володьăпа çапла вĕренме пуçланăранпа шкулти ĕçсем пачах улшăнчĕç ман, журналта ытларах «пиллĕк» паллăсем ларaççĕ. Кайран пирĕн пата вĕçтеретпĕр. Анне Володя мĕн юратнине пĕлет, эпир çитнĕ çĕре сĕтел çине чашăкпа йӳçĕтнĕ панулми кăларса лартать. Килте сĕрме купăс калатăп. Володя музыкă итлессишĕн чунне пама хатĕр. Сĕрме купăс калама хăй те питĕ вĕренесшĕн те, анчах халлĕхе ăнкартсах çитереймест-ха. Халĕ Володя ăçта-ши? Пирĕн умра эпĕ тухасса кĕтсе тăрать-ши? Эпĕ чиркĕве кайнине пĕлсен, мĕн тейĕ-ши? Сасартăк вăл манран сивĕнсен? Е отряд совечĕн председательне — Улякана каласа парсан? Лешĕ ман çинчен сборта сӳтсе явма ыйту лартсан? Пĕлсех тăратăп, чи малтан Аленти кăшкăрса ярать ĕнтĕ: çак ĕçшĕн ăна пионертан кăлармалла, тейĕ. Пурте унпа килĕшĕç. Мĕн тăвас вара? Манăн çурăм тăрăх шăши йăпăртатса улăхнăнах туйăнчĕ. Çамка çине сивĕ тар тапса тухрĕ. Эпĕ кĕпене йӳле ятăм.

Юлашкинчен аранах чиркĕве çитрĕм. Картлашкапа хăпарса, алкумне кĕтĕм кăна, пысăк çынсем хушшипе малалла иртме тăрмашакан пионер галстуклĕ

пĕр хĕрачана курах кайрăм. Ана хăй сисиччен аллинчен ярса тытрăм та хыçалалла карт! туртрăм.

— Ăçта чикĕнетĕн?

Хĕрача хăюлăскер пулчĕ. Эпир унпа хăвăрт паллашрăмăр. Ана та чиркĕве ваттисене асăнтарма янă иккен. Унăн аслашшĕ вилнĕ. Асламăшĕ чирлĕ. Чиркĕве килме шăпах вăл хушнă. Хĕрача ман пек инçетри ялта мар, ку ялтах пурăнать. Чиркĕве вăл аслашшĕне чунтан юратнăран, асламăшне хисепленĕрен çеç килнĕ.

Чиркӳре, шалта, юрлани илтĕнчĕ. Алкумĕнче тăракансем сăх-сăхма тытăнчĕç. Унччен те пулмарĕ, ман çумри хĕрача та пăкки-пакки сăх-сăхса илчĕ.

— Мĕн тăватăн эсĕ? — хăмсарса илтĕм эпĕ ăна.— Е чăнах та турра ĕненетĕн-и?

«Çынсем сăх-сăхсан сăх-сăх, сăпайлă пулăн», терĕ мана асанне.

— Эх, эсĕ те çав, айван хĕрача. Эпир — пионерсем. Пире чиркĕве килни те килĕшмест. Сăпайлă, сăпайлă...— текелесе, витлесе илтĕм ăна.

— Килмĕттĕм те, асаттене питĕ юратнă-çке эпĕ. Мĕн тери лайăх асаттеччĕ! Килмесен асанне те кӳреннĕ пулĕччĕ.

— Юрĕ ĕнтĕ, атя кĕрер,— терĕм эпĕ, малалла иртме пикенсе.

— Эсĕ те аслаçуна асăнтарма килнĕ-и?

Ку хĕрача калаçмасăр самант та тӳсеймест пулас.

— Ахă, ăхă,— тетĕп.

— Ăçта асăнтармалла-ши, э? — ыйтать вăл.

— Хам та пĕлместĕп.

Кĕтĕмĕр. Пăсăк шăршă перет кунта, сывлама та йывăр. Умра, çӳллĕ хӳме тытнă евĕр, сухаллă старикcем, карчăксем тăраççĕ, ним те курăнмасть. Пĕрне сăхман çаннинчен карт! карт! туртрăм.

— Вилнисене ăçта асăнтараççĕ кунта?

— Алтарь умне кайăр, унта асăнтараççĕ,— терĕ сăхманлă çын.

Эпир çынсем хушшипе чавсапа тĕрткелешсе шăватпăр. Пĕр нӳçтеке хĕрарăм пирĕн çине кăн-н! çаврăнса пăхрĕ.

— Антихрист ачисем, пионер галстукĕ çыхса чир-

кĕве килнĕ. Никампа та хăрамаççĕ! — чашкăрса илчĕ вăл хаяррăн.

— Турăран та хăрамаççĕ,— ун хутне кĕчĕ юнашар тăракан тепĕр хĕрарăм.

— Салтăр хăвăртрах галстукăрсене! — кăшкăрать леш нÿçтеке хĕрарăмах.

Йĕри-тавра тăракан çынсем пирĕн çине пăха-пăха пăшăлтатма тытăнчĕç.

Эпĕ çав тери тарăхса кайрăм. Чиркĕве килнĕ тесе, галстуксене салтмалла-и-ха? Ухмах вырăнне хураççĕ-и вĕсем пире? Çук, тем тусан та пире пионер галстукне салттараймĕç. Эпĕ — пионер, турра ĕненместĕп. Ман çумри хĕрача та турра ĕненмест, асламăшне хисеплесе, ăна юрас тесе çеç килнĕ вăл. Ваштах каялла çаврăнтăм та хĕрача аллине хыттăн ярса тытрăм.

— Атя,— терĕм ăна,— чăн-чăн пионерсем чиркÿ тăрăх çапкаланса çÿремеççĕ.

Чиркÿрен тухсан, пире уçă сывлăш çĕклентерсех ячĕ.

— Мĕнле-ха ĕнтĕ, асанне прасвир илсе таврăнма хушнăччĕ,— пăшăрханчĕ хĕрача.

— Прасвир иличчен канфет илсе парăпăр вĕсене. Авă инçех мар ларексем пур.

Эпир ларексем еннелле кайрăмăр. Хĕрринчине кĕтĕмĕр. Витре, хуран, чукун-чÿлмексем, кăмака питлĕхĕсем лăк туллиех кунта. Татах теприне кĕретпĕр. Кунта мĕн чухлĕ тетте! Çавракa питлĕ пуканесем çÿлĕк тулли лараççĕ. Тепĕр кĕтесĕнче — гитарă, балалайкă, мандолинă речĕ. Сĕрме купăс çук вара. Лавкка умнерех пытăм та çавсене ытарайми пăхатăп.

— Ачам, мĕн пит çăварна карса пăрахрăн? Хăшне те пулсан илсе парас-и-мĕн? — тет сутаканĕ. Вăтанниπе ним чĕнме те хăяймарăм.

— Ан вăтан, ме, каласа кăтарт-ха пĕрре,— тет сутаканни, ман алла мандолинă тыттарса. Хĕлĕхĕсене пăркаласа, ĕнерме пуçларăм. Халиччен эпĕ мандолинă каласа курман, çавăнпа калама пултараймарăм. Анчах айкашсан-айкашсан «Пирĕн барабан» юрра чиперех калама пуçларăм.

— Эй, чим, эсĕ чăн-чăн музыкант пулас. Паçăрах сăнарăм, куçусем ытла йăлтăртататчĕç,— тет сутакан.— Ил, лайăх инструмент. Хакĕ йÿнĕ.

Ман пуҫа, чӑнах та, ҫак инструмента тӳяннас шухӑш килсе кӗчӗ: Володя валли илес ӑна, чаплӑ парне пулать. Кӗсъери укҫана кӑлартӑм та шӳтларӑм. Укҫа ҫитет, юлать те. Текех нумай шухӑшласа та тӑмарӑм — туянтӑм та ятӑм! Хам хӗпӗртенипе ниҫта кайса кӗме пӗлместӗп. Хайхи хӗрача та чупса пычӗ. Вӑл лавккара мӗн пуррипе ҫуккине пӗтӗмпех пӑхса ҫаврӑнма ӗлкӗрнӗ иккен.

— Пӑх-ха, эпӗ киноартистсен сӑн ӳкерчӗкӗсене туянтӑм,— тет открыткӑсене кӑтартса.— Акӑ Давыдов, Румянцева, Макарова, Макагонова. Эх, курасчӗ сан, мӗнле чаплӑ выляҫҫӗ вӗсем! Ну, юрӗ. Эпӗ каятӑп. Сывӑ пул!

— Чим, тӑхта-ха!

— Мӗн тата? — чарӑнса тӑчӗ вӑл.

— Эпӗ сан ятна ыйтса пӗлесшӗнччӗ...

— Людмила ятлӑ эпӗ!

Мӗн курӑнми пуличченех куҫпа ӑсатрӑм ӑна. Вара, мандолинӑна тутӑрпа ҫыхса майлаштарса тытрӑм та килелле хускалтӑм.

Киле ҫитсен, эпӗ тӳрех пӳрте кӗмерӗм. Пахчари ӳплере чарӑнса, мандолинӑна пытартӑм. Аннепе Анна манашкӑ эпӗ чиркӗве кайса килнине ӗненчӗҫ. Анчах вӗсемпе тӗл пулсанах, чунӑма тем кӑшлама тытӑнчӗ. Вӗсене хам ҫапла улталани канӑҫ памарӗ мана.

Эпӗ, пуҫ ыратать тесе, вырӑн ӑшне кӗрсе выртрӑм. Чылайччен асаплантӑм, тӗрлӗ шухӑшсемпе ҫапӑҫса. Юлашкинчен лӑплантӑм. Мӗнех, ӳссен, ӗҫлекен пулсан, халь салатнӑ укҫана эпӗ Анна манашкӑна пурпӗрех тавӑрса паратӑп. Ун чух йӑлтах тӗрӗссине калӑп.

Каҫалапа урама тухрӑм та шӑпах Володя ҫывхарнине куртӑм. Вӑл мана таҫтанах кӑшкӑрчӗ:

— Пасарта мӗн илтӗн, Шӑпчӑк?!.

— Эпӗ пасара кайни ҫинчен сана кам каларӗ? — ыйтрӑм Володьӑран.

— Аннӳ. Эпӗ ирхине кунта килсе кайрӑм.

— Итле-ха, Володя, эпӗ пасара кайман, анчах манӑн сан валли пӗр парне пур. Атя пахчана!

Парне Володьӑна ҫав тери килӗшрӗ. Вӑл ним уямасӑр йӗс хӗлӗхсене карӑнтарса чӑнкӑлтаттарма хӑтланчӗ, анчах кӗвви унӑн тухмасть-ха. Нимех те мар, нумай та вӑхӑт иртмӗ ак — Володя мандолинӑпа пит аван калама вӗренӗ.

# Чечен арча

Илтмен-курман çын посылкăпа ярса панă чечен арча темиçе уйăх ĕнтĕ кĕленче алăклă шкąпра, вăта çĕрти çӳлĕк çинче тăчĕ. Паян вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Учительницă хаваслă хыпар пĕлтерчĕ: эпир пурте тепĕр класа куçнă! Урра! Никамăн та пĕр вырăнта ларас-тăрас килмест. Пĕрре тапсах ачасем маччана перĕнĕччĕç. Пĕри те тепри чечен арча çине пăхаççĕ. Ун çинчен никам та манман.

— Мария Андреевна, чечен арчана уçар ĕнтĕ халь,— сăмах пуçарса пачĕ ачасене Уляка. Лешсем чĕвĕлти чĕкеçсем пек чĕвĕлтетме тытăнчĕç.

Учительницă, портфелĕнчен çăраççи илсе, шкапа уçрĕ. Аленти ытла та чăрсăр çав. Тахăш вăхăтра чечен арчана ярса та илчĕ. Самант ун тавра ачасем кар-р пухăнчĕç. Лешĕ арчана çӳлелле çĕклет. Çырма хĕрринче ӳсекен ешĕл йăмра турачĕсем хĕвел патне туртăннă евĕр, алăсем арча патне кармашрĕç.

— Ӳкеретĕр акă,— асăрхаттарать Мария Андреевна,— чечęнскер шакăрах ванса кайĕ. Аленти, кӳр-ха хама.

Мария Андреевна арчана хăй илчĕ. Пурте тирĕнсе пăхатпăр. Куратпăр, арча ăшĕнче татах пӳрнеске пӳрт. Кам ăна пирĕншĕнех çакăн пек ларса ăсталанă-ши? Вăхăтне те хĕрхенмен. Тем тесен те, вăл пире чунтан юратакан çын.

— Чимĕр, туссем, кунта, арча ăшĕнче, темле çыру пур, малтан ăна вулар. Анчах шавлама чарăнмасăр эпĕ вулама тытăнмастăп,— тет Мария Андреевна.

Эпир пĕр-пĕрне чара-чара аран-аран шăплантăмăр. Вара тин учительницă вулама тытăнчĕ.

*«Сире пурсăра та мухтаса пуçран шăлатăп, юратса çупăрлатăп. Маттур ачасем эсир. Тепĕр класа эсир пурте куçасса эпĕ малтанах шанса тăнă. Сире пурсăра та çуллахи каникул пуçланнă ятпа саламлатăп: Салам! Салам!*

*Вĕренӳ çулĕ ăнăçлă вĕçленнĕ ятпа ыран сирĕнпе пĕр çĕре кайăпăр. Ăçта кайăпăр тетĕр-и? Маршрут пӳрнеске пӳртре. Ăна ыран ирхине шкула илсен куратăр.*

*Аса илтерем: уявра кашниех ку тарана ҫитсе хӑй мӗн тума вӗреннине кӑтартса паратъ. Ыранччен. Сывӑ пулӑр!*

*Сирӗн тус».*

Мария Андреевна ҫырӑва вуласа пӗтерсен, чечен арчине каллех шкапа лартрӗ те питӗрсе илчӗ. Хӑй тухса кайрӗ. Эпир хамӑр шухӑшпа, ӗмӗтпе куҫа-куҫӑн тӑрса юлтӑмӑр.

# Тавтапуҫ сана, анне

Ман питрен такам хур ҫунаттипе кӑштӑрт! шӑлса илчӗ. Ачашшӑн лекрӗ ҫемҫе мамӑк. Эпӗ куҫа уҫрӑм. Пӑхатӑп, никам та ҫук. Кам тиврӗ мана? Е выляма хавас кушак ҫури малти урипе пит ҫӑмартинчен кӑлт-кӑлт тивертрӗ-и? Кантӑкран хӗвел кӗнӗ. Пӑхмалла мар куҫа йӑмӑхтаратъ. Тавҫӑрса илтӗм. Хӗвел шевли ман пит ҫинче вӑй выляна-мӗн! Авӑ кам ыйхӑран вӑратнӑ мана. Сиксе тӑтӑм та кантӑка уҫса ятӑм. Пӳрте тутлӑ шӑршӑ, ирхи уҫӑ сывлӑш вӑркӑшса кӗчӗ. Ӳрӗк-сӳрӗк таҫта кайса ҫухалчӗ. Чӳречерен пуҫа кӑларса, пахчаналла пӑхрӑм. Чие йывӑҫҫи чӑтлӑхӗнче кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ, туратран турат ҫине пӑр-р! вӗҫсе ҫӳресе, юрӑ шӑрантараҫҫӗ. Вӗсем те ҫӗнӗ кун пуҫланнишӗн хавас.

Пуҫа ӗнерхи шухӑш пырса кӗчӗ: каникул пуҫланнӑ ятпа паян пирӗн уяв пулатъ. Уявра ку тарана ҫитсе хамӑр мӗнле ырӑ ӗҫ тума вӗреннине кӑтартса памалла. Эпӗ ним ӗҫ тума та вӗренмен пулас. Ҫакӑншӑн хуйхӑратӑп. Кӑмӑл та пӑсӑк. Тен, каяс та мар шкула? Анне пӳрте кӗчӗ. Ун аллинче ҫӗмӗрт чечек ҫыххи.

Эпӗ аннене пилӗкӗнчен ярса илсе чӑмӑртарӑм.

— Ерипентерех ывӑлӑм,— чарчӗ вӑл мана, хӑй ҫавӑнтах аллипе кӑкӑртан аяларах тытса, сак ҫине ларчӗ.

— Анне, пирӗн паян уяв,— пӗлтертӗм эпӗ ӑна. Вара хама мӗн аптратнине каласа патӑм.

— Ӳсрӗн, ывӑлӑм, самаях ӳсрӗн. Уру-аллуна та ху тӑхӑнаймастӑнччӗ,— калаҫрӗ вӑл.

— Уявра ура-алла тӑхӑнса кӑтартас-и?

— Ан вӗрилен. Ҫапах та, ытлашши айван эсӗ. Аллусем сан ылтӑн вӗт.

Эпĕ ваштах аллăма пăхса илтĕм. Ытти ачасен алли пекех, нимĕнле уйрăмлăх та çук. Анне пăтара çакăнса тăракан сĕрме купăс çине пăхрĕ. Эпĕ вара тӳрех тавçăртăм.

— Тавтапуç сана, анне. Эсĕ пурне те пĕлетĕн!

## Уяв

. . Сĕрме купăса çĕклерĕм те Володя патне кайрăм. Вĕсен килĕнче пуш-пушах.

— Атте япаласене машинăпа пĕтĕмпех тиесе кайрĕ,— тет Володя.— Вăл хулара ĕçлет. Аннене те унти интернат-шкула куçарнă. Сирĕн каллех хăвăрăн учительницă килет. Эпир каçалапа ларса каятпăр, автобус çине билет илнĕ.

— Каятпăр? Эсĕ те-и?

— Паллах, эпĕ те.

— Эпĕ вара?..

Вăл та, эпĕ те хирĕç пĕр сăмах чĕнмерĕмĕр. Хыпар ытла та чуна ыраттарчĕ. Тем вăхăтран ассăн сывласа илтĕм те: «Эх,— уявра хамăр иккĕн вĕреннĕ юрăсене каласа парасшăнччĕ»,— терĕм.

— Уявра пулатăп вĕт-ха,—терĕ Володя. Анчах хăй çавăнтах тем аса илнĕн тутине чăпăрт тутарса илчĕ. Вара çапла хушса хучĕ: — Мандолинăна эпĕ парса янă. Юрĕ. Эсĕ каласа парăн, çавăнпа çитĕ.

— Пĕччен-и? Тем тусан та!

Володьăна çĕнтерейменĕн, вăл кăмăла часах çавăрать. Акă ман сĕрме купăса çĕклерĕ те, эпир шкула чупрăмăр.

Шкул алăкĕнчен кĕтĕмĕр çеç, мĕн куртăмăр? Чăнчăн тĕлĕнтермĕш! Стена çумĕнче пысăк сарă хыт хут листи çакăнса тăрать. Ун çумне леш пӳрнеске пӳрте çыпăçтарнă. Ун крыльцинчен ĕне чĕлхи пек шурă хут тăсăлса тухнă. Ун çине акă мĕн çырнă:

*«Пурте шкул уявне васкăр! Кĕтетĕп. Тĕрлĕ паллăсем сире çул кăтартса парĕç. Шырăр, тупăр!*

*Сирĕн тус».*

Ачасем пухăнса çитнĕ. Тапранмалла та каймалла. Анчах ăçталла? Темле паллă вăл? Халиччен пирĕнтен çавăн пек паллăсем тăрăх никам та çул çӳресе курман.

Шыратпӑр, куҫа нимле паллӑ лекмест. Учительницӑ пулӑшасса шаннӑччӗ. Вӑл килте ҫук иккен, пире хамӑр тӗллӗнех кайма хушнӑ.

— Тупрӑм! — кӑшкӑрчӗ Володя.— Тем тесен те, пирӗн тус палли ку.

Володя патне кӗпӗрленсе пытӑмӑр. Вӑл алӑк ҫине пӑхма хушрӗ. Унта пурӑпа чӗкеҫ кӗлетки ӳкерсе хунӑ. Ӗнентӗмӗр, картишне тухрӑмӑр. Каллех шырама тытӑнчӗҫ. Эпӗ тӳрех шкул хапхи патне утрӑм. Йӑнӑшман. Веҫ, ав, шкул хапхи ҫине пурӑпа алӑ ӳкернӗ, пӳрнипе урамалла тӗллесе кӑтартать. Ачасене пӗлтертӗм. Йыш — урамра. Шухӑшлаҫҫӗ: ялалла е уялла каймалла? Хӑш-пӗрисем ӳпкелешсе калаҫаҫҫӗ. Теприсем — кӑмӑллӑ. Мана ку вӑййӑ-питӗ килӗшет. Ахаль утса кайни интереслӗ те мар. Халь акӑ, юмахри паттӑрсем пек, ҫул шыраса каллӗ-маллӗ куматпӑр, сӑнатпӑр.

Уляка чарӑннӑ та питӗ тинкерсе ҫӗрелле пӑхать: хӑй ҫавӑнтах пире аллипе кӑчӑк туртать. Мӗн-ши? Паллӑ! Пурӑпа ҫырса мар, ҫерем уҫса хура ҫӗр ҫине патакран шурӑ ухӑ йӗппи туса пӑрахнӑ. Эппин, хӑюллӑнах малалла ут, Эль шывӗ урлӑ каҫ. Тӑхта, умра йӳплӗ ҫул. Хӑшӗнпе кайсан уява ҫитӗн? Шыраҫҫӗ, йӗп ҫухатнӑ пек шыраҫҫӗ. Упаленменни кӑна. Юлашкинчен икӗ ушкӑна уйрӑлтӑмӑр та икӗ ҫулпа утрӑмӑр. Инҫех те кайма тивмерӗ пире, ҫул хӗрринчи хыт-хура ҫине тирсе хӑварнӑ хут татки тупрӑмӑр. Унта: *«Туссем, эсир тӗрӗс ҫулпа утатӑр»*,— тесе ҫырнӑ. Леш ушкӑнӑн, паллах, пирӗн ҫул ҫине куҫма тиврӗ. Ку ҫул пире вӑрманах илсе ҫитерет. Пӗри юрӑ пуҫласа ячӗ. Юрлама ҫӑмӑл. Пирӗн сасӑсем таҫта ҫитиех кайса ҫухалаҫҫӗ. Вӑрман хӗрринче ачасене Мария Андреевна кӗтсе ларать. Эпир ӑна курсан хӗпӗртесе ӳкрӗмӗр. Хамӑр мӗнле ҫитнине, паллӑсене шыранине пӗр-пӗрне пӳле-пӳлех каласа паратпӑр. Вӑл пире мухтарӗ, ларса каннӑ хыҫҫӑн вӑрман ӑшнелле ертсе кӗчӗ. Часах пӗр уҫланкӑна тухрӑмӑр. Мӗн тери хитре вырӑн! Чаплӑ керменти чаплӑ пӳлӗм. Ку уҫланкӑна сӗм вӑрман хӑйӗн хаваслӑ хӑнисене йышӑнма юри хатӗрленӗ пулас; ӑна капӑрлатас ӗҫе пӗтӗм ҫутҫанталӑк хутшӑннӑ тейӗн. Канлӗ пусса утма — ура айӗнче симӗс кавир. Ӑна сарӑ чечексемпе чӑпарлатнӑ. Ҫырла ҫеҫки тата... Ҫулла, ҫырли пиҫсе хӗрелсен, пурак ҫакса кил те симӗс курӑка сире-сире тат кӑна. Кавир варринче — лутра чӑрӑш.

Вăл чечек çыххин туни. Сивĕ те, çил те, вĕри те тивмест кунти илеме. Йĕри-тавра çĕршер çулхи ватă юмансем хăйсен вăйлă тураттисемпе кашласа лараççĕ. Сенкер тӳпери хĕвел хăйĕн ылтăн шереписем тăрăх кунта çутă та, ăшă та сапса тăрать. Тен, ку сĕм вăрманăн сăпки? Ахальтен илемлĕ кĕвĕ юхмĕччĕ, чуна сарă çу пек ирĕлтермĕччĕ. Мĕн чухлĕ ăста юрăç — çепĕç саслă кайăксем кунта!

Нумай та вăхăт иртмерĕ, пирĕн пата, уçланкăна, тепĕр ушкăн ача килсе çитрĕ. Пире вĕсемпе паллаштарчĕç: юнашар ялта вĕренекен шкул ачисем иккен. Вĕсем те пирĕн тантăшсем. Пысăк йышпа выляма тата хавасларах пулчĕ. Спортсменсем çӳллĕшне, тăршшĕне сикессипе, кĕрешессипе ăмăрту ирттерчĕç. Эпĕ хам, ăмăртăва хутшăнаймастăп пулин те, хумханса пăхса тăтăм.

Лăпсăркка юман айĕнче горн сасси янăрарĕ. Пурне те пухăнма чĕнеççĕ.

Хĕрачасем тĕрĕ, чĕнтĕр, пӳкленĕ сăмса тутри тата ытти çавăн пек япаласем кăларчĕç те вĕсене турат çине çакса ячĕç. Арçын ачасем те пушă алăпа килмен. Вĕсен япалисем хăйне майлă: пĕчĕк рамă, линейкă, сăрăпа ӳкернĕ ӳкерчĕксем, хутран ăсталанă хут купăс, йывăçран чутланă лаша т. ыт. те.

Эпĕ сĕрме купăса илтĕм те вĕтлĕхелле утрăм.

— Шăпчăк, ăçта каятăн? — тет Володя, мана чарса.

— Мĕн намăс курса тăрас? Выставкăра кăтартмалли манăн ним те çук та...

— Çак çула çитсе те нимле ĕçе вĕренеймерĕн-и? — пирĕн калаçăва хутшăнчĕ кӳршĕ ял учителĕ.

— Шăхлич тума вĕреннĕ вăл, — ахăлтатса кулса ячĕ Аленти.

Вăрт-варт çаврăнтăм та вĕтлĕхе кĕрсе çухалтăм. Мана вăрманăн мăнаçлă музыки хăй тыткăнне илчĕ.

Эпĕ тунката çинче ларатăп. Сĕрме купăс калатăп. Мана кăшт тунсăхлăрах та, çав вăхăтрах хаваслă та. Кĕтмен çĕртен ума Мария Андреевна килсе тухрĕ.

— Ну, Шăпчăк, халĕ эсĕ сĕрме купăспа каланине итлетпĕр, — терĕ вăл, мана хулран тытса. Унтан, хăй ачине çавăтнă пекех çавăтса, уçланкăна илсе кайрĕ.

## Юратнă çын

Уçланкăри вăйă-кулă вĕçленчĕ. Ытла та савăнăçлă пулчĕ кунта! Каяс килмест, анчах та мĕн тăвăн? Япаласене пухнă, костер сÿннĕ...

Эпир Володьăпа иккĕн пыратпăр. Ним те шарламастпăр. Сăмах чĕнсе шăплăха пăсасран шикленетпĕрши? Володя тепĕр сехетрен, юлашки автобуспа ларса, пирĕн патăртан яланлăхах каять. Вăл хулара, интернат-шкулта, вĕренĕ. Хăçан курăпăр пĕр-пĕрне? Ах, кăмăл хуçăлать. Тупаяс çук эпĕ урăх Володя пек юлташ. Ÿлĕм кампа çÿрес, кампа юмахлас? Сĕрме купăс, мандолинă калама кама вĕрентес?

Ял хĕрринче тусăм сăнне ĕмĕрлĕхе ас тума чарăнса тăрсах тинкертĕм: тулли питлĕ вăл, куçĕ хуп-хура, пиçсе çитнĕ çĕмĕрт тейĕн. Чăлт шурă кĕпе тăхăннă.

Володя ман шухăшсене тавçăрса илнĕнех:

— Эпир санпа пĕр-пĕрне нихçан та манмастпăр. Юрĕ-и? — тет.

— Манмастпăр. Эсĕ ман асăмран нихçан та тухас çук,— тетĕп.

— Таник, ман пата çыру çырăн-и?

— Çырăттăм та, ăçта çырмаллине пĕлместĕп.

Володя тепĕр май çаврăнса тăрать. Аякка-аякка, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрелле тинкерсе пăхать. Çапла вăл ÿлĕм хăй пурăнас хулана курать пек. Унтан вăл çаврăнса каллех манпа юнашар утать.

— Вырăна çитсен, тÿрех сан пата çыру вĕçтерĕп,— пĕлтерет хăй шухăшне Володя.

Эпĕ паянах çыру илесле савăнатăп.

Малта, çул юппинче, учительницă вĕренекенсемпе сывпуллашать. Часах ушкăн ача урам тăрăх утса кайрĕ. Мария Андреевна тăрса юлчĕ, вăл пире кĕтет.

— Ну, Таник, сывă пул,— тет учительницă эпир çывхарсан.— Çулла аван канса, кĕркунне шкула çĕнĕ вăйпа пырса, лайăх вĕренмелле пултăр.

Володьăна алă паратăп. Вăл ăна хытă, хытă чăмăртать. Эпĕ ни апла, ни капла чĕнейместĕп. Чун çав тери кÿтсе çитрĕ. Çапла кăшт тăнă хыççăн уйрăлтăмăр. Вĕсем шкулалла кайрĕç, эпĕ — килелле. Чылай кайсан тин вĕсене мĕн каламалли сăмах тупăнчĕ. Тăп тăтăм та:

— Каяс çулăр телейлĕ пултăр! — тесе кăшкăртăм.

Пĕччен тăрса юлсан, сасартăк аса илтĕм: ара, пире посылкă кам ярса панине пĕлеймерĕмĕр вĕт эпир? Эх, ухмахсем, вăййа пула пĕтĕмпех маннă. Мария Андреевна хăй те ку вăрттăнлăха уçса пама аса илеймен. Кам -ха пире лайăх вĕренме хавхалантарчĕ? Кам вăрман уçланкинче шкул уявĕ туса пачĕ? Чим, чим, тем тесен те ют çын марах, хамăрăн юратнă учительницă хавхалантарнă пире. Вăл.

## Кĕтмен хăрушă инкек

Çурхи вăрман хитре, сăмах çук. Пирĕн пахча вара, тупата та — пушшех селĕм. Мĕн чухлĕ йывăç! Пĕчĕк вăрман тейĕн. Карта çумĕпе тăршшĕпех илем кӳрен йывăçсем: хурăн, вĕрене, тирек, çăка... Вĕсем, салтаксем пек, пахчана хӳтĕлеççĕ, сивĕ çиле те, вĕри çиле те ямаççĕ, çимĕçе пăсма памаççĕ.

Сад пахчи çывăхне çитрĕм çеç, сăмсана ырă шăршă пырса ачашларĕ. Тӳрех карта урлă каçатăп. Çĕмĕрт, чие йывăççи шап-шурă чечекре. Пыл хурчĕсем нăйнăйлатса, çеçкерен çеçкене куçса çӳресе шерпет пухаççĕ.

Эпĕ лăстăркка улмуççи турачĕсем айĕн, пĕшкĕнсе, çĕр мунча тăррине улăхрăм. Пуçăмра халиччен илтмен юрă янăрать. Сĕрме купăсăма тытатăп та ăшăмра янăракан çĕнĕ кĕвве хĕлĕх сасси çине куçарма пикенетĕп.

Хĕлĕхсене сĕркĕчпе сĕрсе юрă кĕвĕлеме хатланса мĕн чухлĕ ларнă-ши — калаймастăп. Татах мĕн вăхăт иртетчĕ-ши — пĕлместĕп. Анчах та йĕри-тавралăха манса тăрмашнă чух чуна тивекен сасă хăлхана пырса кĕчĕ:

— Таник! Аçта эсĕ паян? Ара аннӳсĕр тăрса юлтăн-çке, ачам!

Сасă килекен енне çаврăнса пăхрăм та Анна манашкăна куртăм. Ним те ăнланмастăп, анчах та çурăм тăр-тăр-р чĕтресе илчĕ. Паллă, темле хурлăх килсе çапнă. Ура çине сиксе тăратăп та алăри сĕрме купăспах пӳртелле ыткăнатăп. Кĕтмен хăрушă инкек. Анне вилнĕ...

Эпĕ малтанах чĕлхене çухатрăм, тăнран кайса, кăмака çумĕнче таянса тăтăм. Куç умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ ункăсем вылярĕç... Унтан çав ункăсене сирсе пынă пекех, алăк еннелле утрăм. Аçта каяс, пуçăма аçта хĕс-

терес? Урама вирхӗнсе тухрӑм, ҫырманалла ыткӑнтӑм, вар тӑрӑх аялалла чупрӑм. Аннене, юратнӑ аннене, чӗрӗ аннене хуса ҫитес пек, чарӑна пӗлмесӗр чупатӑп. Вӑрманах персе ҫитрӗм. Йывӑҫ тураттисем питрен ҫапаҫҫӗ, урaран ҫакланаҫҫӗ. Пулин, пурпӗрех, мана халь никам та тытса чарас ҫук.

...Хӑҫанччен чупнӑ-ши, ӑҫта ҫитсе тирӗнсе ӳкнӗши? Тӑна пырса кӗтӗм те ют пӳртре, таса вырӑн ҫинче выртнине асӑрхарӑм. Умра сарӑ, кӑтра ҫӳҫлӗ хӗрача ларать. Аллинче унӑн стаканпа сӗт, чей чашки.

— Вӑрантӑн-и? — ыйтать хӗрача, эпӗ куҫа уҫнине асӑрхаса.— Эпӗ сан ҫӑварна кӗмӗл кашӑкпа сӗт ятӑм. Вӑ-ӑт.

Каллех куҫа хупрӑм. Никама та курас килмест, никампа та калаҫас килмест.

— Манӑн атте лесник. Вӑ-ӑт,— тет каллех хӗрача.

Тавҫӑрса илтӗм: апла эпӗ лесник килӗнче.

— Атте сана вӑрманта тупнӑ. Халӗ вӑл больницӑна кайрӗ, тухтӑр чӗнсе килет. Сана тухтӑра пӑхтарасшӑн. Вӑ-ӑт.

Ӑшӑмра каллех ҫил-тӑвӑл хускалчӗ. Вӑл мана вырӑн ҫинчен ҫӗклесе тӑратать, таҫта мур шӑтӑкнех хӑвалать. Сиксе тӑтӑм. Анчах хам шӑм-шака хам йӑтаймастӑп. Сахалтан та вӑл — ҫӗр пӑт. Ярса пусмассерен ура тупанӗнчен йӗппе яш! чикет. Ҫапах та каймалла. Ӑҫта? Хам та пӗлместӗп. Шухӑш ҫиппине каллех хӗрача татрӗ:

— Эсӗ сӗт ӗҫ,— тет вӑл, стакан тӑсса.

Чӑнах та, эпӗ хырӑм выҫнине туйрӑм. Ирӗксӗрех хӗрачана итлеме тиврӗ. Сӗчӗ тутлӑ, тутлӑ. Ытлашши вӑр-вар ку хӗрача. Вӗлт ҫухалать, тухать-кӗрет. Унтан татах тепӗр стакан сӗт, булкӑ йӑтса пычӗ.

— Тӑраниччен ҫи,— сӗнет ҫепӗҫскер.

Эпӗ сӗтне татах ӗҫрӗм, булкине ҫиеймерӗм. Пӳртрен тухрӑм. Хӗрача мана ярасшӑн мар ҫанӑран туртрӗ— эпӗ итлемерӗм. Хапхаран тухсан ӑҫталла каяс-ши, тесе те шухӑшласа тӑмарӑм. Ҫул урлӑ хӑвӑрт каҫса, сукмакпа вӑрман ӑшнелле кӗрсе кайрӑм.

Сукмак такӑр. Ҫапах та ҫулӑм ӑнмасть. Пӗрре ярса пусассишӗн тем парӑттӑм. Сылтӑм ура пӗҫ кӑкӗнчен хаяррӑн ыратать. Туя тупасчӗ. Вара тайӑнса утӑттӑм.

Сукмакран пӑрӑнса, вӑрмана хӑрӑк шӗшкӗ тӗми шырама кӗретӗп. Анчах кунта хӑрӑк йывӑҫсем курӑн-

маççĕ. Пур йывăç-курăк та сĕткенлĕ, вĕсем çулçă сарса, чечек çурса çутçанталăка илем кӳресшĕн. Çакă çутă тĕнчере пурте телейлĕ, пĕртен пĕр эпĕ çеç мĕскĕн.

Симĕс курăка пусарса, яштака патак выртать. Ку чăн-чăн вĕрене туя, мана шăпах аллискер. Хуллен, хуллен лăкăштатрăм вара. Утсан-утсан вăрман хĕррине тухрăм. Кун каç енне сулăннă. Вăрман ĕмĕлки вăрăма тăсăлнă. Хĕвелĕ йывăçсен тăррине лекнĕ-лекмен тăрать. Вăрман çывăхĕнчен хăпсан пăхатăп — йĕритавра паллана вырăн: хамăр яла та тупрăм. Вăл ту енчи вăрман çывăхĕнче ларать. Тĕлĕнмелле пирĕн тавраари вăрман тăрăхĕсенчен, ытла та пĕлсе ӳснĕ темелле. Ялсене, уй-хирсене, çырма-çатрасене, юхан шывсене, çавра кӳлĕсене типĕтсе те ĕнтсе яракан çилсенчен хӳтĕлеме ятарласа хăйсен кăшăлне вырнаçтарнă. Тепĕр чух эпĕ вырăнтан хускалмасăр пăхнă пулăттăм çав тавралăха. Халĕ кăмăл çук. Манăн ял еннеллех утмалла. Çулсăр-мĕнсĕр утатăп. Манран инçех те мар—масар. Унтан ушкăн çын тухать. Апла пулсан, аннене пытарнă... Манăн чĕре сиксе тухасла карт-карт тапать. Тĕлĕк мар-ши ку? Анчах çук çав, тĕлĕк мар. Чун хурланса, хурланса килчĕ. Калаçа-калаçа татăлса йĕме тытăнтăм эпĕ: «Анне, анне, мĕншĕн кукамайпа пĕр шутлă пултăн, е эсĕ хăвăн пĕчĕк ывăлу пурри çинчен мантăн? Шухăшла-ха... Мĕнле пурăнас ĕнтĕ сансăрăн? Ăçта каяс, мĕн тума пĕлес, кама юрас? Эх анне, анне, шеллемерĕн мана...»

## Унăн хăйĕн йĕрки

Кашни ир тухăçран хĕвел хăпарать. Эпĕ ыйхăран вăраннă чух вăл чалăшраххăн пăхса, пĕтĕм тĕнчене çутатса, йăлтăртатса тăрать. Сисĕнмесĕрех çӳл тӳпене çитет. Мĕнле хăпарать-ши: чупса, шуса е утса? Темĕн чухлĕ сăнасан та асăрхаймăн. Вара вăл кăнтăрла иртсен ерипен, хăйĕн куçас меслетне пытарса, аялалла анма пуçлать... Вăрман тăррине çитсен, ивукла выляса, йывăçсем хыçне чăлт пытанать, туратсем хушшипе пăхса йăл-йăл кулать. Унччен те пулмасть—пачах курăнми пулать. Хăй таçта ӳкесрен хăрать пулас: каç чатăрне карăнтарса, унăн пин тĕслĕ çипписене пĕр ывăça пухса, çирĕп ярса тытнă. Ав, епле карăнса тă-

терес? Урама вирхӗнсе тухрӑм, ҫырманалла ыткӑнтӑм, вар тӑрӑх аялалла чупрӑм. Аннене, юратнӑ аннене, чӗрӗ аннене хуса ҫитес пек, чарӑна пӗлмесӗр чупатӑп. Вӑрманах персе ҫитрӗм. Йывӑҫ тураттисем питрен ҫапаҫҫӗ, урaран ҫакланаҫҫӗ. Пулин, пурпӗрех, мана халь никам та тытса чарас ҫук.

...Хӑҫанччен чупнӑ-ши, ӑҫта ҫитсе тирӗнсе ӳкнӗши? Тӑна пырса кӗтӗм те ют пӳртре, таса вырӑн ҫинче выртнине асӑрхарӑм. Умра сарӑ, кӑтра ҫӳҫлӗ хӗрача ларать. Аллинче унӑн стаканпа сӗт, чей чашки.

— Вӑрантӑн-и? — ыйтать хӗрача, эпӗ куҫа уҫнине асӑрхаса.— Эпӗ сан ҫӑварна кӗмӗл кашӑкпа сӗт ятӑм. Вӑ-ӑт.

Каллех куҫа хупрӑм. Никама та курас килмест, никампа та калаҫас килмест.

— Манӑн атте лесник. Вӑ-ӑт,— тет каллех хӗрача.

Тавҫӑрса илтӗм: апла эпӗ лесник килӗнче.

— Атте сана вӑрманта тупнӑ. Халӗ вӑл больницӑна кайрӗ, тухтӑр чӗнсе килет. Сана тухтӑра пӑхтарасшӑн. Вӑ-ӑт.

Ӑшӑмра каллех ҫил-тӑвӑл хускалчӗ. Вӑл мана вырӑн ҫинчен ҫӗклесе тӑратать, таҫта мур шӑтӑкнех хӑвалать. Сиксе тӑтӑм. Анчах хам шӑм-шака хам йӑтаймастӑп. Сахалтан та вӑл — ҫӗр пӑт. Ярса пусмассерен ура тупанӗнчен йӗппе яш! чикет. Ҫапах та каймалла. Ӑҫта? Хам та пӗлместӗп. Шухӑш ҫиппине каллех хӗрача татрӗ:

— Эсӗ сӗт ӗҫ,— тет вӑл, стакан тӑсса.

Чӑнах та, эпӗ хырӑм выҫнине туйрӑм. Ирӗксӗрех хӗрачана итлеме тиврӗ. Сӗчӗ тутлӑ, тутлӑ. Ытлашши вӑр-вар ку хӗрача. Вӗлт ҫухалать, тухать-кӗрет. Унтан татах тепӗр стакан сӗт, булкӑ йӑтса пычӗ.

— Тӑраничченех ҫи,— сӗнет ҫепӗҫскер.

Эпӗ сӗтне татах ӗҫрӗм, булкине ҫиеймерӗм. Пӳртрен тухрӑм. Хӗрача мана ярасшӑн мар ҫанӑран туртрӗ— эпӗ итлемерӗм. Хапхаран тухсан ӑҫталла каяс-ши, тесе те шухӑшласа тӑмарӑм. Ҫул урлӑ хӑвӑрт каҫса, сукмакпа вӑрман ӑшнелле кӗрсе кайрӑм.

Сукмак такӑр. Ҫапах та ҫулӑм ӑнмасть. Пӗрре ярса пусассишӗн тем парӑттӑм. Сылтӑм ура пӗҫ кӑкӗнчен хаяррӑн ыратать. Туя тупасчӗ. Вара тайӑнса утӑттӑм.

Сукмакран пӑрӑнса, вӑрмана хӑрӑк шӗшкӗ тӗми шырама кӗретӗп. Анчах кунта хӑрӑк йывӑҫсем курӑн-

маççĕ. Пур йывăç-курăк та сĕткенлĕ, вĕсем çулçă сарса, чечек çурса çутçанталăка илем кӳресшĕн. Çакă çутă тĕнчере пурте телейлĕ, пĕртен пĕр эпĕ çеç мĕскĕн.

Симĕс курăка пусарса, яштака патак выртать. Ку чăн-чăн вĕрене туя, мана шăпах аллискер. Хуллен, хуллен лăкăштатрăм вара. Утсан-утсан вăрман хĕррине тухрăм. Кун каç енне сулăннă. Вăрман ĕмĕлки вăрăма тăсăлнă. Хĕвелĕ йывăçсен тăррине лекнĕ-лекмен тăрать. Вăрман çывăхĕнчен хăпсан пăхатăп — йĕритавра паллановă вырăн: хамăр яла та тупрăм. Вăл ту енчи вăрман çывăхĕнче ларать. Тĕлĕнмелле пирĕн таврари вăрман тăрăхĕсенчен, ытла та пĕлсе ӳснĕ темелле. Ялсене, уй-хирсене, çырма-çатрасене, юхан шывсене, çавра кӳлĕсене типĕтсе те ĕнтсе яракан çилсенчен хӳтĕлеме ятарласа хăйсен кăшăлне вырнаçтарнă. Тепĕр чух эпĕ вырăнтан хускалмасăр пăхнă пулăттăм çавтавралăха. Халĕ кăмăл çук. Манăн ял еннеллех утмалла. Çулсăр-мĕнсĕр утатăп. Манран инçех те мар—масар. Унтан ушкăн çын тухать. Апла пулсан, аннене пытарнă... Манăн чĕре siksе тухасла карт-карт тапать. Тĕлĕк мар-ши ку? Анчах çук çав, тĕлĕк мар. Чун хурланса, хурланса килчĕ. Калаçа-калаçа татăлса йĕме тытăнтăм эпĕ: «Анне, анне, мĕншĕн кукамайпа пĕр шутлă пултăн, е эсĕ хăвăн пĕчĕк ывăлу пурри çинчен мантăн? Шухăшла-ха... Мĕнле пурăнас ĕнтĕ сансăрăн? Ăçта каяс, мĕн тума пĕлес, кама юрас? Эх анне, анне, шеллемерĕн мана...»

## Унăн хăйĕн йĕрки

Кашни ир тухăçран хĕвел хăпарать. Эпĕ ыйхăран вăраннă чух вăл чалăшраххăн пăхса, пĕтĕм тĕнчене çутатса, йăлтăртатса тăрать. Сисĕнмесĕрех çӳл тӳпене çитет. Мĕнле хăпарать-ши: чупса, шуса е утса? Темĕн чухлĕ сăнасан та асăрхаймăн. Вара вăл кăнтăрла иртсен ерипен, хăйĕн куçас меслетне пытарса, аялалла анма пуçлать... Вăрман тăррине çитсен, ивукла выляса, йывăçсем хыçне чăлт пытанать, туратсем хушшипе пăхса йăл-йăл кулать. Унччен те пулмасть—пачах курăнми пулать. Хăй таçта ӳкесрен хăрать пулас: каç чатăрне карăнтарса, унăн пин тĕслĕ çипписене пĕр ывăçа пухса, çирĕп ярса тытнă. Ав, епле карăнса тă-

раççĕ укисем. Кайран тĕнчене каç тĕттĕмĕ хупласа илет. Эппин, вăхăт шут шăрçине сулахай енне куçарчĕ, кун шучĕ катăлчĕ. Тĕлĕнмелле çак çутçанталăкран: ир пулать те, каç пулать. Кун иртет, эрне, уйăх... Анне вилнĕренпе ĕнтĕ хĕвел миçе хут тухса миçе хут анчĕ-ши?

Малтан эпĕ пĕчченехчĕ. Темиçе кун иртсен, эпĕ мĕнле пуранниние пĕлме ман пата пĕр арçын пычĕ. Ун хыççăнах Анна манашкă та пырса çитрĕ. Вĕсем калаçнинчен арçын ял Советĕнчен килнине пĕлтĕм.

Ял Советĕнче паллана пичче пурччĕ. Ăçта-ши вăл халь? Тахçантанпах курман ăна. Таçта кайнă пулĕ ялтан. Кăмăлласкерччĕ. Эх, вăл килнĕ пулсан, мĕн тери лайăхчĕ. Ку çын чĕмсĕр, ман çине пăхсах каймасть.

— Ачасен çуртне ямалла ăна,—тет вăл ман пирки.

— Ялта ырă çынсем пĕтмен-ха,— йăвашшăн тавăрать Анна манашкă.— Ачине хам пăхса ӳстеретĕп.

Лешне ку хыпар килĕшет, вăл темле йывăр ĕçрен хăтăлнăнах çăвкаланса калаçать:

— Питĕ пархатарлă шухăш, сире хăвăра та ватăлмалăх кунра çын кирлĕ. Ӳлĕм хăвăра пăхĕ...

Вĕсем, калаççан-калаççан, ял Советĕнче темле хут тутармалла тесе тухса кайрĕç. Çав кунтанпа Анна манашкăпа пурăнатпăр.

## Хырăм выççи

Ирхине ура çине тăнă-тăман сĕтел çине пăхса илетĕп: выртмасть-ши унта уйăх пек çаврашка çăкăр? Çук, выртмасть. Сĕтел паян та пуш-пушах, нихăш кĕтесре те пĕр тĕпренчĕк курăнмасть. Кăмăл çав тери хуçăлса килет. Куç хуралнипе шăла çыртатăп, алăсене чăмăртатăп. Хырăм касать, тем туртса ĕмет-çке унта. Çăвар тулли сĕлеке, çăтса çитермелле мар. Чăтма хĕн, пит çăмарти тăрăх куççуль хăй тĕллĕнех шăпăртатса юхать. Манăн питĕ хырăм выçнă. Хырăм выççан, эпĕ хама ытла та мĕскĕнле туятăп. Çавăншăнах йĕретĕп те пулĕ. Куç умне чирлĕ анне килсе тухать. Хăй имшеркке. Мĕншĕн вилчĕ-ха вăл? Анне пурăннă чух ку нушана эпĕ курман, апачĕ яланах пиçнĕ-хуçнăччĕ. Аса илетĕп анне калаçнисене: «Таник, ывăлăм, апат çинĕ чух уруна ан сулласа лар, амăшĕ вилет, теççĕ». Çавăншăнах вилчĕ-ши? Ма итлемерĕм-ха, харсăрланса мĕншĕн

ашкӑнтӑм? Эх, айван, айван... Халь пулсан, эпӗ анне сӑмахӗнчен тухмӑттӑм, ӑна нимпе те кӳрентерместтӗм...

...Ҫапла, сӗтел ҫинче ҫӑкӑр ҫук. Апат пӗҫерменни темиҫе кун. Анна манашкӑ виҫ кун каяллах таҫта кайнӑччӗ. Эпӗ сад пахчине кӑштӑртатса тухатӑп. Йывӑҫсем айӗн ҫӳресе, тӑкӑннӑ панулмисене пухмалла. Панулмисене тутӑ кӗрсе ҫитмен, йӳҫенкӗ вӗсем,— ҫапах та хырӑм выҫҫи кӑштах иртет.

Анна манашкӑ киле таҫтан таврӑнчӗ. Пӳрте кӗнӗкӗмен:

— Сан валли ӗҫ тупрӑм,— терӗ вӑл илӗртӳллӗ сассипе.

— Мӗнле ӗҫ?

— Йӑран хусӑкламалли мар. Уксах урупа кӗреҫе тытса ҫӗр чаваймӑн. Ларӑн та, сӗрме купӑс калӑн. Уншӑн сана укҫа парӗҫ.

— Сӗрме купӑс каланӑшӑн укҫа та параҫҫӗ-и? — тӗлӗнетӗп эпӗ.

— Памасӑр, кукаҫу та сӗрме купӑспа тӑранса пурӑннӑ.

Ӗненмен енне пуҫа сулатӑп. Анна манашкӑ эпӗ иккӗленнине сирсе ямах шутларӗ-ши, сумкинчен кӑкшӑм кӑларса:

— Сӗт, пӑрҫа ҫӑнӑхӗ илсе килтӗм, халех ҫӑмах пӗҫерӗпӗр,— терӗ.— Эсӗ ӗҫлесе илес укҫаран кӑшт кивҫен пачӗҫ. Укҫа пулсан, ачам, сӗтел ҫинче юр-вар тӑтӑлмӗ.

Сӗтлӗ ҫӑмах яшки пит тутлӑ. Ҫисе тӑранассӑн сунмарӑм!

Вучахра яшка лӑкӑртатса вӗренишӗн эпӗ кунӗнҫӗрӗн канмасӑр сӗрме купӑс калама хатӗр.

## Ӑҫта сӗрме купӑс калӑп-ши?

Ӑҫта сӗрме купӑс калама тивет-ши ман? Анна манашкӑ пӗлтересшӗн мар, тем пытарать. «Пырсан хӑвах курӑн, ан васка»,— тет вӑл. Ҫын умӗнче ман тирпейлӗ курӑнас килет. Эпӗ анне ҫӗлесе панӑ шурӑ кӗпепе хура шӑлавара тӑхӑнтӑм, мӑя пионер галстукӗ ҫыхрӑм. Тӗкӗр умне пырса пӑхсан, чипер ача пекех туйӑнчӗ. Ҫӳҫе чалӑшшӑн тураса якатмалла ҫеҫ, вара чӑн-чӑн сӗрме купӑсҫӑ пулса тӑрӑп.

— Галстукна мĕншĕн çыхан, шкула каймастăн-иç,— асăрхаттарчĕ манашкă.

— Эпĕ пионер-çке. Пионерăн яланах галстук çыхса çӳремелле.

— Салт, салт галстукна,— хушать манашкă.

— Галстук çыхмасăр эпĕ ниçта та каймастăп,— пат татса калатăп ăна, унтан алла тытнă сĕрме купăса сак çине хуратăп.

— Кутăнлăху хăвăнтан та пысăк-мĕн сан, ача. Кăлăхах,— ӳпкелешет манашкă.— Анчах манас марччĕ, эсĕ тăлăх, уксахскер, сана тăрантарса пурăнма хыпаланакансемех çук. Сан пĕтĕм ĕçӳ те ваттисем каланине итлемелли çеç.

— Кăмăла кайман япала тума хушсан, мĕншĕн итлес? — хирĕçлетĕп эпĕ.

— Выçă ларас килмĕ, итлĕн!

Хырăм выççи... Аса илсенех, çан-çурăм сăрăлтатать.

## Сарайĕнчи „чиркӳре"

Ял çумĕнчи çырма хĕррипе чылайччен утсан, пĕр карта умĕнче чарăнса тăтăмăр. Анна манашкă унталла-кунталла пăшăрханнăн пăхать. Вăл темрен шикленни сисĕнет. Мĕнрен хăрать-ши манашкă? Тавçăрса илме пултараймастăп. Çӳлти вĕрлĕке илсе, карта урлă каçрăмăр. Çĕр улми йăранĕсем хушшипе сукмак такăрланнă. Кунта çынсем нумай çӳреççĕ пулас. Сукмак пире лупас хыçне çитерчĕ. Картишне кĕме хапха та пур. Кĕрсенех эпир пĕр хĕрарăма куртăмăр.

— Тихăн ăçта? — ыйтрĕ Анна манашкă.

— Чиркӳре,— пĕлтерчĕ лешĕ.

— Эпĕ хайхи сĕрме купăс калакан ачана илсе килтĕм-ха,— терĕ манашкă, ман çине пуçĕпе сĕлтсе кăтартса. Унтан вăл мана каллех хăй хыççăн утма хушрĕ.

Эпир картиш варринелле тухмарăмăр, лупас айĕнчен тӳрех кĕтесри сарайне кĕтĕмĕр. И-и, кунта çын пирĕнсĕрех нумай. Мĕн тăваççĕ-ши? Чим, сăх-сăхаççĕ мар-и? Тупата сăх-сăхаççĕ, турра кĕл тăваççĕ. Çынсем хушшипе мала иртрĕмĕр. Мĕн куратăп! Чиркӳри евĕр, турăшсем лартса тултарнă! Çуртасем çунаççĕ. Сарайĕнчи чиркӳ! Халиччен кунашкал япалана илтмен те, курман та. Вăрăм çӳçлĕ, сухаллă этем пур. Ку пачăш-

ки пулĕ, ахăртнех. Ăçта курнă эпĕ ăна, ăçта? Кăшт тинкеререх пăхсан, аса илтĕм. Çапла, асанне вилсен, кĕлĕ вулама пынăччĕ вăл пирĕн пата. Иккĕнччĕ, арăмĕпе. Микун Петрин Тихăнĕ тетчĕç пулас. Çавах. Уйрăмах ун чух хĕрарăмсем вĕсен кĕписене ăмсаннăччĕ. Вĕсем çветтуй кĕпи тăхăннă, тетчĕç. Вăл кĕпене тăхăнсан, сăвап пулать имĕш. Тихăн çийĕнче халĕ те çунатлă ачасем тĕрленĕ çав вăрăм кĕпех. Анчах кĕпи ĕнтĕ кивелерех панă.

Çветтуй кĕпеллĕ Тихăн хăйĕн сарайĕнче «чиркӳ» уçнă, çынсене кĕл тума пухать-мĕн.

Анна манашкă «чиркӳ» хуçине ман çинчен тем каларĕ. Эпĕ кăшт çывăхарах пырса тăтăм. Халĕ вĕсем калаçни хăлхана аванах пырса кĕрет.

— Пионер галстукне тем тусан та салттараймарăм,— евитлет манашкă.

— Ха, салттараймарăн эппин. Салтманни аван та. Пионерсем те турра ĕненеççĕ, тесе шутлаччăр. Ăна кура ытти пионерсем те пирĕн картана кĕрĕç.

Иккĕшĕ çапла калаçни мана тарăхтарсах ячĕ.

— Эпĕ турра ĕненместĕп те, сăх-сăхмастăп та,— терĕм хытах.

— Мĕн кăшкăратăн? Урамра мар-çке. Кша! — тет манашкă, ман енне çаврăнса. Çынсем те кăшăрах çаврăнса пăхрĕç. Тихăнĕ пĕшкĕнчĕ те хăлхаран шăппăн çапла каларĕ:

— Сана никам та ирĕксĕрлесе турра ĕнентермест, ачамккă.

— Ут хыçран,— хушрĕ манашкă. Вăл мана часах кĕтесри пукан çине лартрĕ. Ятлаçмасăр тӳсеймерĕ:

— Шăлна çыртасчĕ сан, шăркалчă. Чĕлхене йĕвенлемесен, вăл тем те персе ярĕ, ĕçе пăсса хурĕ. Е выçса вилес тетĕн-и?..

Ларатăп тăмана чĕппилле, ун-кун пăхкаласа. Çынсем тем мăкăртатаççĕ, сăх-сăхаççĕ. Чунра кичем, кичем. Ман умри хĕрарăмсен пĕр ушкăнĕ юрă пуçларĕ: «Таса аннемĕр Мария...» Мана вара сасартăк темле канлĕ-канлĕ пулса кайрĕ. Хăлхана уйрăмах пĕр çинçе çепĕç сасă хум евĕр çите-çите ачашлать. Эпĕ тимлесе итлетĕп. Ах, чăн-чăн анне сасси! Нумаях та пулмасть пирĕн килте те çапла юрлатчĕç. Эпĕ анне сассине вăйлатма сĕрме купăс калаттăм. Икĕ сасă пӳрт ăшчиккине хăтлăх парса тăратчĕ. Илемлĕччĕ, кăмăл çĕкленет-

чĕ. Аса илӳсем пуҫа ҫавӑрса араҫҫӗ, эпĕ хам ӑҫта ларнине те манатӑп. Пуҫра пĕр шухӑш: ҫинҫе ҫепĕҫ сасӑ кӑна ан ҫухалтӑрччĕ. Сĕрме купӑса илетĕп, чӑнкӑлти шӑнкӑрав сасса манӑн тата ытларах вӑй парас килет. Анчах сисетĕп, хушӑран шӑнкӑрав йӑшланать, ӑна ыттисем чӑрмантараҫҫĕ, юрра пурте пĕр харӑс пуҫлама пĕлмеҫҫĕ. Сĕрме купӑс калама тытӑнатӑп та, юрӑ самайланать, хӑват илет.

Эпĕ сĕрме купӑса татти-сыпписĕр калама хатĕр. Анчах мана чарчĕҫ. Пурте Тихӑн аллинчи пĕчĕк хĕресе черет тӑрсах чуп тума тытӑнчĕҫ. Ҫурта ҫунса тӑракан турӑш умĕнче чарӑнса, кашниех йывӑҫ тирĕк ҫине вак укҫа пӑраха-пӑраха хӑварать.

Турӑ йӑлисене туса пĕтерсен, пурте пĕр тĕле пухӑнчĕҫ. Пирваях юрӑҫсем ман ҫинчен сӑмах тапратса ӑшшӑн калаҫрĕҫ:

— Пултаракан ача Таник. Сĕрме купӑс сассипе юрлама ҫав тери ҫӑмӑл,— теҫҫĕ вĕсем.

— Яланах чĕнес ӑна, Тихӑн пичче.

— Килтĕр, килтĕр, чармастӑп,— тет лешĕ.

— Кукашшĕ пекех регент пулать мӑнукĕ.

Ҫапла калаҫкаланӑ хыҫҫӑн ҫынсем тухса кайма тӑчĕҫ.

— Турӑ чурисем, ан васкӑр-ха, хыпар пур,— чарчĕ вĕсене Тихӑн.— Паян каҫхине тепре пухӑнӑпӑр. Советсен суйлавне хутшӑнсан, турра ĕненекен ҫынсене мĕнле ҫылӑх пулни ҫинчен калаҫмалла! Кун пирки сире хуларан килнĕ пĕр юлташ сӑмах вакласа парасшӑн.

«Турӑ чурисем» пуҫтарӑнма пулчĕҫ.

— Хыҫалти хапхаран пĕрерĕн-пĕрерĕн саланӑр,— асӑрхаттарать ҫынсене Тихӑн.— Сыхлануллӑрах пулӑр.

Эпир Анна манашкӑпа чи кая тӑрса юлтӑмӑр. Тихӑн, пире курмӑша хывса, тухса кайма пикенчĕ, анчах ӑна Анна манашкӑ пӳлчĕ. Тихӑн ӑшшӑн калаҫать, эпĕ тӑлӑха юлнӑшӑн хуйхӑрать. Анчах манӑн ӑна тӗмшĕн чĕрне хури тӑршшĕ те ĕненес килмест. Хӑй патĕнче кӑшт ĕҫлесен, Тихӑн мана таҫти аякри пысӑк чиркĕве сĕрме купӑс калама яратӑп тесе пĕлтерчĕ. Унта ман пек пĕчĕк музыкантсене чиркӳ ачи пулма хапӑл тусах йышӑнаҫҫĕ имĕш.

Тихӑн каллех пӑрӑнасшӑн пулчĕ. Анчах Анна манашкӑ ӑна каллех тытса чарчĕ.

— Пĕчĕк музыкантсен те хырăм выçать,— терĕ вăл.— Калаçса татăлнă китти-миттине пар, Тихăн.

Лешĕ, сăмсине нăш-нăш турткаласа, ним чĕнмесĕр йывăç тирĕкрен вак укçа илчĕ те Анна манашкăна тыттарчĕ.

Килте эпир каллех çăмах яшки пĕçерсе çирĕмĕр. Манашкийĕ çĕрле çухалчĕ, вăл сарайĕнчи «чиркĕве» кайрĕ пулас.

## Галстука салтса илеççĕ

Сентябрĕн пĕрремĕшĕ çитрĕ. Шкула каймалла. Куçа мана çав тери савăнтарать. Пĕрле вĕреннĕ ачасене тахçанах курас килет ĕнтĕ, вĕсене эпĕ çу каçса та пĕрне те тĕл пулман.

Урама тухрăм. Хапха умĕнче мана никам та кĕтмест. Ăçта-ши Володя юлташăм? Иккĕн шкула утнă кунсенче эпĕ çăмăллăнах çӳреттĕм. Халĕ, ав, пĕр аллăмра патак, тепринче — шкул сумки. Эх, Володя, паян эсĕ мана нихçанхинчен те ытларах кирлĕ.

Шкулĕ те, класĕ те çавах. Ачисем те çавсемех, анчах вĕсем кăшт улшăннă, нумайăшĕ пĕве кайнă.

Урока ларма шăнкăрав шăнкăртатрĕ. Ачасем хăвăрт вырнаçса ларчĕç. Класа кам кĕрĕ-ши чи юлашкинчен? Эх, алăк уçăласчĕ те Мария Андреевна утса кĕресчĕ. Ăна хăваласа иртсе, ман çума Володьăн кĕрсе ларасчĕ. Вăт вара каллех пурнăç пулĕччĕ. Çапла çеç шухăшларăм, сĕтел умне Екатерина Ивановна, пире малтан вĕрентнĕ учительницă, пырса та тăчĕ. Пĕтĕм класс ассăн сывласа янăнах туйăнчĕ.

Малтанхи урок иртсен, перемена вăхăтĕнче, учительницă класран тухса каймарĕ. Сĕтел хушшинче тем çыркалама тытăнчĕ. Çав вăхăтра ун патне Аленти пырса тăчĕ те:

— Екатерина Ивановна, веç, кайри партăра ларакан ача манашкăсемпе сектантсене сĕрме купăс каласа турă юрри юрлаттарать,— терĕ. Коридора тухса кайма тăнă ачасем, мĕн пуласса кĕтсе, тăпах чарăнса тăчĕç.

Екатерина Ивановна, илтнине ĕненмесĕр-ши е ăнланмасăр-ши, куçлăх çийĕн Аленти çине чăр-р пăхрĕ. Унтан:

— Мĕн кирлĕ мара лăркатăн? — терĕ. Ман ҫине пăхса: — Вăл сĕрме купăс калама пĕлмест вĕт,— тесе хушса хучĕ.

— Ух, курасчĕ сирĕн, ун аллинче сĕркĕч йăкăртатса шуҫса ҫеҫ тăрать!

— Кай, ĕненместĕп.

— Чăнах, Екатерина Ивановна, хам куҫпа хам куртăм.

— Ăҫта куртăн?

— Тихăнсен сарайне манашкăсемпе сектантсем пухăнаҫҫĕ те ух! сăхха переҫҫĕ кăна. Таникĕ вара вĕсене сĕрме купăспа юрлаттарать. Пĕтĕмпех шăтăкран пăхса тăтăм.

Учительницă сиксе тăчĕ те:

— Таник, чăн-и ку хыпар? — терĕ.

Эпĕ те ура ҫине тăтăм. Мĕн калайăн ĕнтĕ? Пуҫа ҫеҫ пĕкрĕм.

— Чĕнместĕн? Эппин, тĕрĕс? Тарăхтармăш ача!— шăлне ҫыртса кăшкăрать Екатерина Ивановна.— Пионер галстукĕ ҫыхса ҫӳретĕн-ха тата. Кам пионера илнĕ ăна?

Сĕтел патне Уляка пырса тăчĕ.

— Аслă Ленин ҫуралнă кун пире пурсăмăра та пионера илнĕ,— терĕ вăл хĕрелсе.— Пирĕн клас ачисем пионера тивĕҫлипе кĕнĕ.

Учительницă тата хытăрах ҫиленсе кайрĕ.

— Аленти, пыр, халех ун мăйĕнчен пионер галстукне салтса ил! — хушрĕ вăл.

Ачасем хаш-ш сывласа илчĕҫ. Эпĕ галстука икĕ аллăмпа ярса тытрăм.

— Сборсăрах-и? — тĕлĕнсе ыйтать Уляка.— Пионер галстукне салтса иличчен малтан сбора пухăнса пĕрле сӳтсе явмалла.

— Сирĕн сбор пухăнассине кĕтсе тăма вăхăт ҫук,— илтетĕп учительницă сассине.— Шкул ятне ярать вăл ача. Кăна илтсен, районтисем мĕн калĕҫ? Аленти, мĕн тăран, салтса ил теҫҫĕ сана.

Аленти сĕмсĕрленсе ман пата пычĕ те мăйри галстука туртма пикенчĕ.

— Ан ҫулăх, памастăп,— терĕм эпĕ. Партă хушшинчен тухрăм та Алентие кăкăрĕнчен чышрăм. Ачасем никам хутне кĕме аптраса тăраҫҫĕ. Унччен те пулмарĕ, Алĕнти мана икĕ аллипе тĕртсе ячĕ. Эпĕ каялла

кайса лартăм. Анчах сатурланса çийĕнчех сиксе тăтăм.

— Вăл памасть,— терĕ Аленти йĕресле.

— Парассине кĕтсе тăрсан, мана учительницăран та кăларса ывăтĕç! — ятлаçать Екатерина Ивановна. Унтан ярт-ярт утса пычĕ те мăйăмран пионер галстукне çăтăр-çатăр салтса илчĕ. Учительницăна хирĕç тăма вăйăм-халăм çитеймерĕ. Эпĕ партă çине ӳпĕнсе лартăм та сасăпах йĕрсе ятăм. Урок пуçлансан та çаплах ĕсĕклеме чарăнаймарăм.

— Класран тухса кай, нăшăклатса урок ирттерме ан чăрмантар! — хăтăрса пăрахрĕ Екатерина Ивановна. Эпĕ шкултан тухса кайрăм.

## Мĕн тумалла?

Çапла манăн пурнăç минут хушшинче арпашса кайрĕ. Мĕн тумалла? Ăс ыйтса пĕлмелли çывăх çын та çук. Шкула текех тем тусан та каймастăп. Екатерина Ивановна мана кураймасть, хам та ăна килĕштерместĕп. Аленти вара чĕр тăшман. Шкулта пĕртен-пĕр Улякана çеç кăмăллатăп.

Чиркӳ ачи пулмах тивет-ши ĕнтĕ? Тихăн пĕр икĕ эрне каяллах ăсатасшăнччĕ. Тем каласа та ӳкĕтлерĕ: «Уксах ачашăн чиркӳ — тĕп кил. Сана унта тăрантараççĕ. Ĕç йывăр мар, чиркӳри çуртасене çутса тух та сĕрме купăс кала...» Анчах эпĕ туртăнса тăтăм. Унта пачах çухалса кайăп, терĕм. Володя юлташăм мĕн калĕ-ши? Унран çывăх çын тĕнчере манăн урăх никам та çук. Вăл пичче те, шăллăм та, тантăшăм та. Володьăран ĕнер çыру илтĕм. Ун патне тарса кайсан мĕнле-ши? Кунта манăн шкултан та чун сивĕнчĕ ĕнтĕ...

## Эпĕ çĕнĕрен çуралатăп

Ку таранччен пурăнса, ял таврашĕнчен эпĕ инçене кайса курман. Халĕ акă Канаш станцине çитрĕм! Вокзалĕ тĕлĕнтерсех ячĕ. Вăл çав тери пысăк, икĕ хутлă. Çӳллĕ те сарлака алăкĕсем икĕ еннелле пĕр уçăлаççĕ, пĕр хупăнаççĕ. Ăçта килчĕ унта пӳлĕмсем. Эпĕ кĕтсе ларнă пӳлĕмре речĕ-речĕпе хыçлă тенкелсем. Кашни тенкел çинчех — çынсем. Вĕсене пĕрне те палламастăп. Анна манашкă кассă умĕнче билет илме черетре тă-

рать. Вӑл мана турӑ ачи пулма таҫти аякри чиркӗве илсе каять. Эпӗ вӗҫӗмсӗр кантӑкран урамалла пӑхатӑп. Унта икӗ ретлӗ чукун ҫулсем куратӑп. Ҫав ҫулсем тӑрӑх станци умнех е ку, е тепӗр енчен пуйӑссем хашкаса килсе ҫитсе чарӑнаҫҫӗ, нумай та вӑхӑт иртмест— чӑнкӑр-чанкӑр чанклаттаркаласа тапранса каяҫҫӗ. Мӗн кӑна турттармаҫҫӗ пулӗ вакунсемпе: тракторсем, автомашинӑсем, комбайнсем тата тем те, тем те.

— Тепловоз! — теҫҫӗ ҫынсем, станцие ытла та илемлӗ пуйӑс пырса кӗрсен. Пуҫӗнче унӑн пилӗк кӗтеслӗ хӗрлӗ ҫӑлтӑр. Вӑл шуса пынӑ пек туйӑнать. Унччен те пулмасть, пӗр-пӗринчен кӑкарнӑ симӗс тетте пӳртсем кӑлтӑртатса иртме пуҫлаҫҫӗ. Вара вокзала чун кӗрет тейӗн. Шав ҫӗкленет... Япаласем йӑтнӑ ҫынсем варкӑшаҫҫӗ кӑна. Пӗрисем вакунтан тухаҫҫӗ, теприсем кӗреҫҫӗ. Пурте хыпаланаҫҫӗ, кӑшкӑрашаҫҫӗ. Пӗр кана ҫапла халӑх тӗркӗшнӗ хыҫҫӑн пуйӑс тапранса каять, вара станци пушансах юлать.

Эпӗ ҫаплах чӳречерен пӑхса тӑратӑп. Пуҫра пин тӗслӗ шухӑш пӑтранать. Хӑш еннелле вӗҫтерӗ-ши эпӗ ларса каяс пуйӑс? Ӑҫта ҫитерӗ-ши? Пурнӑҫ тени мӗнле ҫулпа чупӗ-ши? Шел, шкулта вӗренесси пӗтрӗ. Эпӗ— чиркӳ ачи. Чиркӳ ачинчен шкул ачисем мар, учительсем те хӑраҫҫӗ. Кил те ҫук ӗнтӗ ман. Сивӗ чиркӳре тӑр пӗччен выртса тӑрӑп-ши? Паллах, юлташ тупаймӑп. Шырамастӑп та. Ҫыннӑн чи ҫывӑх юлташ пӗрре ҫеҫ пулать. Вӑл ман пур — Володя. Чиркӗве ҫитсе вырнаҫсанах ӑна хӑнана пырса кайма чӗнетӗп-ха. Анчах Володя мана чиркӳ ачи пулнӑшӑн тиркесен? Вара мӗн пулӗ? Эпӗ ун патне ҫыру ҫыртӑм, ҫав ҫырура чиркӳ ачи пулма мӗншӗн килӗшнине тӗпӗ-йӗрӗпех ҫыртӑм. Килте выҫлӑх тарӑхтарнине пула укҫашӑнах сарайӗнчи «чиркӳре» сӗрме купӑс каланине те, учительница пионер галстукне мӑйран салтса илнине те, ҫавна пулах шкула кайма пӑрахнине те йӑлтах ҫырӑва кӗртрӗм. Мана чиркӳ ачи пулма нуша хӑваланине вӑл ӑнланаймӗ-ши? Володя та сивӗнсен, тӗнчере пурӑнма та кирлӗ мар. Хир варринчи тунката пурпӗрех пӗччен...

Чун тӑвӑлса хӑпарать. Хама эпӗ тӗпсӗр шӑтӑк умне пырса тӑнӑнах туятӑп. Пӗтӗм сасӑпа кӑшкӑрса ярас килет.

Ытла ӑш вӑрканипе эпӗ патака ярса тытрӑм та хирӗҫ килекен ҫынсене ҫапӑна-ҫапӑна урама тухрӑм.

Ăсталла каяс? Кирек ăсталла та юрать, пурпĕрех мар-и? Ура утать, уттăр.

Унталла та кунталла пуйăссем вашлатса иртеççĕ. Васкаççĕ, ах, питĕ васкаççĕ, вĕсен çитес çĕре çитмелле. Телейлĕскерсем вĕсем. Манăн акă ниçта та çитмелле мар. Çапах та урам тăрăх утма пуçларăм. Виç-тăвата утăм тунăччĕ çеç, хăлхана кĕтмен çĕртен «Таник, тăхта-ха» тенĕ сасă кĕрсе кайрĕ. Эпĕ çаврăнса пăхрăм, паллакан çынна никама та курмарăм. Лере пĕр ача тăрать. Çавна чĕнчĕç пуль ĕнтĕ. Кулăшла, тĕнчере ман ятлă çын та пур иккен. Пултăрах. Вăл телейлĕ пулĕ, унăн амăшĕ те пурăнать пулĕ. Эпĕ каллех утма пуçларăм. «Шăпчăк, тăхта теççĕ сана!» — каллех илтрĕм эпĕ паçăрхи сассах. Çан-çурăм сăрăлтатса илчĕ, темле вăй мана хыçалалла палт çавăрчĕ. Хам сисмесĕрех мĕн пур вăйпа кăшкăрса ятăм:

— Мария Андреевна!

Мария Андреевна, чупса пырса, мана ыталаса илчĕ. Анне пекех, пуçран чăп-чăп чуптуса илет, çурăмран лăпкать. Ах, алли... Мĕн тери çемçе вăл! Çупăрланă, пуçран шăлнă май çаплах калаçать учительница: «Эсĕ пуйăспа ларса кайнă пуль тесе çав тери пăшăрхантăм. Сана мĕн тери пысăк хуйăх тӳсме тивнĕ...»

Чунтан юратнă çын сăмахĕ мана ытла та хурлантарчĕ. Эпĕ чăтаймарăм, йĕрсе ятăм...

Мария Андреевна сăмахĕнчен çакна ăнланса юлтăм. Ман çырăва илсен, вăл васкасах яла пынă. Анчах мана темĕн чухлĕ шырасан та тупайман. Юрать-ха, пире паян, Анна манашкăпа ялтан илĕм-тилĕмпех тухса кайнă пулин те, кӳршĕсем курса юлнă. Мария Андреевнăна ман çинчен вара вĕсем пĕлтернĕ. «Тавтапуçах вĕсене»,— тет Мария Андреевна. Унтан кĕсйинчен шурă тутăр кăларчĕ те, ман пите шăлса:

— Халĕ станцăна кайăпăр, унта пире Володя кĕтет,— терĕ.

— Володя? Вăл та килнĕ-и?

— Килнĕ, килнĕ, пепкеçĕм,— лăплантарать мана Мария Андреевна.— Ăна киле юлма нимле вăй та тытса чарайман пулĕччĕ.

— Володя манран сивĕнмен-и?

— Мĕншĕн сивĕнмелле? Малашне ĕнтĕ ĕмĕрне те пĕр-пĕринчен уйрăлмăр.

Ӳт-пӗве самант вӑй кӗчӗ. Еплерех утатӑп, Мария Андреевнӑран пӗр пусӑм та юлмастӑп! Ура та нӑйкӑшса хӑй ыратнине систермест. Патака таҫта ҫитиех ывӑтса ярас килет...

Вокзал патне ҫывхарса ҫитнӗ чух, ҫӗр айӗнчен шӑтнӑнах, ман ума Володя пырса тухрӗ.

— Ҫул ҫӳревҫӗсене салам! — тет вӑл хавас сасӑпа. Ман алла хӑй хытӑ, хытӑ тытса чӑмӑртать.

Володя пире васкама хушать, часах Шупашкара автобус тапранса каймалла имӗш.

— Таник, япалусем ӑҫта сан? — ыйтать Мария Андреевна.

— Ҫынсем пуйӑс кӗтсе ларакан пӳлӗмре, сак айне хунӑччӗ.

Володьӑпа амӑшне эпӗ хам япаласем выртакан ҫӗре ертсе кӗтӗм. Унта Анна манашкӑ ӑшаланса тӑрать. Мана курсан, вӑл урса кайнӑнах ятлаҫма тытӑнчӗ:

— Сӗтӗрӗнчӗк уксах, ӑҫта ҫухалса ҫӳретӗн? Япаласене вӑрлаттарса янӑ пулсан, мӑйна пӑраттӑм! Тыт! — кӑшкӑрать мана билет парса. Хӑйӗн катӑк шӑллӗ ҫӑварӗнчен сурчӑк сирпӗнет кӑна.

— Чим, лӑпкӑрах пулма тӑрӑшӑр. Вӑл — ҫын, анчӑк ҫури мар, мӗншӗн кӑшкӑратӑр,— сӑмах хушрӗ Мария Андреевна.

Анна манашкӑ ун ҫине кӑн-н пӑхса тӑчӗ те:

— Ха-ха-ха! Сирӗнтен ыйтса тӑраҫҫӗ пулӗ шӑркалчӑпа мӗнле калаҫмаллине,— терӗ. Унтан япала миххине йӑвантарса, каллех мана кӑшкӑрма тытӑнчӗ:

— Мӗн мӗшӗлтетсе тӑран, тыт миххӳне! Пуйӑсран юлатпӑр.

— Таник сирӗнпе ниҫта та каймасть! — татӑклӑн કаларӗ Мария Андреевна.— Пӑх-ха эсӗ ӑна, тӑлӑх ача тесе, чиркӗве сутасшӑн. Ирӗк памастпӑр!

— Ку ачапа сирӗн ӗҫ ҫук. Эпӗ ӑна усрама илнӗ. Хам мӗн тума шутланӑ, ҫавна тӑватӑп. Пирӗн каймалла,— хӑйӗннех перет манашкӑ.

Тавлашу хӗрсе кайрӗ. Анна манашкӑ мана, алӑран ярса илсе, хӑй ҫумне карт! туртрӗ. Эпӗ вӗҫерӗнсе ҫӑлӑнтӑм та Володя ҫумне пырса тӑтӑм. Пирӗн тавра ҫынсем пухӑнчӗҫ. Эпир мӗншӗн тӗркӗшнине пӗр-пӗринчен ыйтса пӗлеҫҫӗ. Уксах ачашӑн хура тум тӑхӑннӑ ватӑ манашкӑпа типтерлӗ хӗрарӑм тавлашни, паллах, вӗсене

тӗлӗнтерет. Анчах туятӑп, халӑх мана хура тумлӑ хӗрарӑм аллине парасшӑн мар. Ҫак вӑхӑтра таҫтан хӑюлӑх ҫитертӗм, япаласен миххине Володьӑна тыттартӑм та учительницӑ ҫумне тӗршӗнтӗм:

— Мария Андреевна, эпӗ сирӗнпе пыратӑп!— терӗм.

— Турӑ, пулӑшӑр! Ҫаратаҫҫӗ! Хурах!—хӑлаҫланса илчӗ хура тумлӑ манашкӑ.

Эпир урама тухрӑмӑр.

— Сӗрме купӑс пур-и кунта? — ыйтрӗ Володя миххе кӑтартса.

— Пур.

Пирӗн сӑмаха Мария Андреевна та хутшӑнчӗ:

— Сана, Таник, малашне сӗрме купӑс нихҫанхинчен те ытларах кирлӗ пулӗ.

— Мӗншӗн?

— Сана интернат-шкула, музыкӑна вӗрентекен класа яратпӑр,— пӗлтерчӗ вӑл.

— Мана интернат-шкула вӗренме илеҫҫӗ-и?

— Илеҫҫех. Ыранах вӗренме тытӑнӑн.

— Шӑпчӑк! Иксӗмӗр пӗр шкулта, ӑнлан! — ҫӗкленсе калаҫать Володя.— Эх, хаваслӑ пулать те пире.

Володя каланине чунтан ӗненетӗп, мӗншӗн тесен ҫумра — ҫывӑх тус тата юратнӑ учительницӑ. Эпӗ тӗнчене ҫӗнӗрен ҫуралатӑп. Урра!

## До ре ми фа соль ля си

Интернат-шкул. Пӗлетӗр-и вӑл мӗнле шкулне? Питӗ лайӑх шкул. Эпир кунтах пурӑнатпӑр, вӗренетпӗр, апатланатпӑр. Выртса-тӑракан пӳлӗмсене курасчӗ сирӗн! Тап-таса! Кашнин хӑйӗн уйрӑм кравать. Урайне ачасем ҫӑваҫҫӗ. Эпир пӳлӗмре ултӑ арҫын ача пурӑнатпӑр. Урай ҫума черет ҫиттӗр ҫеҫ, Володя чупса пырать, мана пулӑшать.

Столовӑйӗнче апат ҫиме ларсан, тупата чӗлхӳне ҫӑтса ярӑн. Миҫе тӗрлӗ апат лартса памаҫҫӗ-ши! Кухньӑра эпир поварсене черетпе пулӑшатпӑр. Ҫӗр улми шуратасси йывӑр-и вӑл?

Пире хитре тӑхӑнтартаҫҫӗ. Костюм та, пальто та мана ҫав тери килӗшет.

Шкул ҫуртне курасчӗ! У-у, ӑҫта пур-ши ун пекки! Виҫӗ хутлӑ, ҫав тери хитре чул ҫурт. Классем тата!

Унта урамри пек ҫап-ҫутӑ. Чӳречисем пысӑк—чӑн-чӑн алӑк. Эпӗ вӗренекен тӑваттӑмӗш клас иккӗмӗш хутра, коридор вӗҫӗнчи кӗтесре. Малтанах хамӑр класа тупма та пӗлместӗм.

Пире Володя амӑшӗ Мария Андреевна вӗрентет. Музыкӑ учителӗ урӑххи. Вӑл Петр Филиппович ятлӑ. Иккӗшӗ те лайӑх ҫынсем, ӑшшӑн калаҫаҫҫӗ, ачасене кӑшкӑрса хӑратмаҫҫӗ. Эпӗ историе, географие юрататӑп. Задачӑсене те пурне те шутлама вӗренес килет. Вырӑсла, чӑвашла ӑста калаҫма, ҫырма вӗренӗттӗм. Халӗ те тӑрӑшатӑп. Анчах пуринчен те ытла мана музыкӑ илӗртет. Интернат-шкултa вӗрениччен эпӗ ытла та айван ача пулнӑ, музыкӑ ҫинчен ним те пӗлмен. Маншӑн до ре ми фа соль ля си халӗ чи пахи. Мӗншӗн? Вӗсем — нотӑсем. Сасӑсем ҫапла пайланаҫҫӗ. Кашни нотӑн графасем хушшинче хӑйӗн уйрӑм вырӑнӗ пур. Ҫав нотӑсем мӗнле янранине пианинӑпа тата сӗрме купӑспа калама часах ӑнкартӑм.

## Ялтан килнӗ хыпар

Интернат-шкула вӗренме килсенех, ман сывлӑха шурӑ халатлӑ хӗрарӑм-тухтӑр тӗрӗслерӗ.

— Урана юсамалла вӗт, э,—терӗ вӑл манран ыйтнӑ евӗр. Ӑна хирӗҫ мӗн калас-ха? Маншӑн Мария Андреевна калаҫма тытӑнчӗ. Эпӗ тумланса тухса кайрӑм, вӑл ҫаплах юмахласа ларса юлчӗ. Тепӗр кунне учительница мана хула пульницине илсе кайрӗ. Эпир «Ачапӑча тухтӑрӗ» тесе ҫырса ҫапнӑ пӳлӗме кӗтӗмӗр. Пире ӑшшӑн йышӑнчӗҫ.

— Ӑхӑ, каччӑ килчӗ пирӗн пата. Хӑюллӑрах пул, маларах ирт,— йыхӑрать халат тӑхӑннӑ ҫӳллӗ арҫын. Эпӗ тӳрех тавҫӑрса илтӗм: ача-пӑча тухтӑрӗ текенни—ҫакӑ. Вӑл, Мария Андреевна панӑ хута вуласан, куҫлӑхне ҫамки ҫинерех хӑпартрӗ те мана салтӑнма хушрӗ.

— Ним те тӑваймӑн, ҫамрӑк ҫыннӑм, кашни кун юсанма ҫӳреме лекет. Ҫулла операци тӑвӑпӑр,— пӗлтерчӗ тухтӑр, урана тӗплӗн пӑхсан.

Операци тӑвӑпӑр тесен, эпӗ питӗ хӑрарӑм. Тухтӑрӗ ҫавна сисрӗ пулас. «Арҫын ачасене эпӗ юрататӑп, вӗсен тӳсӗм пысӑк, нихҫан та нӑйкӑшмаҫҫӗ»,— тет. Шӑла

çыртрăм, тухтăр умĕнче арçын ачасен ятне ямалла мар ĕнтĕ. Тухтăр калаçни тĕрĕс пултăрччĕ. Эпĕ темле ыратнине те тӳсме хатĕр.

Çавăнтанпа вара эпĕ кашни кун пульницăна çӳретĕп. Анчах пĕччен мар — виççĕн е иккĕн. Хăш чух Мария Андреевнăпа, тепĕр чух — Володьăпа, унтан — виççĕмĕр те пĕрле.

Пĕррехинче çапла эпир Мария Андреевнăпа иксĕмĕр пульницăран таврăнатпăр. Пăхатпăр, пурăнмалли çуртран пире хирĕç Володя чупса тухрĕ. Хăй аллипе суллать кăна:

— Çыру! Сана, Шăпчăк! — тет.

Конверта тирпейлĕн уçрăм та тăваткал хуçлатнă хутне кăлартăм. Кам çырнă пулĕ тетĕр? Уляка! Ман пата çыру çырма ăçтан асне илнĕ-ши? Ай, маттур хĕрача! Мария Андреевна та ăна мухтаса илчĕ. Çырăвĕ кĕске, часах вуласа тухрăм. Уляка эпĕ интернат-шкулта вĕреннине илтсен, питĕ савăннă.

Екатерина Ивановнăна вара темшĕн учительницăран кăларнă.

> «*Пирĕн халĕ учительницă çĕнни,*— тесе çырать малалла Уляка.— *Вăл пире Мария Андреевна пекех туйăнать. Шутсăр ырă кăмăллă. Ячĕ те унăн Мария, ашшĕ ячĕ çеç урăхла — Константиновна. Сан пата çыру çырма вăл ăс пачĕ*».

Çыруранах Анна манашкăпа килте чиркӳ уçнă Микун Петĕрĕн Тихăнĕ ялта çуккине пĕлтĕмĕр. Акă мĕн чухлĕ хыпар.

Мария Андреевна пире Улякана паянах çыру çырса яма сĕнчĕ. «Манран салам çырма ан манăр»,— тет вăл пирĕнтен уйрăлса кайнă чух. Улякана çыру çырас шухăшпа эпир те Володьăпа пĕрле класалла утрăмăр.

## Суда чĕнеççĕ

Пирĕн класа çамрăк хĕр кĕчĕ. Ун чух тин çех шăнкăрав пулнăччĕ те, эпир пысăк переменăна тухма хатĕрленсе тăраттăмăр. Ку хĕре эпĕ курнă. Вăл шкул директорĕн алăкĕ умĕнчи сĕтел хушшинче ларать. Директор секретарĕ теççĕ ăна.

Класа ют ҫын пыни пирӗншӗн халӗ питӗ выранлӑ. Тем кӗтнӗн эпир пурте шӑпах чарӑнса тӑтӑмӑр. Тула вылязма тухас килмест. Ҫанталӑк ытлашши сивӗ. Ҫӗр ҫумӗнче хаяррӑн шӑлса вӗрекен ҫил шӗвӗркке кӗрт тӑррисенчен юр пӗрчи тусанне мӑкӑрлантарать.

— Мария Андреевна,— терӗ секретарь сӗтел хушшинче ёҫне пӗтерме ӗлкӗреймен учительницӑна,— сире повесткӑ пур, суда чӗнеҫҫӗ.

— Суда? — тӗлӗнсе пӑхрӗ учительницӑ хӗр тыттарнӑ кӑвак хут листи ҫине. Унтан, тем ӑнланнӑн куҫне кӑшт хӗссе, пуҫне сӗлтрӗ.— Тахҫанах ҫапла кирлӗ.

— Пӗччен мар, хӑвӑр класра вӗренекен Данил Маркова та чӗнеҫҫӗ.

— Ку вара ахалех,— терӗ учительницӑ шелленӗн.— Анчах чӗнеҫҫӗ пулсан, мӗнех вара, кайӑпӑр. Халӑх судне те пулӑшмалла.

Хӗр тухса кайрӗ. Хам ята асӑннӑшӑн эпӗ сехӗрленсех ӳкрӗм, чӗтреме пуҫларӑм. Хыпар ыттисен сӑнне те улӑштарчӗ. Пӗр-пӗрин ҫине ыйтуллӑн пӑхса илчӗҫ. Паллах, суд ҫынна ытахальтен чӗнмест.

— Таник, эсӗ ан хӑра. Эсир те, ачасем, пирӗн ҫинчен усал ан шухӑшлӑр,— ӑнлантарма тытӑнчӗ Мария Андреевна.— Суда айӑпшӑн ҫеҫ чӗнмеҫҫӗ. Усал ҫынсен тискер ёҫне тӑрӑ шыв ҫине кӑларма судьясене пулӑшакансене те суда чӗнеҫҫӗ. Эпир шӑпах ҫавӑн йышшисем. Пире — свидетельсем, теҫҫӗ.

Ачасем шавласа кайрӗҫ. Вӗсен пурне те пӗлес килет, переменӑ ҫинчен те манса кайрӗҫ, каласа пама ыйтаҫҫӗ. Мария Андреевна вара ачасен кӑмӑлне хуҫмарӗ. Вӑл ман ҫине, унтан ачасем ҫине ӑшшӑн пӑхса, темшӗн ассӑн сывларӗ те сӑмахне пуҫларӗ.

— Ачасем, халӗ эсир интернат-шкулта пурте аван пурӑнатӑр,— терӗ вӑл.— Сирӗн нимле хуйхӑ-суйхӑ та ҫук. Сирӗнпе вӗренме пуҫличчен акӑ Таникӗн пайтах хурлӑх тӳсме тивнӗ. Ялти манашкӑпа сектантсем вӑл тӑлӑх ача пулнине кура ӑна кӑшт ҫеҫ хӑйсен чури туса хуман. Вӗсем ӑна этем пурнӑҫӗнчен уйӑрма пикеннӗ. Ҫав ҫынсем халӑх хушшинче сахал мар ирсӗр ӗҫсем тунӑ...

Учительницӑ калаҫӑвӗ мана хам ӑсӑмпа яла илсе кайрӗ. Пуҫа татти-сыпписӗр пулса иртнисем пыра-пыра кӗреҫҫӗ. Акӑ кукамай, анне, Анна манашкӑ... Турӑш кӗтесӗнче кӗл туни... Шкул... пирвайхи кӗнеке. Пӗч-

чен тăрса юлни... Эпĕ тăлăх ача... Тихăн сарайĕнче уçнă «чиркӳ». Эпĕ унта сĕрме купăс калатăп. Каллех шкул. Мăйран пионер галстукне салтса илни...

Шухăшăмпа хам пурнăçăн çак кунне çитсен, такам мана çурăм тăрăх хулăпа янăнах туйăнчĕ. «Таник! Таник!» — тенине илтетĕп. Юнашар ларакан Петĕр ятлă ача айăкран чавсипе кăлт-кăлт тĕкет-мĕн.

— Сив чирпе чирлемен-и эсĕ? — тет вăл, ыттисем илтесрен пăшăлтатса.

— Çук-çке. Мĕншĕн апла ыйтатăн?

— Чĕтре-чĕтре илетĕн те...

Куçа чăр-чар выляткаласа, учительницă çине пăхрăм. Вăл çаплах калаçать. Шухăша путса ларнипе ун сăмахĕсене илтеймен те эпĕ.

— Пĕр-пĕрне, ачасем, витĕр пĕлсе тăмалла. Пурнăçра тем курмалли те килсе тухать. Йывăр вăхăтра хăвăн кӳршӳне алă тăсма пĕл. Юлташ пулăшăвĕ темрен те паха. Çакна нихçан та ан манăр. Ыттисене судран килсен каласа парăп. Ял çыннисене улталаса турă ячĕпе киревсĕр ĕç тăвакан сектантсене халăх сучĕ ахалех каçармĕ.

Мария Андреевна сăмахне вĕçлерĕ. Эпир шăппăн урама тухрăмăр.

Переменă вăхăтĕнче эпĕ ачасенчен тĕлĕнтĕм. Вĕсем манпа нихçанхинчен те кăмăллă. Пĕри те тепри хăйĕнпе выляма чĕнет.

## Ылханлă чунсем

Суда пырса кĕрсен, эпĕ тӳрех ним те ăнланаймарăм-ха. Çын нумайййипе куç алчăраса кайрĕ. Пӳлĕм халăхпа лăках тулнă. Хăшĕ судйи — уйăрса та илме пĕлеймерĕм. Кăшт сывлăш çавăрсан, курах кайрăм: лутра сценă çинче, сĕтел хушшинче, виçĕ çын ларать.

— Варринчи — судйи,— тет Мария Андреевна.

Судйи çамрăках та мар, ватах та мар. Çăра уссиллĕскер. Икĕ енче — пĕрер хĕрарăм. Вĕсем — халăх заседателĕсем.

Вăхăт нумаях та иртмерĕ, судья мана чĕнсе кăларчĕ. Эпĕ сĕтел умне тухрăм. Хам вăтанатăп та, хăратăп та.

— Эсĕ, ывăлăм, пĕрре те ан хăра. Сана кунта никам та тивмест. Ыйтнине çеç тĕп-тĕрĕс каласа пар,—

тет судья, йăпатса. Унăн йăваш сасси мана лăплантарсах ячĕ. Чăнах, мĕншĕн хăрас? Мария Андреевна та кунтах вĕт.

— Пăх-ха, çак ıкĕ çынна паллатăн-и эсĕ? — ыйтать судья манран, малти ретри сак çинче ларакансем çине кăтартса. Лешсем ура çине тăчĕç. Паçăр ку çынсене эпĕ асăрхаман та. Халь пăхрăм та тĕлĕнтĕм: Анна манашкăпа Микун Петĕрĕн Тихăнĕ. Хăйсем темле илемсĕрленнĕ.

— Ку çынсене лайăх паллатăп,— терĕм эпĕ.

Судья вĕсене мĕнле пĕлни çинчен каласа пама ыйтрĕ. Шухăшлатăп, анчах ман сăмах тупăнмасть. Çаванпа та пĕр хушă ăнтан кайса тăтăм. Кайран вара чĕлхе кăшт уçăлчĕ. Майĕпен хăнăхрăм, судья пулăшмасăрах хам пурнăçа аса иле-иле пытăм. Чылайччен калаçрăм эпĕ. Пурнăç манăн çак Анна манашкăпа нумай çыхăннă-мĕн. Эпĕ калаçнă чух çынсем пурте шăпах ларчĕç. Хыçалти ретре тахăшĕ (хурланчĕ-ши?) нăшкăлтатса илчĕ.

Интернат-шкула мĕнле вĕренме килнине те судья хушнипе каласа патăм.

— Ан ĕненĕр пĕчĕкскерне, судьясем,— кăшкăрса ячĕ Анна манашкă, ман сăмаха пӳлсех.—Канашра вăл манран тарман. Ăна ак çакă учительницă интернат-шкула ирĕксĕрлесе илсе килнĕ. Халĕ тĕрĕссипе калама хăрать. Эй, турăçăм, Танике эпĕ питĕ юрататăп, паян тесен паян киле илсе кайма хатĕр. Вăл ачана мана суд урлă каялла таварса пама ыйтатăп. Судьясем, сăваплă пулăр, вăл ман усрав ача.

— Апла пулсан, мĕншĕн-ха эсĕ ăна чиркӳ ачи пулма ăсатасшăн пултăн? Кала-ха, айăпланакан Анна Захарова, миçе тенкĕлле сутнă эсĕ çак ачана?

Манашкă чĕнмерĕ. Вара судья тепринчен ыйтрĕ:

— Тихон Микунов айăпланакан, кала-ха, Анна Захаровăна эсир çак тăлăх ачана чиркĕве сутма килĕшнĕшĕн миçе тенкĕ укçа пама пулнă? Тĕрĕсне кала, асăрхаттаратăп.

Лешĕ калать.

Унăн сăмахĕ пĕтĕм залри халăха пăлхантарса ячĕ. Пĕрисем сурса ятлаçса илчĕç. Эпĕ тĕлĕннипе шалт хытса тăтăм. Мана — çынна — выльăха сутнă пек сутнă. Намăссăрсем! Миçе тенкĕлле? Хумханнине пула ла-

йăхах илтсе юлаймарăм. Анчах та сахал мар, питĕ нумай.

— Анна Захарова айăпланакан, эсĕ çав укçана илнĕ ĕнтĕ. Укçи сахал мар. Мĕн тума шутларăн унпа? — тĕпчет татах судья.

— Мана çуррине çеç панă,— тет пĕр вăтанмасăр Анна манашкă.— Çуррине ачине чиркĕве илсе çитерсен, вырăнта тыттарма калаçса татăлнăччĕ.

Тинкеререх пăхрăм та, Анна манашкă сасартăк йăшăлтатнăн, унăн хура тумĕнчен хура çĕлен шуса тухнăн туйăнчĕ. Сӳ турĕ чун. Сисетĕп, юн вĕресе, вĕресе хăпарать. Пăчă... Çук, эпĕ ӳкместĕп. Ун вырăнне алă чăмăрĕ чăмăртанчĕ, пӳрнесем шăтăртатса илчĕç. Эпĕ вĕсене иккĕшне те туласа пăрахма хатĕр. Ылханлă чунсем!

— Мария Андреевна,— илтетĕп шăп çак вăхăтра судья сассине,— ачана киле ăсатăр ĕнтĕ.

Учительница мана залран илсе тухса кайрĕ. Коридорта Володьăпа тĕл пултăмăр.

— Володя, Таник, халех киле вĕçтерĕр,— тет Мария Андреевна, кĕсйинчен вак укçа кăларса,— автобуспа кайăр. Сĕтелте унта типĕтнĕ панулми кукли пур. Чейпе кукăль çиййĕр. Эпĕ таврăниччен ниçта та ан кайăр.

Володьăпа эпир тротуар çине çӳллĕ картлашкапа антăмăр. Пирĕн çине эрешлĕ юр пĕрчисем вĕлтĕртетсе ӳкеççĕ, вĕсем хура пальто çинче илемлĕн курăнаççĕ. Пуçăм янăрать — сĕрĕм тивнĕ евĕрех.

— Шăпчăк,— чĕнет мана Володя,— киле Атăл хĕррипе кайăпăр. Унта паян йĕлтĕрçĕсем ăмăртаççĕ.

Эпĕ юлташпа килĕшесшĕнччĕ. Анчах сасартăк ман пуçа каллех хăратакан шухăш килсе кĕчĕ. Суд мана Анна манашкăна каялла тавăрса памалла тумĕ-ши? Çамка çине самант сивĕ тар тапса тухрĕ.

Хама мĕн пăлхантарнине Володьăна каласа парсан, вăл нимĕн чухлĕ те пăшăрханмарĕ. «Ан хăра, ухмахла шухăш вăл санăн»,— терĕ. Çапах та эпĕ лăпланаймарăм, Володьăсен килне çитсен те, питĕ хумхантăм. Мария Андреевна судран мĕнле хыпарпа килĕ-ши? Унта ман пурнăçа татса памалла-çке. Эпĕ интернат-шкула юлăп-ши е мана Анна манашкăна, усрав ачи тесе, каялла парса ярĕç-ши?

Володя мана çаплах лăплантарасшăн. Сана ниепле те кунтан илсе каяймаççĕ вĕсем, тет.

Çапла калаçса ларса, хваттере Мария Андреевнăпа унăн упăшки Василий Кириллович кĕрсе тăнине те сисмен.

— Йĕкĕтсем, мĕн пит кичем ларатăр?— тет Володя ашшĕ.

— Анне, суд пĕтрĕ-и?— ыйтать Володя хыпаланса.

— Пĕтрĕ.

Эпĕ ни вилĕ, ни чĕрĕ ларатăп.

— Шăпчăка Анна манашкăна каялла памалла тумарĕç-и?— ыйтать каллех Володя.

— Мĕн? Мĕнле йĕркепе Танике каялла илме пултартăр çав киревсĕр хĕрарăм?! Ача пама мар ăна, Тихăнпа иккĕшне Совет влаçне хирĕçле ĕçсем тунăшăн хупса лартмалла турĕç.

Тинех кăкăрăм анлăн сывласа ячĕ. Володя урра кăшкăрать. Василий Кириллович мана саламлать.

— Ну, туссем, пире хоккей вăййи курма юлташсем чĕнеççĕ,— пĕлтерет ашшĕ, васкама хушса.

Хăпăл-хапăл апат çисе тумлантăмăр. Мария Андреевна пире Володьăпа иксĕмĕре те хăй çĕленĕ пĕр пек шурă кĕпепе хăмăр тĕслĕ вилвет костюм тăхăнтартрĕ. Тум пире питĕ килĕшет. Эпир пĕр тăвансем пекех. Пионер галстукĕ çыхрăмăр. Пирĕн тĕкĕр умĕнчен хăпас килмест.

— Çитĕ сире хăвăр тăрăх пăхса тăма. Кая юлатпăр акă,— асăрхаттарать Василий Кириллович. Вара эпир тăватсăмăр та, хаваслăскерсем, килтен тухса кайрăмăр. Çак кунхи пек телее эпĕ нихăçан та курманччĕ. Халь ĕнтĕ эпĕ чăннипех те телейлĕ!

---

Цена 12 коп.